МИНИСТЕРСТВО НАУКИ И ВЫСШЕГО ОБРАЗОВАНИЯ
РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ
Федеральное государственное бюджетное образовательное
учреждение высшего образования
«Чувашский государственный университет имени И.Н. Ульянова»

**А.М. Иванова     О.Г. Владимирова**

# ХУРАВĔ МĔНЛЕ-ШИ?

# КТО ЗНАЕТ ОТВЕТ?

**Материалы межрегиональной олимпиады школьников
по чувашскому языку и литературе**

Учебное пособие

В 3 книгах

Книга 2

Чебоксары
2024

УДК 373.091.27:[811.512.111+821.512.111](075.8)
ББК Ч420.275я7+Ш12=635.1я7+Ш43(2)(=635.1)я7
И73

*Рецензенты:*
д-р филол. наук, профессор *Г.Н. Семенова;*
канд. филол. наук, доцент *А.С. Егорова*

**Иванова А.М.**
**И73** Хуравĕ мĕнле-ши? Кто знает ответ? Материалы межрегиональной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе: учеб. пособие: в 3 кн. Кн. 2 / А.М. Иванова, О.Г. Владимирова; Чуваш. гос. ун-т им. И.Н. Ульянова. Чебоксары, 2024. 148 с.

ISBN 978-5-7677-3772-7 (кн. 2)
ISBN 978-5-7677-3771-0

Содержит задания и ответы межрегиональной олимпиады школьников 9–11 классов по чувашскому языку и литературе 2019–2024 гг. Олимпиадные материалы представлены по направлениям: 1) чувашский язык и литература для школ с чувашским языком обучения; 2) чувашский язык и литература для других школ (с русским, татарским, мордовским, марийским и др. языками обучения). Можно использовать для подготовки учащихся к олимпиадам и в качестве банка заданий на занятиях и во внеурочной деятельности.

Для учащихся школ, учителей-словесников, студентов, магистрантов, аспирантов и преподавателей филологических факультетов.

Ответственный редактор канд. филол. наук, доцент Н.И. Якимова

Утверждено Учебно-методическим советом университета

ISBN 978-5-7677-3772-7 (кн. 2)
ISBN 978-5-7677-3771-0

УДК 373.091.27:[811.512.111+821.512.111](075.8)
ББК Ч420.275я7+Ш12=635.1я7+Ш43(2)(=635.1)я7
© Чувашский госуниверситет им. И.Н. Ульянова, 2024
© Иванова А.М., Владимирова О.Г., 2024

# ПĔТĔМĔШЛЕ ĂНЛАНТАРНИ

Тăван чĕлхемĕр пуянлăхне, илемлĕ сăмахлăхăмăр асамлăхне туйма-сăнама пĕлни пур çыншăн та пĕлтерĕшлĕ, кăтартуллă. Юлашки çулсенче тăван чĕлхепе тата литературăпа тĕрлĕ шайри олимпиадăсем чылай иртеççĕ. Ку пулăм вара вĕренекенсене мăн асаттемĕрсен чĕлхине, несĕлсен ăс-халне, тăхăмсен пилне ăша хывса пурăнма, ăна аталантарма хистет.

Кĕнекене 2019–2024-мĕш çулсенче регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиадин ыйтăвĕсемпе ĕçĕсене, хуравĕсене кĕртнĕ. Вĕсене икĕ ушкăна пайланă: 1) чăваш шкулĕсем валли, 2) ытти чĕлхеллĕ (вырăс, тутар, мăкшă, мари) шкулсем валли.

Олимпиада – шкул ачисене вĕренӳ предмечĕпе кăсăклантармалли тата пултаруллă ачасене тупса палăртмалли майсенчен пĕри. Вĕренӳ пособийĕнчи ыйтусемпе ĕçсем «ăс-хакăл» ăмăртăвне хатĕрленме кăна мар, тăван чĕлхепе литература урокĕсене кăсăклă та тухăçлă ирттерме, вĕренекенсен чĕлхе туйăмне аталантарма, çыравçă ăсталăхне алла илме май пăраççĕ. Кĕнекери материал çĕнĕ темăпа кăсăкланма, ăна çăмăллăнрах ăша хывма пулăшать. Унпа шкул ачисене олимпиадăна хатĕрлес ĕçре, вĕренӳ процесĕнче, класс тулашĕнчи ĕçсенче усă курма меллĕ.

Ку кĕнеке вĕрентекенсемпе шкул ачисемшĕн нумай енчен усăллă пуласса шанас килет.

***Регионсем хушшинче иртекен***
***чăваш чĕлхипе литература олимпиади***
***2019-мĕш çул***

***9-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Чĕлхе терминĕсене вырăсла куçарса çырăр:

ăнлантару словарĕ, çармăс чĕлхи, вăйлă степень, виçе наречийĕ, хурăнташ чĕлхе, официаллă ĕç стилĕ, сăпатсăр форма, шут хисеп ячĕ, кĕçĕн член, евĕрлев сăмахĕ.

**Хурав.**

*ăнлантару словарĕ* – толковый словарь
*çармăс чĕлхи* – марийский язык
*вăйлă степень* – превосходная степень
*виçе наречийĕ* – наречие меры и степени
*хурăнташ чĕлхе* – родственный язык
*официаллă ĕç стилĕ* – официально-деловой стиль
*сăпатсăр форма* – безличная форма
*шут хисеп ячĕ* – количественное числительное
*кĕçĕн член* – второстепенный член
*евĕрлев сăмахĕ* – (звуко)подражательное слово.

**2. Ыйту (ĕç).**

*Шакăртаттараканнисемсĕр* сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать? Сăмахăн тымарне тата тĕпне тупăр.

**Хурав.**

*Шакăртаттараканнисемсĕр* – глагол, сăмах тымарĕ – *шак*, сăмах тĕпĕ – *шакăртаттар*.

**3. Ыйту (ĕç).**

Панă тĕслĕхри ят сăмах майлашăвĕсенчен чи ансăрри(се)не, унтан чи анлине тупса пуçламăш формăра

çырăр. Чи анлă ят сăмах майлашăвĕн тĕп компонентне палăртăр.

*Кӳршĕри икĕ хутлă çурт кантăкĕн форточкисенчен тулалла кăларса çакнă çыхăсене кăсăясем унтан та кунтан пыра-пыра сăхаççĕ.*

**Хурав.**

Чи ансăр ят сăмах майлашăвĕ – *икĕ хут(лă).*

Чи анлă ят сăмах майлашăвĕ – *кӳршĕри икĕ хутлă çурт кантăкĕн форточкисенчен тулалла кăларса çакнă çыхăсем.* Тĕп компоненчĕ – *çыхăсем*.

**4. Ыйту (ĕç).**

Хутлă предложени ятне, пайĕсене, çыхăну мелне çырăр.

*Тепĕр чух кун-çул урапи эпир палăртнă йĕрпе чупасшăн мар çав, таçталла пăрăнасшăн.*

**Хурав.**

Пăхăнуллă хутлă предложени. Тĕп пайĕ – *тепĕр чух кун-çул урапи йĕрпе чупасшăн мар çав, таçталла пăрăнасшăн*, пăхăнакан пайĕ – *эпир палăртнă*; çыхăну мелĕ – -нă аффикс.

**5. Ыйту (ĕç).**

Хăвăрт каларăш (скороговорка) шутласа тупăр, **ç** сасăран пуçланакан сăмахсем ытларах пулччăр.

**6. Ыйту.**

Мĕн вăл этюд?

**Хурав.**

Этюд – сăвăра çын портретне е пĕр-пĕр ĕçе çырса кăтартакан пысăках мар ӳкерчĕк.

**7. Ыйту (ĕç).**

Йĕркесене вуласа хайлаври герой ятне палăртăр:

*а) Эпĕ ытти кĕтӳçсем пек мар, выльăха нихçан та çапса амантман; мана пур çĕрте те çавăнпа юратаççĕ. Кĕтĕве кĕрĕшнĕ чухне халăх çинче малтанах каласа хурап: «Кĕтĕве ир хăвалăр, кĕтӳ янă чухне урамра ача-пăча выльăха хăратнă ан пултăр, выльăх киле ирĕккĕн таврăнтăр…*

*ă) Эпĕ репетици хыççăн урамалла кĕпĕртетсе тухнă «артистсенчен» пĕрне – хайхи Ванюк рольне выляканнине – чарса тăратрăм та унпа çакăн пек калаçу пуçласа ятăм:*

*– Артист, – терĕм эпĕ, – эсĕ мана пĕр ĕç тума пулăшмăн-и?..*

*б) – Сутăнчăк мар эпĕ, анне… Çакнашкал хаяр ята илтес пур – çавăн чухнех Сталинградра паттăррăн пуç хурас-мĕн! Изменник мар! Тăван çĕршыва, юлташсене сутман эпĕ! Пĕр утăм та приказсăр чакман! Эпĕ юлашки юн тумламĕ юлмиччен, юлашки сывлăшăм тухиччен çапăçма хатĕрччĕ…*

*в) – Çак пăра çума чарам-и? – терĕ вăл сасартăк, унтан чăрăш айĕнчен чупса тухрĕ те пăр пуçтарса кĕчĕ. – Эп çулла çуралнă. Ман анне калать: «Çулла çуралнă çын пăр çисен – чарăнать», – тет…*

*г) – Лармастăп эпĕ вăл машина çине. Лармастăп тенĕ – лармастăп! Манто та тăхăнмастăп. Фуфайкăпах лайăх: ăшă, канлĕ. Эпĕ тинех пĕчĕк ача мар. Вун улттă тултаратăп. Эсĕ, атте, калама пĕр тĕрлĕ калан, пурăнма тепĕр тĕрлĕ пурăнан…*

**Хурав.**

а) Шерхулла; ă) Гриша; б) Валентин Актаев; в) Тамара Голубева; г) Анна.

**8. Ыйту.**

П. Хусанкайăн «Аптраман тавраш» сăвăлла романĕнче Натали мĕн тĕслĕ çипсемпе кĕпе тĕрлет? Çав тĕссен пĕлтерĕшне автор епле палăртнă?

**Хурав.**

Хӗрлӗ, симӗс, сарӑ, сенкер, хура тӗссемпе.

Хӗрлӗ тӗс – яш чӗре, вӗри чун; симӗс тӗс – вӑрман, ҫерем; сарӑ тӗс – хӗвел; сенкер тӗс – пӗлӗт, хура тӗс – ҫӗр.

**9. Ыйту.**

Ҫак йӗркесен авторӗ кам?

«Театр вӑл – искусство университечӗ, туйӑм академийӗ – анлӑрах каласан. Унта кӗрсе ларнӑ этемӗн хӑйне валли халиччен пӗлмен ӑслӑлӑха, халиччен сиссе курман туйӑмсене ӑша илес пулать. Искусство чи малтанах ҫынна туйӑмсем витӗр Ҫын тӑвать…»

**Хурав.**

Николай Терентьев.

**10. Ыйту (ӗҫ).**

Сӑвӑ ҫаврисене чӑвашла куҫарӑр:

*Отговорила роща золотая*
*Березовым, веселым языком,*
*И журавли, печально пролетая,*
*Уж не жалеют больше ни о ком.*

*Кого жалеть? Ведь каждый в мире странник*
*Пройдет, зайдет и вновь оставит дом.*
*О всех ушедших грезит конопляник*
*С широким месяцем над голубым прудом…*

**Хурав.**

Вӗҫлерӗ савӑк сӑмахне сар хурӑн
Ытла ытарлӑ ылтӑн катара.
Вӗҫсе иртӳҫӗн тӑрнасем салхуллӑн,
Пӗр шелсӗр ӑсанаҫҫӗ кӑнтӑра.

Кама шеллес? Кашнийӗн ҫулӗ ҫуйлӑ –
Каять, килет, каллех утать ҫулпа.
Килтен каяншӑн уйлӗ кантӑр уйӗ
Кӑвак пӗве ҫинчи ҫут уйӑхпа.

***Регионсем хушшинче иртекен***
***чăваш чĕлхипе литература олимпиади***
***2019-мĕш çул***

***10-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Чĕлхе терминĕсене вырăсла куçарса çырăр:

анатри диалект, вак хисеп ячĕ, ирçе чĕлхи, сăпат местоименийĕ, тăтăшлăх словарĕ, хутлă сăмах, чарăну палли, мăкшă чĕлхи, ят сăмах майлашăвĕ, сăмах çаврăнăшĕ.

**Хурав.**

*анатри диалект* – низовой диалект
*вак хисеп ячĕ* – дробное числительное
*ирçе чĕлхи* – эрзя-мордовский язык
*сăпат местоименийĕ* – личное местоимение
*тăтăшлăх словарĕ* – частотный словарь
*хутлă сăмах* – сложное слово
*чарăну палли* – знак препинания
*мăкшă чĕлхи* – мокша-мордовский язык
*ят сăмах майлашăвĕ* – именное словосочетание
*сăмах çаврăнăшĕ* – фразеологизм.

**2. Ыйту (ĕç).**

*Хăлаçланаканнисемпе* сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать? Сăмахăн тымарне тата тĕпне тупăр.

**Хурав.**

*Хăлаçланаканнисемпе* – глагол, сăмах тымарĕ – *хăл (хул),* сăмах тĕпĕ – *хăлаçлан*.

**3. Ыйту (ĕç).**

Панă тĕслĕхри ят сăмах майлашăвĕсенчен чи ансăрри(се)не, унтан чи анлине тупса пуçламăш формăра

çырăр. Чи анлă ят сăмах майлашăвĕн тĕп компонентне палăртăр.

*Таçта аякра вырнаçнă шыв станцийĕнче ларакан пĕчĕкçеççĕ кимĕсем крыльца умне хывса хăварнă кĕске кунчаллă калушсене аса илтереççĕ.*

**Хурав.**

Чи ансăр ят сăмах майлашăвĕсем: *шыв станцийĕ, пĕчĕкçеççĕ кимĕсем, крыльца умĕ, кĕске кунча(ллă).*

Чи анлă ят сăмах майлашăвĕ – *таçта аякра вырнаçнă шыв станцийĕнче ларакан пĕчĕкçеççĕ кимĕсем*. Тĕп компоненчĕ – *пĕчĕкçеççĕ кимĕсем*.

**4. Ыйту (ĕç).**

Хутлă предложени ятне, пайĕсене, çыхăну мелне çырăр.

*Пуç çаврăнмалла тутлă шăрша сывласа, çанталăк илемĕпе киленсе Натоль каçă çине кĕчĕ.*

**Хурав.**

Пăхăнуллă хутлă предложени. Тĕп пайĕ – *тутлă шăрша сывласа, çанталăк илемĕпе киленсе Натоль каçă çине кĕчĕ*, пăхăнакан пайĕ – *пуç çаврăнмалла*; çыхăну мелĕ – *-малла аффикс*.

**5. Ыйту (ĕç).**

Хăвăрт каларăш (скороговорка) шутласа тупăр, **ç** сасăран пуçланакан сăмахсем ытларах пулччăр.

**6. Ыйту.**

Мĕн вăл дольник?

**Хурав.**

Дольник – силлабо-тоникăпа таса тоника хутлăхĕнчи форма; кĕвĕ кунта йĕркесенчи пусăмсен шучĕ пĕрешкел пулнипе йĕркеленет; пусăмсем хушшинче ялан тенĕ пекех пĕр е икĕ пусăмсăр сыпăк пулать.

**7. Ыйту (ĕç).**

Çыравçă хăйĕн кун-çулĕ, шăпи пирки каланă-çырнă йĕркесене вулăр, авторне паллăр:

*а) Пурнăçран çакна та астăватăп. Мана ярмăрккана илсе каясшăн. Анчах çăпата кивĕ, çĕтĕлнĕскер манăн. Эпĕ ăнланнă тăрăх, ярмăрккана çĕнĕ çăпата сырса каймасан намăс, йĕркеллĕ мар. Макăрса ятăм, кайма килĕшмерĕм. Сăлтавне ăнланса илчĕç те мана çĕнĕ çăпата пачĕç, тинех ярмăрккана кайма хатĕрлентĕм. Ярмăркки Кăнна Кушкинчен инçех мар ларакан Сумароково салинче пухăннă…*

*ă) Ватăлатпăр имĕш. Сухала*
*Тантăшсем кун сиктерсех*
*хыраççĕ.*
*Манăн авă (чăмăртăр алла!)*
*Арăм çăмăлланчĕ –*
*çын çуралчĕ.*
*Çын çуралчĕ –*
*ман пĕрремĕш ывăл!*
*Шелепи çуралнă кун тата…*

*б) Пĕрре Константин Иванова эпĕ çӳлти хута хăпармалли пусма çинче тĕл пултăм. «Иванов, – чарса тăратрăм эпĕ ăна, – пар-ха мана хăвăн тăван вилни çинчен çырнă сăвва, вуласа пăхам». Иванов пит çăмартисене пăт путарса çавралатрĕ те лăш кулса пуçне сулларĕ: «Çук, памастăп…» Тек чарăнса тăмарĕ вара… Çакăн хыççăн эпĕ Иванов партине ухтарма шут тытрăм. «Ирĕклĕн памасан, ирĕксĕр илĕп», – терĕм эпĕ вăрăхурахсем çинчен çырнă произведенири геройсен сăмахĕсене аса илсе…*

*в) Иртет иккен ĕмĕр, пĕтет*
*кун-çул,*
*Часах курми пулĕç*
*куçăмсем…*
*Сирĕн умран эпĕ çухалатăп,*
*Сывă пулăр ĕнтĕ,*
*тусăмсем…*

*г) Хурассан çĕрне эп*
*çитмесен те,*
*Кĕмесен те чаплă Шираза*
*Нумай куртăм, савăнтăм,*
*кӳрентĕм*
*Çĕр çинче телейлĕх шыраса…*

**Хурав.**

а) Иван Яковлев; ӑ) Нестер Янкас; б) Марфа Трубина; в) Николай Шелепи; г) Петӗр Хусанкай.

**8. Ыйту (ӗç).**

«Станцă» сăнарне тăтăшах сăнлакан çыравçă ятне палăртăр.

**Хурав.**

Хумма Çеменĕ.

**9. Ыйту.**

Çемен Элкер «Хурапа шурă» повеçне малтанласа мĕнле ят панă?

**Хурав.**

«Лена санитарка».

**10. Ыйту (ĕç).**

Сăвă çаврисене чăвашла куçарăр:

*Отговорила роща золотая*
*Березовым, веселым языком,*
*И журавли, печально*
*пролетая,*
*Уж не жалеют больше*
*ни о ком.*

*Кого жалеть? Ведь каждый*
*в мире странник*
*Пройдет, зайдет и вновь*
*оставит дом.*
*О всех ушедших грезит*
*конопляник*
*С широким месяцем над*
*голубым прудом…*

**Хурав.**

Вĕçлерĕ савăк сăмахне
сар хурăн
Ытла ытарлă ылтăн катара.
Вĕçсе иртӳçĕн тăрнасем
салхуллăн,
Пĕр шелсĕр ăсанаççĕ
кăнтăра.

Кама шеллес? Кашнийĕн
çулĕ çуйлă –
Каять, килет, каллех утать
çулпа.
Килтен каяншăн уйлĕ кантăр
уйĕ
Кăвак пĕве çинчи
çут уйăхпа.

***Регионсем хушшинче иртекен***
***чăваш чĕлхипе литература олимпиади***
***2019-мĕш çул***

***11-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Чĕлхе терминĕсене вырăсла куçарса çырăр:
ансăр предложени, вăйлату татăкĕ, мăкшă чĕлхи, мĕнлелĕх наречийĕ, сăпатлану, тӳнтер словарь, ят сăмах майлашăвĕ, ирçе чĕлхи, сăпат местоименийĕ, вăйлă степень.

**Хурав.**

*ансăр предложени* – нераспространенное предложение
*вăйлату татăкĕ* – усилительная частица
*мăкшă чĕлхи* – мокша-мордовский язык
*мĕнлелĕх наречийĕ* – наречие образа действия
*сăпатлану* – спряжение
*тӳнтер словарь* – обратный словарь
*ят сăмах майлашăвĕ* – именное словосочетание
*ирçе чĕлхи* – эрзя-мордовский язык
*сăпат местоименийĕ* – личное местоимение
*вăйлă степень* – превосходная степень.

**2. Ыйту (ĕç).**

*Канăçсăрлантараканнисемпе* сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать? Сăмахăн тымарне тата тĕпне тупăр.

**Хурав.**

*Канăçсăрлантараканнисемпе* – глагол, сăмах тымарĕ – *кан*, сăмах тĕпĕ – *канăçсăрлантар*.

**3. Ыйту (ĕç).**

Панă тĕслĕхри ят сăмах майлашăвĕсенчен чи ансăрри(се)не, унтан чи анлине тупса пуçламăш формăра

çырăр. Чи анлă ят сăмах майлашăвĕн тĕп компонентне палăртăр.

*Ешĕл çыран хĕрринчен мунча хыççăн çӳç уçакан хĕр пек усăнса тăракан ватă йăмра вуллисене кас-кас килекен уçă çил ĕшенчĕклĕн хускатса илет.*

**Хурав.**

Чи ансăр ят сăмах майлашăвĕсем: *ешĕл çыран, ватă йăмра, уçă çил.*

Чи анлă ят сăмах майлашăвĕ – *ешĕл çыран хĕрринчен мунча хыççăн çӳç уçакан хĕр пек усăнса тăракан ватă йăмра вуллисем*. Тĕп компоненчĕ – *вуллисем*.

**4. Ыйту (ĕç).**

Хутлă предложени ятне, пайĕсене, çыхăну мелне çырăр.

*Пӳртрен тухнă Сима юпа çумĕнче вĕлтĕр-вĕлтĕр шарф вĕлкĕшнине курсан тĕлĕнсех кайрĕ, васкаса унталла утма пуçларĕ.*

**Хурав.**

Пăхăнуллă хутлă предложении. Тĕп пайĕ – *пӳртрен тухнă Сима курсан тĕлĕнсех кайрĕ, васкаса унталла утма пуçларĕ*, пăхăнакан пайĕ – *юпа çумĕнче вĕлтĕр-вĕлтĕр шарф вĕлкĕшнине*; çыхăну мелĕ – ***-е*** (пару падеж аффиксĕ).

**5. Ыйту (ĕç).**

Хăвăрт каларăш (скороговорка) шутласа тупăр, ***ç*** сасăран пуçланакан сăмахсем ытларах пулччăр.

**6. Ыйту.**

Мĕн вăл дилоги?

**Хурав.**

Дилоги – тытăмĕ енĕпе хăйтĕллĕнлĕхлĕ, тĕп шухăшĕпе сюжечĕ тата геройсем енĕпе пĕрлĕхлĕ икĕ хайлавăн пĕрлешĕвĕ; тĕслĕхрен, Хв. Уярăн «Таната» тата «Таркăн» романĕсем.

**7. Ыйту (ĕç).**

Йĕркесене вуласа авторне паллăр:

*а) Пĕр çурхи кун,*
*эп астăватăп,*
*Киле килетĕп вăрçăран.*
*Ывăннипе аран утатăп,*
*Çунса тухать вĕри суран…*

*ă) Йĕпе хирте çӳретĕп*
*Эп хур кĕтĕвĕпе.*
*Каçпа яла кĕретĕп*
*Йăмралăх айĕпе…*

**Хурав.**

а) А. Воробьев; ă) Г. Айхи.

**8. Ыйту (ĕç).**

Петĕр Яккусен «Юман хуравĕ» сăввинче лирика геройĕ юманран «Чăваш хăçан пĕтет?» – тесе ыйтать. Юман хуравне аса илĕр.

**Хурав.**

Тĕнче пĕтсен.

**9. Ыйту (ĕç).**

Чăваш драматургийĕнчи *лаша, салтак, вут, пушар* символла детальсемлĕ хайлав ятне, авторне тата жанрне палăртăр.

**Хурав.**

«Пушар лаши», Николай Терентьев, трагикомеди.

**10. Ыйту (ĕç).**

Сăвă çаврисене чăвашла куçарăр:

*Отговорила роща золотая*
*Березовым, веселым языком,*
*И журавли, печально пролетая,*
*Уж не жалеют больше ни о ком.*

*Кого жалеть? Ведь каждый в мире странник*
*Пройдет, зайдет и вновь оставит дом.*
*О всех ушедших грезит коноплянник*

*С широким месяцем*
*над голубым прудом…*

**Хурав.**
Вĕçлерĕ савăк сăмахне
сар хурăн
Ытла ытарлă ылтăн катара.
Вĕçсе иртӳ́çĕн тăрнасем
салхуллăн,
Пĕр шелсĕр ăсанаççĕ
кăнтăра.

Кама шеллес?
Кашнийĕн çулĕ çуйлă –
Каять, килет, каллех утать
çулпа.
Килтен каяншăн уйлĕ
кантăр уйĕ
Кăвак пĕве çинчи
çут уйăхпа.

***Регионсем хушшинче иртекен***
***чăваш чĕлхипе литература олимпиади***
***2020-мĕш çул***

***9-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**Текста вулăр та 1–7 ыйтусене (ĕçсене) пурнăçлăр.**

Пĕр пуян çын паллă художникран автограф вырăнне пĕчĕк ӳкерчĕк туса пама ыйтать.

Художник хăвăрт ӳкерет те, уншăн пысăк хак ыйтать.

– Пилĕк минутрах ӳкертĕн-çке, мĕншĕн питĕ хаклă, ара? Ал çемми ĕç пулчĕ пуль терĕм.

– Çак ĕçе пилĕк минутра ӳкерме эпĕ пурнăç тăршшĕпех вĕрентĕм.

**1. Ыйту (ĕç).**

Текст содержанийĕпе килĕшӳллĕ ваттисен сăмахĕ(сем) çырăр.

**Хуравра тĕл пулма пултаракан ваттисен сăмахĕсем:**

Ĕмĕр пурăн, ĕмĕр вĕрен.

Вĕренни çăкăр ыйтмасть.

**2. Ыйту (ĕç).**

Кĕске, çемçе, янăравлă **к** сасă текстри хăш сăмахра (сăмахсенче) тĕл пулать? Çав сăмаха (сăмахсене) тупса çырăр.

**Хурав.**

Ӳкерчĕк, ӳкерет, ӳкертĕн, ӳкерме.

**3. Ыйту (ĕç).**

Хăш предложенире (предложенисенче) пунктуаци йăнăшĕ(сем) пур? Тӳрлетсе тепĕр хут çырса илĕр.

**Хурав.**

Художник вăр-вар ӳкерет те уншăн пысăк хак ыйтать. Пилĕк минутрах ӳкертĕн-çке, мĕншĕн питĕ хаклă ара?

**4. Ыйту (ĕç).**

Текстри хăш сăмах «васкавлă» сăмахпа синонимлă? Ун вырăнне евĕрлев сăмахĕ пулакан синоним(сем) тупса çырăр.

**Хурав.**

*Хăвăрт* сăмах. Ун синонимĕсем: *вăшт-вашт, вăштăр-ваштăр, вăшăл-вашăл, вăр-вар*.

**5. Ыйту (ĕç).**

Текстри иккĕмĕшле глагол(сене) тупса çырăр.

**Хурав.**

ӳкерет, ӳкертĕн, ӳкерме.

**6. Ыйту (ĕç).**

*Ал çемми* сăмах çаврăнăшĕн пĕлтерĕшне чăвашла ăнлантарса çырăр, вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

Тума пултаракан ĕç – посильная работа.

**7. Ыйту (ĕç).**

Текстра тĕп падежри хăш сăмахра (сăмахсенче) ***ă, ĕ*** сасă(сем) тухса ӳкме е кĕрсе ларма пултараççĕ?

**Хурав.**

ал(ă), пуль (пулĕ), эп(ĕ), пур(ă)нăç.

**8. Ыйту.**

Çак сăвă йĕркисен авторĕ кам?

*Чунра сивĕнмест пурнăç панă хĕрӳ,*
*Пăшал шăпланмасть алăра.*
*Чи шанчăклă ĕмĕт – пулас Çĕнтерӳ*
*Çӳрет пирĕнпе вăрçăра.*

**Хурав.**

Александр Алка.

**9. Ыйту.**

А. Артемьевăн «Симĕс ылтăн» хайлавĕнчи Валентин Актаев амăшĕн пĕркеленчĕк питне автор мĕнпе танлаштарать?

**Хурав.**

Типĕтнĕ панулмипе.

**10. Ыйту (ĕç).**

«Аслă Çĕнтерĕве – 75 çул!» темăпа икĕ çавраран кая мар сăвă çырăр.

**11. Ыйту (ĕç).**

Текста чăвашла куçарăр.

Благодать

Представьте себе: наша гостья, даром что из города, до сих пор не знала, что звёзды на небе такие красивые! Я ни разу не был в городе, а теперь еще надо подумать, стоит ли вообще туда ездить: может, там и солнце не всходит? Вдруг у них по ночам и луны на небе нет?

Я повел Анжелику на улицу, чтобы рассказать всё, что знаю о звёздах. Мы устроились на крыше погреба и лежали, глядя в ясное ночное небо. Бедняжка! Она даже про Созвездие Ковша ничего не знает! Я рассказал ей, что к утру это созвездие как бы переворачивается, и получается, что ковш опрокидывается и выплёскивает воду. Анжелика слушала, раскрыв рот! Созвездия Решето, Коромысло, Утренняя звезда, Полярная звезда – мы отправились в путешествие по небу и даже забыли, что находимся на земле, лежим на крытой досками крыше маленького погреба.

– В созвездии Большого Ковша – семь звезд, скажешь семь раз, наступит благодать… В созвездии Большого Ковша – семь звезд, скажешь семь раз, наступит благо-

дать… – азартно шепчут наши губы. Слова как бы сами собой слетают с губ, а в ночном мире происходят какие-то перемены. Я слышу не только, как стучит в груди моё собственное сердце, но и как бьётся сердце Анжелики. Сияние звёзд и стук сердец – больше в этой бесконечной тишине словно ничего и нет. Мы вслушиваемся в великую тишину и пугаемся самих себя: мы хоть и маленькие, но люди, и у нас есть какая-то связь со звёздами!

Мы летим всё выше и выше.

– Говорю же тебе, чувашский язык он какой-то волшебный… На нем можно сказки сказывать, – произносит Анжелика еле слышно.

– Молодец, что приехала в деревню. В городе не научилась бы говорить по-чувашски…

(Марина Карягина).

***Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади 2020-мĕш çул***

***10-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**Текста вулăр та 1–5 ыйтусене (ĕçсене) пурнăçлăр.**

– Кала-ха мана, асанне, – ыйтма хăюллăх çитерчĕ Гриша. – Ĕмĕре ĕçлесе ирттерме аванрах-и е ĕçлемесĕр-и? Вăт, ним хуйхă-суйхăсăр выртасчĕ санăн, асанне, кăмака çинче аяк пĕрчисене хĕртсе. Хырăм хыр тăрне кайсан, тăрса тутлă апат çиесчĕ те каллех улпутла çемçе тӳшек çине йăванасчĕ.

– Эх, мăнукăм, ĕç вăл – пурнăç тыткăчи. Нихăçан та ан ман çак сăмахсене. Этем ĕçпе мар, ĕçсĕр иртерех ватăлать, – терĕ кинемей тутăрне кăлт-кăлт хускатса. Унтан тăчĕ те вăшт-вашт утса пăри пусси хĕррине çитрĕ, шаларах кĕрсе паркарах пучаха суйларĕ.

*(Хв. Агивер çырнинчен).*

**1. Ыйту (ĕç).**

Текст содержанийĕпе килĕшӳллĕ ваттисен сăмахĕ(сем) çырăр.

**Хуравра тĕл пулма пултаракан ваттисен сăмахĕсем:**

Ĕç вăл – пурнăç илемĕ.

Ĕç вăл – пурнăç тыткăчи.

Ĕç кахала юратмасть.

Ĕç ĕçлесси хăяккăн выртасси мар.

Ĕç ĕçчене юратать.

Ĕç пулсан телей те пур.

Ĕç çынна илем кӳрет.

Ĕçлемесĕр хырăм тăранмасть.

**2. Ыйту (ĕç).**

Кĕске, çемçе, янăравлă **т** сасă текстри хăш сăмахра (сăмахсенче) тĕл пулать? Çав сăмаха (сăмахсене) тупса çырăр.

**Хурав.**

çитерчĕ, этем, иртерех.

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстра орфографи тĕлĕшĕнчен йăнăш çырнă сăмаха тупăр та тӳрлетсе çырăр.

**Хурав.**

хăюллăх = хăюлăх

**4. Ыйту.**

Текстра тĕп падежри хăш сăмахра (сăмахсенче) *ă, ĕ* сасă(сем) тухса ӳкме е кĕрсе ларма пултараççĕ?

**Хурав.**

пур(ă)нăç, них(ă)çан, пусси (пус(ă)), çак(ă).

**5. Ыйту (ĕç).**

*Вăшт-вашт* – мĕнле пуплев пайĕ?

*Вăшт-вашт* сăмахăн çав пуплев пайнех кĕрекен синонимне (синонимĕсене) тупса çырăр.

**Хурав.**

*Вăшт-вашт* – евĕрлев сăмахĕ, синонимĕсем:

*вăштăр-ваштăр, вăшăл-вашăл, вăр-вар, йăпăр-япăр.*

**6. Ыйту (ĕç).**

Текстра мĕнле пусă пирки сăмах пырать? Унти тулă ятне вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

Пăри пусси. Тулă ячĕ – полба.

**7. Ыйту.**

Мĕн вăл экспромт?

**Хурав.**

Экспромт – нумай шухăшламасăрах, сасартăк пуçа килнĕ кĕске сăвă çаврăмĕ.

**8. Ыйту.**

Çак сăвă йĕркисен авторĕ кам?

*Çĕнтерӳ пиртех вăл*
*пулĕ!..*
*Эпир курмасан*
*Юлташсемшĕн*
*пурнăç килĕ*
*Çуттăн çуталса.*

*Вĕсем манмĕç,*
*ырă сунĕç*
*Юрă кĕввинче.*
*Кил, Суворовла çапар-ха*
*Вилĕм çамкинчен!*

**Хурав.**

Владимир Бараев.

**9. Ыйту.**

И. Юркинăн «Толчокра» очеркĕнче камăн сăн ӳкерчĕкĕ сутлăхра пулнă? Ăна кам туяннă?

**Хурав.**

А.С. Пушкин сăн ӳкерчĕкĕ. Тутар-парышник туяннă.

**10. Ыйту (ĕç).**

«Аслă Çĕнтерĕве – 75 çул!» темăпа икĕ çавраран кая мар сăвă çырăр.

**11. Ыйту (ĕç).**

Текста чăвашла куçарăр.

Благодать

Представьте себе: наша гостья, даром что из города, до сих пор не знала, что звёзды на небе такие красивые! Я ни разу не был в городе, а теперь еще надо подумать, стоит ли

вообще туда ездить: может, там и солнце не всходит? Вдруг у них по ночам и луны на небе нет?

Я повел Анжелику на улицу, чтобы рассказать всё, что знаю о звёздах. Мы устроились на крыше погреба и лежали, глядя в ясное ночное небо. Бедняжка! Она даже про Созвездие Ковша ничего не знает! Я рассказал ей, что к утру это созвездие как бы переворачивается, и получается, что ковш опрокидывается и выплёскивает воду. Анжелика слушала, раскрыв рот! Созвездия Решето, Коромысло, Утренняя звезда, Полярная звезда – мы отправились в путешествие по небу и даже забыли, что находимся на земле, лежим на крытой досками крыше маленького погреба.

– В созвездии Большого Ковша – семь звезд, скажешь семь раз, наступит благодать… В созвездии Большого Ковша – семь звезд, скажешь семь раз, наступит благодать… – азартно шепчут наши губы. Слова как бы сами собой слетают с губ, а в ночном мире происходят какие-то перемены. Я слышу не только, как стучит в груди моё собственное сердце, но и как бьётся сердце Анжелики. Сияние звёзд и стук сердец – больше в этой бесконечной тишине словно ничего и нет. Мы вслушиваемся в великую тишину и пугаемся самих себя: мы хоть и маленькие, но люди, и у нас есть какая-то связь со звёздами!

Мы летим всё выше и выше.

– Говорю же тебе, чувашский язык он какой-то волшебный… На нем можно сказки сказывать, – произносит Анжелика еле слышно.

– Молодец, что приехала в деревню. В городе не научилась бы говорить по-чувашски…

(Марина Карягина).

***Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади 2020-мĕш çул***

***11-мĕш класс (чăваш шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Ултă сас паллирен тăракан сăмах тăвăр. Çав сăмаха тума:

1) япала ячĕ, хисеп ячĕ тата местоимени падежсем тăрăх улшăннине мĕн теççĕ? Çав сăмахăн пĕрремĕш сас паллине илĕр;

2) *канăçсăрланнă* сăмахра глаголтан япала ячĕ тăвакан аффикс хăшĕ? Унăн пуçламăш сас паллине илĕр;

3) «Болгары и чуваши» кĕнекен авторĕ кам? Ун хушаматĕнчи иккĕмĕш сас паллине илĕр.

4) *Çерем çине ура ярса пусатăн çеç – ăшă çил сан тавра вăркăшса çаврăнать* предложенире *çеç* мĕнле пуплев пайĕ пулать? Пĕрремĕш сас паллине илĕр;

5) *телей* сăмахăн синонимне тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр;

6) чăваш сăмахĕн пуçламăшĕнче мĕнле сас палли тĕл пулмасть?

Мĕнле сăмах пулнине тупăр, унпа мăшăр сăмах туса çырăр.

**Хурав.**

вăштăр. Мăшăр сăмах – *вăштăр-ваштăр*

(*вăштăр-вăштăр* тени тĕрĕс мар, вăл – икĕ хут калана-кан сăмах, мăшăр мар).

**2. Ыйту (ĕç).**

Панă тĕслĕхрен чи ансăр глагол сăмах майлашăв(ĕсе)не тата чи анлă ят сăмах майлашăвне тупса пуçламăш формăра çырăр. Чи анлă ят сăмах майлашăвĕн тĕп компонентне палăртăр.

*Вăл çурри таран юр кĕрчĕсемпе витĕннĕ йăмрасем патĕнчи кĕпер урлă каçса Анаткаса тухрĕ.*

**Хурав.**

Чи ансăр глагол сăмах майлашăвĕ – *Анаткаса тух*.

Чи анлă ят сăмах майлашăвĕ –

*çурри таран юр кĕрчĕсемпе витĕннĕ йăмрасем патĕнчи кĕпер*. Тĕп компоненчĕ – кĕпер.

**3. Ыйту (ĕç).**

Хутлă предложени ятне, пайĕсене, çыхăну мелне çырăр.

*Пуç çийĕпе кăвакалсем чĕвиклетсе вĕçнине курсан хĕр ача вĕсене хăвăрт-хăвăрт шутлама тытăнчĕ.*

**Хурав.**

Пăхăнуллă хутлă предложении. Тĕп пайĕ – *курсан хĕр ача вĕсене хăвăрт-хăвăрт шутлама тытăнчĕ*, пăхăнакан пайĕ – *пуç çийĕпе кăвакалсем чĕвиклетсе вĕçнине*; çыхăну мелĕ – ***-е*** пару падеж аффиксĕ.

**4. Ыйту.**

*Кунĕ çанталăкра ача та кунĕ.*

Çак предложенире *кунĕ* сăмаха иккĕшĕнче те мĕнле синонимпа ылмаштарма пулать?

**Хурав.**

лăпкă.

**5. Ыйту (ĕç).**

*Мачаран тăранттасăн кайри кустăрми пысăккăш хрусталь люстра çакăнса тăрать, сервантра – ерешлĕ турилкесемпе хаклă сервиссем.*

Çак предложенире миçе йăнăш? Йăнăш çырнă сăмаха (сăмахсене) тупăр та тӳрлетсе çырса илĕр.

**Хурав.**

Çак предложенире пурĕ ултă йăнăш.

*Маччаран, тăрантасăн, пысăкăш, эрешлĕ, турилккесем, сервизсем.*

**6. Ыйту.**

Мĕн вăл эпанафора?

**Хурав.**

Эпанафора – сăвăри пĕр йĕрке е прозăри пĕр фраза вĕçĕ тепĕр йĕрке е фраза пуçламăшĕ пулни; тĕслĕх:

Эс пĕлетĕн: ӳсрĕм эпĕ шухă,
Ӳсрĕм эпĕ шухă ачаран…

**7. Ыйту.**

Çак сăвă йĕркисен авторĕ кам?

*Вут-çулăмлă çулсем иртсе кайсассăн,*
*Вăрçă сасси йăнсассăн тĕнчере,*
*Ĕмĕтсемпе вĕриленсе, хавассăн*
*Эп таврăнатăп хам тăван çĕре…*

**Хурав.**

Александр Алка.

**8. Ыйту (ĕç).**

Л. Агаковăн «Шанчăк» романĕнчи шанчăк тыткăчисен (тĕп сăнарсен) ятне-шывне аса илĕр. Икĕ çамрăк пĕр-пĕринпе ăçта паллашаççĕ?

**Хурав.**

Римма Сурскаяпа Андрей Кованый. Пуйăсра паллашаççĕ.

**9. Ыйту (ĕç).**

«Аслă Çĕнтерĕве – 75 çул!» темăпа икĕ çавраран кая мар сăвă çырăр.

**10. Ыйту (ĕç).**

Текста чăвашла куçарăр.

Благодать

Представьте себе: наша гостья, даром что из города, до сих пор не знала, что звёзды на небе такие красивые! Я ни разу не был в городе, а теперь еще надо подумать, стоит ли вообще туда ездить: может, там и солнце не всходит? Вдруг у них по ночам и луны на небе нет?

Я повел Анжелику на улицу, чтобы рассказать всё, что знаю о звёздах. Мы устроились на крыше погреба и лежали, глядя в ясное ночное небо. Бедняжка! Она даже про Созвездие Ковша ничего не знает! Я рассказал ей, что к утру это созвездие как бы переворачивается, и получается, что ковш опрокидывается и выплёскивает воду. Анжелика слушала, раскрыв рот! Созвездия Решето, Коромысло, Утренняя звезда, Полярная звезда – мы отправились в путешествие по небу и даже забыли, что находимся на земле, лежим на крытой досками крыше маленького погреба.

– В созвездии Большого Ковша – семь звезд, скажешь семь раз, наступит благодать… В созвездии Большого Ковша – семь звезд, скажешь семь раз, наступит благодать… – азартно шепчут наши губы. Слова как бы сами собой слетают с губ, а в ночном мире происходят какие-то перемены. Я слышу не только, как стучит в груди моё собственное сердце, но и как бьётся сердце Анжелики. Сияние звёзд и стук сердец – больше в этой бесконечной тишине словно ничего и нет. Мы вслушиваемся в великую тишину и пугаемся самих себя: мы хоть и маленькие, но люди, и у нас есть какая-то связь со звёздами!

Мы летим всё выше и выше.

– Говорю же тебе, чувашский язык он какой-то волшебный… На нем можно сказки сказывать, – произносит Анжелика еле слышно.

– Молодец, что приехала в деревню. В городе не научилась бы говорить по-чувашски…

(Марина Карягина)

***Регионсем хушшинче иртекен***
***чăваш чĕлхипе литература олимпиади***
***2021-мĕш çул***

***9-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**Текста вулăр та 1-5-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.**

*Урам урлă пурăнакан Микулай мучирен йытă çури илтĕм. Унăн амăшĕ ула, пысăк. Ку вара кăмака хăрăмĕ пек, пĕр шурă пăнчă та çук. Чипер ят шыраса тупайманнипе ăна Айта ят патăм.*

**1. Ыйту (ĕç).**

Йытă çури амăшĕ мĕн тĕслĕ? Çав сăмаха çырăр та вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

Ула – пёстрый, пятнистый.

**2. Ыйту (ĕç).**

Тăваттăмĕш предложенири паллă ятне тупăр, синонимне (синонимĕсене) çырăр.

**Хурав.**

Чипер. Синонимĕсем – *илемлĕ, хитре, килĕшӳллĕ*.

**3. Ыйту.**

Хăрăм мĕн тĕслĕ пулать? Текстра кам (мĕн) хăрăм пек?

**Хурав.**

Хура тĕслĕ. Йытă çури (Айта) хăрăм пек.

**4. Ыйту (ĕç).**

Текстран хыççăмах (хыççăмахсене) çырса илĕр.

**Хурав.**

урлă, пек.

**5. Ыйту (ĕç).**

Пĕрремĕш предложенирен чи вăрăм ят сăмах майлашăвне пуçламăш формăна лартса çырса илĕр, тĕп компоненчĕпе пăхăнакан компонентне палăртăр.

**Хурав.**

*Урам урлă пурăнакан Микулай мучи*

Тĕп компонент – *Микулай мучи*, пăхăнакан компонент – *урам урлă пурăнакан.*

**6. Ыйту (ĕç).**

Пĕлтерĕшне кура çак терминсене пĕр ушкăна пухма пулать-и? Ытлашши термин (терминсем) пур пулсан вĕсене тупса палăртăр:

*Лирика, октава, хавха, цезура, эпиграмма.*

**Хурав.**

Пĕр ушкăна пухма пулать.

**7. Ыйту (ĕç).**

Ултă сас паллирен тăракан илемлĕ хайлав ятне аса илĕр, ăна тупма çак ыйтусемпе ĕçсене пурнăçлăр.

1) ку терминпа сăвă йĕркисенчи сыпăксен шучĕ пĕр пек пулнине, пусăм пĕр пек ылмашăнса пынине палăртаççĕ.Унăн пĕрремĕш сас паллине илĕр;

2) Исаев Мĕтри псевдонимĕн пуçламăш сас паллине илĕр;

3) Николай Ашмаринăн халăх халапĕ тăрăх илемлетсе çырнă калав пур. Хайлав ятĕнчи иккĕмĕш сăмахăн пуçламăш сас паллине илĕр;

4) Николай Терентьевăн виçĕ сăмахран тăракан хайлав ятне аса илĕр. Хайлав ятĕнчи сăмахсем пĕр пек сас паллирен пуçланаççĕ. Çав сăмахсен пĕрремĕш сас паллине илĕр;

5) Нестĕр Янкасăн чăн хушамачĕн малтанхи сас паллийĕ мĕнле?

6) Ефрем Еллиевăн «Чĕн тилхепе» калавĕнчи тĕп сăнарăн юлашки сас паллине илĕр.

Хайлав авторне палăртăр.

**Хурав.**
РАÇÇЕЙ (Раççей):
1) ритм – **р**;
2) Авраль – **а**;
3) «Кача çăви» – **ç**;
4) «Çил çинчи çеçпĕл» – **ç**;
5) Ефимов – **е**;
6) Самай – **й.**
Авторĕ – Николай Шелепи.

**8. Ыйту (ĕç).**
Сăвă виçине тата карт шутне палăртăр:
*Вăрманăм пачĕ хăй хупне*
*Хăй сăпкинче мана сикме,*
*Хирти ыраш хăй сĕткенне*
*Тултарчĕ манăн пĕвĕме.*
*(Ухсай Яккăвĕ)*
**Хурав.**
Ямб, 4 картлă.

**9. Ыйту (ĕç).**
Чăвашла куçарăр:
*С людьми ты тайной не делись своей,*
*Ведь ты не знаешь, кто из них подлей.*
*Как сам ты поступаешь с божьей тварью,*
*Того же жди себе и от друзей.*
*(Омар Хайям)*
**Хурав.**
Çынна ан пĕлтерсем вăрттăнлăха.
Час уйăрса илеймĕн йăх-яха.
Ыттисене мĕскер сунса тăратăн,
Çавна çеç кĕт çынран хуравлăха.

**10. Ыйту (ĕç).**
«П» сас паллилле сăмахсенчен çеç тăракан пĕчĕк калав çырăр.

***Регионсем хушшинче иртекен***
***чăваш чĕлхипе литература олимпиади***
***2021-мĕш çул***

***10-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**Текста вулăр та 1-4-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.**

*Малалла утатпăр. Ман çĕн сантали тăр пыльчăк. Уявра ыр çанталăк пулманшăн эпир айăплă мар-ха. Хĕвел ташласа тухасса кĕтсен вăхăт тăсăлса кайĕ.*

**1. Ыйту (ĕç).**

Омоним тума пултаракан сăмаха (сăмахсене) çырса илĕр.

**Хурав.**

ман, çĕн, тăр, юрĕ, ыр.

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстри хăш сăмаха йăнăшпа çырнă? Тӳрлетсе çырăр.

**Хурав.**

пылчăк (çемçелĕх паллисĕр çырмалла).

**3. Ыйту (ĕç).**

Хăш сăмахра (сăмахсенче) уçă сасă кĕрсе ларма е тухса ӳкме пултарать? Антонимĕсене тупса çырăр.

**Хурав.**

çĕн(ĕ) – кивĕ
ыр(ă) – усал

**4. Ыйту (ĕç).**

Хутлă предложение (хутлă предложенисене) çырса илĕр, тĕсне тата пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре палăртăр.

**Хурав.**

*Уявра ыр çанталăк пулманшăн эпир айăплă мар-ха* – пăхăнуллă хутлă предложени, çыхăну хатĕрĕ – ***-шăн*** пирке падеж аффиксĕ.

*Хĕвел ташласа тухасса кĕтсен вăхăт тăсăлса кайĕ* – пăхăнуллă хутлă предложени, çыхăну хатĕрĕ – **-а** пару падеж аффиксĕ.

**5. Ыйту.**

***Теветкел*** сăмах вырăсла мĕнле пулать-ши?

1) привлекательный, стройный

2) решительный, смелый

3) вежливый, добрый

4) богатый, творческий

**Хурав.**

решительный, смелый.

**6. Ыйту (ĕç).**

Пĕлтерĕшне кура çак терминсене пĕр ушкăна пухма пулать-и? Ытлашши термин (терминсем) пур пулсан вĕсене тупса палăртăр:

*Эпос, юптару, эпилог, сюжет, сага*.

**Хурав.**

Пĕр ушкăна пухма пулать.

**7. Ыйту (ĕç).**

Ултă сас паллирен тăракан илемлĕ хайлав ятне аса илĕр, ăна тупма çак ыйтусемпе ĕçсене пурнăçлăр.

1) ку терминпа тĕрлĕ çыравçăсен (ытларах пĕр халăхран тухнисен) суйласа илнĕ илемлĕ хайлавĕсен пуххине палăртаççĕ. Унăн пĕрремĕш сас паллине илĕр;

2) Гурий Комиссаров псевдонимĕн пуçламăш сас паллине илĕр;

3) Иван Юркинӑн суккӑр карчӑк ĕҫĕ-хĕлне сӑнласа ҫырнӑ повеҫ пур. Хайлав ятĕнчи юлашки сас паллине илĕр;

4) Осип Романовӑн «Хĕн-хур куракан ҫынна турӑ пӑрахмасть» повеҫĕнчи тĕп харкамҫӑ ячĕн пĕрремĕш сас паллине илĕр;

5) Ҫеҫпĕл Мишши хӑйĕн ҫырӑвĕсенче савнӑ ҫыннине епле чĕнет? Малтанхи сас паллине илĕр.

6) Петр Осиповӑн «Айтар» драминчи Сентиер юлташĕ мĕн ятлӑ? Пуҫламӑш сас паллине илĕр.

Хайлав авторне палӑртӑр.

**Хурав.**

АВЛАНУ (авлану):

1) антологи – **а**;

2) Вантер – **в**;

3) «Кача ҫӑви» – **л**;

4) Ануш – **а**;

5) Нуся – **н**;

6) Улай – **у.**

Авторĕ – Гурий Комиссаров.

**8. Ыйту (ĕҫ).**

Сӑвӑ виҫине палӑртӑр:

*Сӑмах чĕнме те юрамасть пулсан*
*Мĕн тума кирлĕ ӑс?*
*Шухӑшлама та юрамасть пулсан*
*Мĕн тума кирлĕ ӑс?*
*Чĕмсĕр пулас, тӑнсӑр пулас пулсан*
*Мĕн тума кирлĕ эп?*

*(Петĕр Эйзин)*

**Хурав.**

Ирĕклĕ сӑвӑ виҫи.

**9. Ыйту (ĕç).**

Чăвашла куçарăр:

*С людьми ты тайной не делись своей,*
*Ведь ты не знаешь, кто из них подлей.*
*Как сам ты поступаешь с божьей тварью,*
*Того же жди себе и от друзей.*

*(Омар Хайям).*

**Хурав.**

Çынна ан пĕлтерсем вăрттăнлăха.
Час уйăрса илеймĕн йăх-яха.
Ыттисене мĕскер сунса тăратăн,
Çавна çеç кĕт çынран хуравлăха.

**10. Ыйту (ĕç).**

«П» сас паллиллĕ сăмахсенчен çеç тăракан пĕчĕк калав çырăр.

***Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади 2021-мĕш çул***

***11-мĕш класс (чăваш шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Вырăсла куçарăр:

сар тут, сар çу, сарă тулă, сарă сăра, сар улма.

**Хурав.**

сар тут – веснушки, сар çу – топленое масло, сарă тулă – золотая пшеница, сарă сăра – янтарное пиво, сар улма – наливное (спелое) яблоко.

**2. Ыйту (ĕç).**

***Çумăр шăпăр-шăпăр çуса иртрĕ*** предложенири евĕрлев сăмахĕн пĕлтерĕшне палăртăр:

1) çумăр тумламĕсем шултра та йăвă
2) çумăр тумламĕсем шултра, анчах сайра
3) çумăр тикĕс те кĕске хушă çурĕ
4) çумăр тумламĕсем вĕтĕ, анчах çăра

**Хурав.**

3) çумăр тикĕс те кĕске хушă çурĕ

**3. Ыйту.**

Хăш йĕркере пĕр тымартан пулăннă сăмахсем вырнаçнă?

1) канăç, канав, канал, кану, канаш
2) канăç, кану, канлĕ, канăçлă, канăçу
3) канаш, хыткан, кантра, канлĕ, кантăк
4) канăçлă, канва, канарейка, канăçу, такан
5) канав, канал, кану, канăçу, кантăк

**Хурав.**

2) канăç, кану, канлĕ, канăçлă, канăçу.

**4. Ыйту (ĕç).**

***Çăвара шыв сыпнă*** сăмах çаврăнăшĕн антоним-фразеологизмне тата синоним-фразеологизмне çырăр.

**Хурав.**

Антоним-фразеологизмĕ – *халап çапнă*, синоним-фразеологизмĕ – *чĕлхине çыртнă* (е *шăл шурри те кăтартман*).

**5. Ыйту (ĕç).**

Пăхăнуллă хутлă предложенисенчен хăшĕн пăхăнакан пайĕ определени функциллĕ?

1) Сеанс пуçланасси нумай та юлмарĕ ĕнтĕ.

2) Кăмăлĕ мĕнле, ĕçченлĕхĕ те çавнашкал.

3) Пăр çапнă ыраш анине çулса пăрахма тиврĕ.

4) Çĕрле çумăр шăпăртатса илнипе çанталăк кăштах сулхăнланчĕ.

**Хурав.**

3) Пăр çапнă ыраш анине çулса пăрахма тиврĕ.

**6. Ыйту (ĕç).**

Пĕлтерĕшне кура çак терминсене пĕр ушкăна пухма пулать-и? Ытлашши термин (терминсем) пур пулсан вĕсене тупса палăртăр:

*Драма, ремарка, рефлекси, фарс, эпиграф.*

**Хурав.**

Пĕр ушкăна пухма пулать.

**7. Ыйту (ĕç).**

Ултă сас паллирен тăракан илемлĕ хайлав ятне аса илĕр, ăна тупма çак ыйтусемпе ĕçсене пурнăçлăр.

1) ку терминпа илемлĕхпе пахалăх тата пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен питĕ паха хайлава палăртаççĕ. Унăн пуçламăш сас паллине илĕр;

2) Алексей Воробьев çырнисене аса илсе йĕркери юлашки сăмаха хушăр: Самант куç килчĕ хуралса. / Çĕр тайăнать. Ӳкет … Сиктерсе хăварнă сăмахăн пуçламăш сас паллине илĕр;

3) Хветĕр Агивер çырнă «Круççей» хайлав жанрĕ мĕнле сас паллирен пуçланать?

4) Мария Волкова сăввинчи лирика геройĕн савниййĕ мĕн çӳллĕшне чечек акнă? Çав сăмахăн пуçламăш сас паллине илĕр;

5) Хветĕр Уярăн ыйтуллă предложенирен тăракан повеç ячĕ мĕнле сас паллипе пуçланать?

6) хăш литература геройĕ пирки сăмах пырать-ши?

«Амăш ун кăвапине / Çав тери типтерлĕ / Типĕтсе çӳпçе тĕпне / Пытарса хĕстернĕ». Литература геройĕ ячĕн пуçламăш сас паллине илĕр.

Хайлав авторне палăртăр.

**Хурав.**

ШАНЧĂК (шанчăк):

1) шедевр – **ш**;

2) алса – **а**;

3) новелла – **н**;

4) чун – **ч**;

5) «Ăçта эс, тинĕс?» – **ă**;

6) Кĕлпук – **к.**

Авторĕ – Леонид Агаков.

**8. Ыйту (ĕç).**

Сăвă виçине тата карт шутне палăртăр:

*Ыр сăмах калама ан ӳркенĕр –*
*Пулмасан та хăш чух ун усси –*
*Пулас çуккă сиен. Ан хĕрхенĕр! –*
*Ыр сăмах чылай чух – чун уççи!*

*(Раиса Сарпи).*

**Хурав.**
Анапест, 3 картлă.

**9. Ыйту (ĕç).**
Чăвашла куçарăр:
*С людьми ты тайной не делись своей,*
*Ведь ты не знаешь, кто из них подлей.*
*Как сам ты поступаешь с божьей тварью,*
*Того же жди себе и от друзей.*
*(Омар Хайям).*
**Хурав.**
Çынна ан пĕлтерсем вăрттăнлăха.
Час уйăрса илеймĕн йăх-яха.
Ыттисене мĕскер сунса тăратăн,
Çавна çеç кĕт çынран хуравлăха.

**10. Ыйту (ĕç).**
«П» сас паллилле сăмахсенчен çеç тăракан пĕчĕк калав çырăр.

***Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади 2022-мĕш çул***

***9-мĕш класс (чăваш шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.**

*Çав самантра эп кăмака çумĕнче ларакан чăматана асăрхарăм. Халĕ те çĕннипех вăл. Сĕтпе хутăштарнă кофе тĕслĕ, тăпăлкка. Ăна Хĕветĕр пичче вăрçă хыççăнах пĕр чикан çемйинчен туяннăччĕ. Палланă чăматана йăтса илтĕм те асăрханса сĕтел çине лартрăм.*

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстра вырăс чĕлхинчен калаçу урлă йышăннă сăмаха (сăмахсене) тупса пуçламăш формăра çырăр, вырăсла тӳркилĕвне кăтартăр.

**Хурав.**

чăматан – чемодан, Хĕветĕр – Федор, чикан – цыган, çемье – семья, сĕтел – стол.

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстра евĕрлев сăмахĕнчен пулăннă иккĕмĕшле сăмаха (сăмахсене) тупăр, мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр.

**Хурав.**

Тăпăлкка. Паллă ячĕ пулать.

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстра темиçе хут тĕл пулакан ***те*** сăмах омонимлă пулать-и? Ĕнентерĕр.

**Хурав.**

Текстра темиҫе хут тӗл пулакан ***те*** сӑмах омонимлӑ пулать, мӗншӗн тесен вӑл тӗрлӗ пуплев пайне палӑртать: татӑк (Халӗ *те* ҫӗннипех вӑл), союз (Палланӑ чӑматана йӑтса илтӗм *те* асӑрханса сӗтел ҫине лартрӑм).

**4. Ыйту.**

Хӑшӗ тӗрӗс?

Сӑмах ҫиппи, сӑвӑ ҫиппи, ҫурӑм ҫиппи, ура ҫиппи, шухӑш ҫиппи, ҫумӑр ҫиппи, вӑлта ҫиппи, хӑяр ҫиппи, шӑмӑ ҫиппи, эрешмен ҫиппи.

**Хурав.**

Сӑмах ҫиппи, шухӑш ҫиппи, вӑлта ҫиппи, хӑяр ҫиппи, эрешмен ҫиппи.

**5. Ыйту (ӗҫ).**

Пилӗк сас паллирен тӑракан сӑмах ҫырӑр. Ҫав сӑмаха тума ыйтусемпе ӗҫсене пурнӑҫлӑр:

1) **Дмитрий** ята вырӑсларан чӑвашла куҫарӑр та виҫҫӗмӗш сас паллине илӗр.

2) **Свияга** юхан шыв ятне вырӑсларан чӑвашла куҫарӑр та иккӗмӗш сас паллине илӗр.

3) Мӗнле кун ячӗ вӑл – вырӑс эрни кунӗ? Унӑн ҫиччӗмӗш саспаллине илӗр.

4) ***Нижний Новгород*** хула ятне вырӑсларан чӑвашла куҫарӑр та пӗрремӗш сас паллине илӗр.

5) Н.И. Ашмарин чӑваш чӗлхинчи хӑш пуплев пайне питӗ тӗплӗн те туллин тишкернӗ? Ҫав пуплев пайӗн пӗрремӗш сас паллине илӗр.

**Хурав.**

ТӖНЧЕ (тӗнче):

1) Мӗтри – **Т**

2) Сӗве – **Ӗ**

3) Вырсарни – **Н**

4) Чулхула – **Ч**

5) Евӗрлев сӑмахӗ – **Е**

**6. Ыйту.**

Кăсăк интригăллă, музыкăпа, ташăпа çыхăннă диалогсемлĕ çăмăл пьесăна, комедие мĕнле терминпа палăртаççĕ?

**Хурав.**

Водевиль.

**7. Ыйту (ĕç).**

А. Алкан «Июнĕн 22-мĕшĕ» сăввинчи йĕркесемпе паллашăр. Сасăсен повторĕ урлă мĕнле сăнлăх куратăр-илтетĕр?

*Сасартăк тревога янрарĕ ирпе.*<br>
*Сасартăк, пĕр харăс тăрса,*<br>
*Эпир вĕтлĕх витĕр, сăрт урлă, хирпе*<br>
*Васкарăмăр аслă вăрçа.*

**Хурав.**

Ку çаврара сасăсен повторне пула ритм салтаксен, полксен çирĕп утти пек хывăнать.

**8. Ыйту.**

Александр Артемьевăн «Симĕс ылтăн» повеçĕнчи пролог çутçанталăкăн хăш тапхăрне сăнланинчен пуçланать? Ял халăхĕ мĕн ĕç тăвать?

**Хурав.**

Хура кĕркунне. Юрлă-юпăнчăклă çанталăка пăхмасăр, ял халăхĕ уйра çĕрулми кăларать.

**9. Ыйту (ĕç).**

Чăваш апат-çимĕçне рекламăласа слоган çырăр.

**10. Ыйту (ĕç).**

И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ 55 çул тултарнине халалласа сăвă çырăр.

***Регионсем хушшинче иртекен***
***чăваш чĕлхипе литература олимпиади***
***2022-мĕш çул***

***10-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.**

*Хĕрарăм пĕр мăшăр кивĕ сантали, тепĕр мăшăр пӳлĕмре тăхăнмалли тапăчки йăтса кĕнине курсан атăçă хĕпĕртерĕ. Юратать вăл кивĕ пушмакпа аппаланма. Хаçат хутĕнчен хатĕрленĕ ĕлкепе виççе сăран татăкĕсем касса кăларать, сăмалапа туртнă тăкăскă çиппелен асăрханса çĕлет. Магазинти пекех çĕнетет кивĕ атă-пушмака.*

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстра вырăс чĕлхинчен калаçу урлă йышăннă сăмаха (сăмахсене) тупса пуçламăш формăра çырăр, вырăсла тӳркилĕвне кăтартăр.

**Хурав.**

сантали – сандали, тапăчки – тапочки, пушмак – башмак, хаçат – газета, сăмала – смола.

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстра глаголтан пулăннă япала ятне (япала ячĕсене) тупăр.

**Хурав.**

пӳлĕмре, татăкĕсем.

**3. Ыйту (ĕç).**

Хутлă предложение (хутлă предложенисене) çырса илĕр, тĕсне тата пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре палăртăр.

**Хурав.**

*Хĕрарăм пĕр мăшăр кивĕ сантали, тепĕр мăшăр пӳлĕмре тăхăнмалли тапăчки йăтса кĕнине курсан атăçă хĕпĕртерĕ.*

Пăхăнуллă хутлă предложени, çыхăну хатĕрĕ – ***-е*** пару падеж аффиксĕ.

**4. Ыйту.**

Хăшĕ тĕрĕс?

Сăмах çиппи, сăвă çиппи, çурăм çиппи, ура çиппи, шухăш çиппи, çумăр çиппи, вăлта çиппи, хăяр çиппи, шăмă çиппи, эрешмен çиппи.

**Хурав.**

Сăмах çиппи, шухăш çиппи, вăлта çиппи, хăяр çиппи, эрешмен çиппи.

**5. Ыйту (ĕç).**

Пилĕк сас паллирен тăракан сăмах çырăр. Çав сăмаха тума ыйтусемпе ĕçсене пурнăçлăр:

1) **Дмитрий** ята вырăсларан чăвашла куçарăр та виççĕмĕш сас паллине илĕр.

2) **Свияга** юхан шыв ятне вырăсларан чăвашла куçарăр та иккĕмĕш сас паллине илĕр.

3) Мĕнле кун ячĕ вăл – вырăс эрни кунĕ? Унăн çиччĕмĕш саспаллине илĕр.

4) ***Нижний Новгород*** хула ятне вырăсларан чăвашла куçарăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр.

5) Н.И. Ашмарин чăваш чĕлхинчи хăш пуплев пайне питĕ тĕплĕн те туллин тишкернĕ? Çав пуплев пайĕн пĕрремĕш сас паллине илĕр.

**Хурав.**

ТĔНЧЕ (тĕнче):

1) Мĕтри – **Т**

2) Сĕве – **Ĕ**

3) Вырсарни – **Н**

4) Чулхула – **Ч**

5) Евĕрлев сăмахĕ – **Е**

**6. Ыйту.**

Баллада жанр литературăн хăш ретне кĕрет?

**Хурав.**

Эпика ретне кĕрет.

**7.** Иван Юркинăн «Мул» повеçĕнчи Пăраски карчăк сăнарне куç умне кăларăр. Автор асăннă героя епле сăнласа панă?

**Хурав.**

Пăраски карчăк хăй пит пысăках та пулман: пĕчĕкçĕ тесе калама та лутрах та мар, чух кăна çын пулнă. Тăрăхларах питлĕ пулнă. Куçĕсем уçăлса пăхса тăрсан та нимĕн те курман. Çӳçĕсем пăртакçă кăвакарнă. Çăварĕнчи шăлĕсем пурте тĕрĕс пулнă. Вăл çав тери ватă пулсан та аçтăрхан мăйăрĕсене пит ансат катнă. Хытă çăкăр сăмсисене, типсе кайнă çăкăр татăкĕсене юратса çисе янă. Куçĕ курманран ялан пĕр çынна çавăттарса çӳренĕ. Хăй пурнăçĕпе вăл лăпкă пулнă. Çиййĕнчи тумтирĕсем яланах лайăх пулнă; пуçне сырнă тутăр-сурпанĕсем унăн кирек хăçан та çĕнĕ çынсен пек шап-шурă та тап-таса пулнă.

**8. Ыйту.**

Çак символла сăнлăхсем хăй хайлавра тĕл пулаççĕ? Авторĕ кам?

*Ватă юман, аçа (аслати), аслă чул, укçа хутаççи.*

**Хурав.**

«Шуйттан чури» трагедире. К. Иванов (авторĕсем К. Ивановпа Ухсай Яккăвĕ тесе палăртсан та йăнăш мар, мĕншĕн тесен трагедие Ухсай çырса пĕтернĕ).

**9. Ыйту (ĕç).**

Чăваш апат-çимĕçне рекламăласа слоган çырăр.

**10. Ыйту (ĕç).**

И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ 55 çул тултарнине халалласа сăвă çырăр.

***Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади 2022-мĕш çул***

***11-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.**

*Çумăр тумламĕсем ӳккелеме пуçланине курсан Верук сунчăк илменшĕн ӳкĕнчĕ. Çумăр пĕрчисем, пĕр çемьери пек, пĕр-пĕринпе туслăн выляса шăпăртатрĕç. Йĕпе курăкпа пушмак шывланчĕ, утнă çемĕн лĕкĕштетме пуçларĕ. Плащ нӳрленчĕ. Ыраш уйĕнчи путене сасси те шăпланчĕ.*

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстра вырăс чĕлхинчен калаçу урлă йышăннă сăмаха (сăмахсене) тупса пуçламăш формăра çырăр, вырăсла тӳркилĕвне кăтартăр.

**Хурав.**

Верук – Вера, сунчăк – зонтик, çемье – семья, пушмак – башмак, ыраш – рожь.

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстра глаголтан пулăннă япала ятне (япала ячĕсене) тупăр.

**Хурав.**

çумăр, тумламĕсем.

**3. Ыйту (ĕç).**

Хутлă предложение (хутлă предложенисене) çырса илĕр, тĕсне тата пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре палăртăр.

**Хурав.**

*Çумăр тумламĕсем ÿккелеме пуçланине курсан Верук сунчăк илменшĕн ÿкĕнчĕ.*

Пăхăнуллă хутлă предложени, çыхăну хатĕрĕ – ***-е*** пару падеж аффиксĕ.

**4. Ыйту (ĕç).**

Текстри хăш сăмаха йăнăшпа çырнă? Ăна тÿрлетсе çырăр, пуплев пайне кăтартăр.

**Хурав.**

Йăнăшпа çырнă сăмах – *утнă çемĕн*, ăна пĕрле çырмалла: *утнăçемĕн,* глагол пулать.

**5. Ыйту.**

Хăшĕ тĕрĕс?

Сăмах çиппи, сăвă çиппи, çурăм çиппи, ура çиппи, шухăш çиппи, çумăр çиппи, вăлта çиппи, хăяр çиппи, шăмă çиппи, эрешмен çиппи.

**Хурав.**

Сăмах çиппи, шухăш çиппи, вăлта çиппи, хăяр çиппи, эрешмен çиппи.

**6. Ыйту (ĕç).**

Ку терминпа кама та пулсан, мĕншĕн те пулсан самана проблемисем, ытларах социаллă-политикăллă ыйтусем тăрăх тÿррĕн, хăюллăн та çивĕччĕн питлекен сатирăпа публицистика хайлавне палăртаççĕ. Жанр ятне палăртăр.

**Хурав.**

Памфлет.

**7. Ыйту (ĕç).**

Ку чăваш çыравçи – новелла ăсти. Унăн пултарулăхĕнче чун уççи (исповедь) мелĕ тĕпе тухать.

**Хурав.**

Ваçлей Игнатьев.

**8. Ыйту (ěç).**

Александр Артемьевăн «Салампи» повеçěнчи Муза сăнарне куç умне кăларăр. Автор çак героя епле сăнласа панă? Литература портречě калăпланă май мěнле танлаштарусемпе усă курнă?

**Хурав.**

Вăл Атăл хăви пек çинçе пӳллě. Пичě ачаш та шуранка; питне пудрă сěрнěрен пуль, хěп-хěрлě тути йěкěр чие çырли майлă; тути хěррисем, яланах кулнă евěр, кăшт çěкленсе тăраççě, йăлкăшса кулнă чух вара икě пит çăмарти пăт путать; куçěсем йěтěн çеçки пек сенкер кăвак; куç харшисене çинçе хăварса, хуп-хура сăрланă, вěсем чěкеç çуначě евěрлě; тикěс кастарнă куç хăрпăкěсем çӳлелле авăнса тăраççě; кěске çӳçě кěрхи уяр кун хěвел çинче йăлтăртатакан сап-сарă хурăн çулçи тěслě курăнать.

**9. Ыйту (ěç).**

Чăваш апат-çимěçне рекламăласа слоган çырăр.

**10. Ыйту (ěç).**

И.Н. Ульянов ячěллě Чăваш патшалăх университечě 55 çул тултарнине халалласа сăвă çырăр.

***Регионсем хушшинче иртекен***
***чăваш чĕлхипе литература олимпиади***
***2023-мĕш çул***

***9-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.**

*Мана хирĕç çӳллĕ те патвар пӳ-силлĕ икĕ каччă килет. Иккĕшĕ те яка тăхăннă, тĕттĕм-кăвак костюмĕсене йӳле янă. Пичĕ-куçĕ çутă та таса. Урисенче – çăмăл пушмак. Вĕсем сăн курăнмаллах çап-çутă.*

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстра темиçе хут тĕл пулакан ***те*** сăмах пĕр-пĕринпе омонимлă пулнине (е пулманнине) ĕнентерĕр.

**Хурав.**

Текстра темиçе хут тĕл пулакан ***те*** сăмах пĕр-пĕринпе омонимлă, мĕншĕн тесен вĕсем пĕр пек илтĕнеççĕ, анчах тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ:

***те*** – союз (*çӳллĕ* ***те*** *патвар*), ***те*** – татăк (*иккĕшĕ* ***те***).

**2. Ыйту (ĕç).**

Орфографи тĕлĕшĕнчен йăнăш çырнă сăмаха тупăр та тӳрлетсе çырăр, мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр.

**Хурав.**

тĕттĕм кăвак, паллă ячĕ пулать.

**3. Ыйту (ĕç).**

Хутлă предложение (хутлă предложенисене) çырса илĕр, тĕсне палăртăр, пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре кăтартăр.

**Хурав.**

*Вĕсем сăн курăнмаллах çап-çутă.*

Пăхăнуллă хутлă предложени, çыхăну хатĕрĕ – ***-малла*** аффикс.

**4. Ыйту (ĕç).**

Текстри *йӳле* сăмахăн пĕлтерĕшне ăнлантарăр.

**Хурав.**

тӳмелемен (е тӳммисене вĕçертсе уçса янă).

**5. Ыйту (ĕç).**

Ултă сас паллирен тăракан сăмах тăвăр. Çав сăмаха тума ыйтусене хуравлăр:

1) *Кукăль, чие, тухьяллă, туссем, хуть, туя, халь, июль, çемьеллĕ, кăсăя.* Çак сăмахсенчен хăшĕнче сасăсемпе сас паллисен шучĕ пĕр тан? Çав сăмахăн пĕрремĕш сас паллине çырăр.

2) *Палиндром, фразеологизм, омоним, калька, аванкамера, ротацизм, синоним, ассимиляци.* Çак сăмахсенчен хăшĕ чĕлхе терминĕ мар? Çав сăмахăн пиллĕкмĕш сас паллине çырăр.

3) ***Наян*** сăмахăн антонимне тупăр та тăваттăмĕш сас паллине çырăр.

4) *Пушкăрт, чăваш, азербайджан, казах, мари, туркмен, турккă, узбек.* Çаксенчен хăшĕ тĕрĕк чĕлхисен ушкăнне кĕмест? Çав сăмахăн виççĕмĕш сас паллине çырăр.

5) *Пĕр ..... – пĕр ăс, ик ..... – икĕ ăс.* Çак ваттисен сăмахĕнчи точкăсем вырăнне кирлĕ сăмах тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр.

6) ***Авал*** сăмахăн синонимне тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр.

Мĕнле сăмах пулнине çырăр, ăна вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

1) Июль – И
2) Аванкамера – К
3) Ĕçчен – Е
4) Мари – Р
5) Чĕлхе – Ч
6) Ĕлĕк – Ĕ

ИКЕРЧĔ (икерчĕ) – блины (оладьи).

**6. Ыйту (ĕç).**

Мĕн вăл палиндром? Тĕслĕхпе çирĕплетĕр.

**Хурав.**

Палиндромра сăмах (е сăмах çаврăнăшĕ), пĕр йĕрке (е темиçе) малалла та, каялла та пĕр пек вуланать.

**7. Ыйту.**

Николай Ашмарин халăх халапне тĕпе хурса мĕнле калав çырнă?

**Хурав.**

«Кача çăви».

**8. Ыйту.**

Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕ Марина Карягинан хăш пьесипе спектакль лартнă?

**Хурав.**

«Кĕмĕл тумлă çар».

**9. Ыйту (ĕç).**

Чăвашла куçарăр:

*Удивительно*

*Люблю сидеть на берегу пруда. Прудили мы его с Мишкой сами. Дедушка Мишки нам только помогал. Вода в нем теплая, как парное молоко. Сядем с Мишкой на*

*краю, опустим ноги в теплую воду и бултыхаем ими: бултых, бултых, бултых!*

*А в ответ лягушки хором: квак! квак! квак!*

*Что это значит на их языке? Наверное, благодарят, что для них такое хорошее царство устроили. Удивительное место! В воде деревья, дома. Только все вверх ногами. А среди домов бабушкин сад перевернулся. Удивительно! Не зря мы старались.*

*(В. Тарават)*

**Хурав.**

*Тĕлĕнмелле*

*Юрататăп пĕве хĕрринче ларма. Пĕвене Мишшапа иксĕмĕр пĕвелерĕмĕр. Тусăн аслашшĕ пире пулăшрĕ анчах. Пĕвере шывĕ ăшă, тин сунă сĕт пекех. Ларатпăр та Мишшапа пĕве хĕрринче урасене шыва чиксе чăмпăлт-чăмпăлт тутаратпăр. Пĕвери шапасем квак! квак! тесе юрлаççĕ. Мĕн каласшăн-ши вĕсем? Тав тăваççĕ пуль хăйсене çакăн пек çăтмах çĕршывĕ туса панăшăн.*

*Тĕлĕнмелле çăтмах. Шывра асаннесеннипе Мишшасен пӳрчĕ курăнать, анчах вăл пуçхĕрлĕ. Пахчари йывăççем те пуçхĕрлĕ тăнă. Тĕлĕнмелле!*

*Ахальтен тăрăшмарăмăр иккен!*

*(В. Тарават)*

**10. Ыйту (ĕç).**

Юратнă вĕрентекенĕре халалласа пĕр е икĕ çавраллă сăвă çырăр.

***Регионсем хушшинче иртекен***
***чăваш чĕлхипе литература олимпиади***
***2023-мĕш çул***

***10-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.**

*Тӳлек те ăшă кас анчĕ çĕр çине. Тӳпене тĕттĕм-хура сĕмлĕх хупласа илнипе урампа утса çӳрекен çынсем курăнми пулчĕç. Пысăк çуртсем те курăнмаççĕ. Хваттерти пӳлĕм паçăрах шăпланчĕ. Çынсем ыйхăра.*

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстра темиçе хут тĕл пулакан ***те*** сăмах пĕр-пĕринпе омонимлă пулнине (е пулманнине) ĕнентерĕр.

**Хурав.**

Текстра темиçе хут тĕл пулакан ***те*** сăмах пĕр-пĕринпе омонимлă, мĕншĕн тесен вĕсем пĕр пек илтĕнеççĕ, анчах тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ:

***те*** – союз (*тӳлек* ***те*** *ăшă*), ***те*** – татăк (*çуртсем* ***те***).

**2. Ыйту (ĕç).**

Орфографи тĕлĕшĕнчен йăнăш çырнă сăмаха тупăр та тӳрлетсе çырăр, мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр.

**Хурав.**

тĕттĕм хура, паллă ячĕ пулать.

**3. Ыйту (ĕç).**

Хутлă предложение (хутлă предложенисене) çырса илĕр, тĕсне палăртăр, пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре кăтартăр.

**Хурав.**

*Тӳпене тĕттĕм хура сĕмлĕх хупласа илнипе урампа утса ҫӳрекен ҫынсем курăнми пулчĕҫ.*

Пăхăнуллă хутлă предложени, ҫыхăну хатĕрĕ – ***-пе*** пĕрлелĕх падеж аффиксĕ.

**4. Ыйту (ĕҫ).**

Текстра глаголтан пулăннă япала ятне тупăр, ҫав сăмахăн тытăмне (тымарне, аффиксне, тĕпне) палăртăр.

**Хурав.**

пӳлĕм

*пӳл* (тымар) + -*ĕм* (аффикс), сăмах тĕпĕ – *пӳлĕм*.

**5. Ыйту (ĕҫ).**

Ултă сас паллирен тăракан сăмах тăвăр. Ҫав сăмаха тума ыйтусене хуравлăр:

1) *Кукăль, чие, тухьяллă, туссем, хуть, туя, халь, июль, ҫемьеллĕ, кăсăя.* Ҫак сăмахсенчен хăшĕнче сасăсемпе сас паллисен шучĕ пĕр тан? Ҫав сăмахăн пĕрремĕш сас паллине ҫырăр.

2) *Палиндром, фразеологизм, омоним, калька, аванкамера, ротацизм, синоним, ассимиляци.* Ҫак сăмахсенчен хăшĕ чĕлхе терминĕ мар? Ҫав сăмахăн пиллĕкмĕш сас паллине ҫырăр.

3) ***Наян*** сăмахăн антонимне тупăр та тăваттăмĕш сас паллине ҫырăр.

4) *Пушкăрт, чăваш, азербайджан, казах, мари, туркмен, турккă, узбек.* Ҫаксенчен хăшĕ тĕрĕк чĕлхисен ушкăнне кĕмест? Ҫав сăмахăн виҫҫĕмĕш сас паллине ҫырăр.

5) *Пĕр ..... – пĕр ăс, ик ..... – икĕ ăс.* Ҫак ваттисен сăмахĕнчи точкăсем вырăнне кирлĕ сăмах тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр.

6) ***Авал*** сăмахăн синонимне тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр.

Мĕнле сăмах пулнине çырăр, ăна вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

1) Июль – И
2) Аванкамера – К
3) Ĕçчен – Е
4) Мари – Р
5) Чĕлхе – Ч
6) Ĕлĕк – Ĕ

ИКЕРЧĔ (икерчĕ) – блины (оладьи).

**6. Ыйту.**

Литература теорийĕнче фабула термин хăш ăнлавпа тачă çыхăннă?

**Хурав.**

Сюжет терминпа.

**7. Ыйту (ĕç).**

В. Рсай çырнă «Сăхман айĕнчи ача амăшĕ» калавăн пуçламăшне аса илĕр. Лăпкă каçа тата уйăха автор мĕнле сăнарсемпе танлаштарать?

**Хурав.**

Лăпкă каçа – çемçе сăпкара çывăрса кайнă ачапа; уйăха – халь анчах çуралнă тихапа.

**8. Ыйту (ĕç).**

Митта Ваçлейĕ çапла çырнă:

*«…Чăваш çырулăхĕн аталанăвĕнче эпĕ пилĕк юпа куратăп. Малтанхи иккĕшĕ анатри чĕлхен сăмах пуянлăхне уçрĕç, тепĕр иккĕшĕ çав пуянлăха анлă ĕнерӳ пама вирьял чĕлхинче май тупрĕç. Пиллĕкмĕшĕ вара, хăйĕн тантăшĕсемпе тата Çеçпĕл нормисене нимĕн иккĕленмесĕр*

*йышăннă çамрăксемпе пĕрле, чăваш сăввин сассине Европа культурин çӳллĕхне çити çĕклерĕ».*

Камсем пирки сăмах пырать-ши?

**Хурав.**

Яковлев – Иванов – Ашмарин – Çеçпĕл – Хусанкай.

**9. Ыйту (ĕç).**

Чăвашла куçарăр:

*Прощание*

*Так не хочется выбираться из-под теплого одеяла. Еще только стадо выгоняют, а уже пора, пора в дорогу собираться. Папа вчера еще за мной приехал. И с Мишкой, и с другими ребятами я еще вчера попрощался. Пригласил их в город в гости.*

*Быстренько поели пирожков с молоком и пошли на остановку. Бабушка с дедушкой нас до автобуса провожают.*

*Оглянулся назад – там Трезор следом бежит. И он проснулся. А я ведь с ним вчера попрощался. И Мишка около своего дома стоит. И дед Антон в своих стоптанных валенках…*

*У меня слезы блестят… Не хотят понять, что я мужчина. Очень неохота расставаться, хотя и по маме, и по братишке соскучился. Но все равно мне в деревне больше нравится. Хорошо бы сюда переехать. Мама в больнице бы работала, папа по Свияге теплоходы водил бы… Мы с Мишкой запрудили бы Свиягу, она разлилась бы, как Волга.*

*Ну ничего… Когда-нибудь…*

*(В. Тарават)*

**Хурав.**

*Сывпуллашни*

*Ăшă утиял айĕнчен тухас килмест. Çынсем кĕтӳ кăна хăвалаççĕ иккен те, манăн вара… манăн çула тухма пуçтарăнмалла. Атте ĕнерех килнĕччĕ мана илме. Мишапа*

*та, ытти ачасемпе те каçхинех сывпуллашрăм. Пурне те хулана, пирĕн пата хăнана пырса курма чĕнтĕм эпĕ.*

*Васкаса сĕтпе кукăль çирĕмĕр те чарăнăва утрăмăр. Асаттепе асанне пире ăсатма пыраççĕ.*

*Çаврăнса пăхрăм та – Трезор ман хыççăн чупать. Вăл та вăраннă иккен. Эп унпа каçхинех сывпуллашрăм-çке. Мишша та пўрт умĕнче ыйхăллă куçне сăтăркаласа тăрать. Кивĕ çăматă тăхăннă Антун мучи те унпа юнашарах.*

*Куççулĕм пăчăртанса тухрĕ... Ăнланмасть вăл арçынсем йĕмеççĕ иккенне. Уйрăлас килмест ман никамран та. Аннене те курас килет, пĕчĕк шăллăма та. Ялта мана пурпĕрех хуларинчен ытларах килĕшет. Аттепе аннерен ыйтап-ха яла куçса килме. Анне пульницăра ĕçлĕччĕ, атте Сĕве тăрăх пăрахутпа ишĕччĕ... Эпир Мишшапа пĕвелетпĕр те ăна – вăл Атăл пекех сарăлса юхĕ.*

*Пулать-ха вăл... Тен, хăçан та пулин...*

*(В. Тарават)*

**10. Ыйту (ĕç).**

Юратнă вĕрентекенĕре халалласа пĕр е икĕ çавраллă сăвă çырăр.

***Регионсем хушшинче иртекен***
***чăваш чĕлхипе литература олимпиади***
***2023-мĕш çул***

***11-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.**

*Тӳпере яшка çинчи сурăх çăвĕ пек çӳхе пĕлĕтсем çакăнкаласа тăраççĕ. Унта та кунта тĕттĕм-кăвак пĕлĕтсем тухса выртнă, шăваççĕ, таçта васкаççĕ. Çап-çутă кăвак вырăнсем те пур-ха та... Эпир хуларан тухса кайиччен ан çутăрахчĕ ĕнтĕ çумăрĕ.*

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстра темиçе хут тĕл пулакан ***та*** сăмах пĕр-пĕринпе омонимлă пулнине (е пулманнине) ĕнентерĕр.

**Хурав.**

Текстра темиçе хут тĕл пулакан ***та*** сăмах пĕр-пĕринпе омонимлă, мĕншĕн тесен вĕсем пĕр пек илтĕнеççĕ, анчах тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ:

***та*** – союз (*унта* ***та*** *кунта*), ***та*** – татăк (*пур-ха* ***та***).

**2. Ыйту (ĕç).**

Орфографи тĕлĕшĕнчен йăнăш çырнă сăмаха тупăр та тӳрлетсе çырăр, мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр.

**Хурав.**

тĕттĕм кăвак, паллă ячĕ пулать.

**3. Ыйту (ĕç).**

Хутлă предложение (хутлă предложенисене) çырса илĕр, тĕсне палăртăр, пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре кăтартăр.

**Хурав.**

*Эпир хуларан тухса кайиччен ан çутăрахчĕ ĕнтĕ çумăрĕ.*

Пăхăнуллă хутлă предложени, çыхăну хатĕрĕ – ***-иччен*** аффикс.

**4. Ыйту (ĕç).**

Текстра глаголтан пулăннă япала ятне тупăр та пуçламăш формăра çырăр, тытăмне (тымарне, аффиксне, тĕпне) палăртăр.

**Хурав.**

çумăр

*çу* (тымар) + *-мăр* (аффикс), сăмах тĕпĕ – *çумăр.*

**5. Ыйту (ĕç).**

Ултă сас паллирен тăракан сăмах тăвăр. Çав сăмаха тума ыйтусене хуравлăр:

1) *Кукăль, чие, тухьяллă, туссем, хуть, туя, халь, июль, çемьеллĕ, кăсăя.* Çак сăмахсенчен хăшĕнче сасăсемпе сас паллисен шучĕ пĕр тан? Çав сăмахăн пĕрремĕш сас паллине çырăр.

2) *Палиндром, фразеологизм, омоним, калька, аванкамера, ротацизм, синоним, ассимиляци.* Çак сăмахсенчен хăшĕ чĕлхе терминĕ мар? Çав сăмахăн иккĕмĕш сас паллине çырăр.

3) ***Наян*** сăмахăн антонимне тупăр та тăваттăмĕш сас паллине çырăр.

4) *Пушкăрт, чăваш, азербайджан, казах, мари, туркмен, турккă, узбек.* Çаксенчен хăшĕ тĕрĕк чĕлхисен ушкăнне кĕмест? Çав сăмахăн виççĕмĕш сас паллине çырăр.

5) *Пĕр ..... – пĕр ăс, ик ..... – икĕ ăс.* Çак ваттисен сăмахĕнчи точкăсем вырăнне кирлĕ сăмах тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр.

6) ***Авал*** сăмахăн синонимне тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр.

Мĕнле сăмах пулнине çырăр, ăна вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

1) Июль – И
2) Аванкамера – К
3) Ĕçчен – Е
4) Мари – Р
5) Чĕлхе – Ч
6) Ĕлĕк – Ĕ
ИКЕРЧĔ (икерчĕ) – блины (оладьи).

Митта Ваçлейĕн «Атăл юрри» сăввине вулăр та 6–9-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.

*Ачаш ача пек Атăл ирхине:*
*Ăш çил лăпкать, вăл тутлăн анаслать...*
*Вăран, савни! Уç чатăр аркине,*
*Мал ен сана хаваслăн саламлать!*

*Ĕçри ĕçчен пек Атăл кăнтăрла:*
*Вылять ун çийĕн тĕтĕм те ăрша...*
*Кунта мухтавлă тинĕс пулмалла,*
*Эппин ĕçлер-и, тусăм, тăрăшса!*

*Пуса каччи пек Атăл каçхине:*
*Юрлать, ташлать, кăшт хĕрĕнкĕ курнать...*
*Мĕн пулчĕ, тусăм, санăн киммӳне,*
*Çут уйăх çулĕнчен ма пăрăнать?*

*Çулри юлташ пек Атăл сĕм çĕрле:*
*Инçе-инçе чĕнеççĕ çутисем...*
*Çитер, савни, пĕр тухнă çĕрелле,*
*Эпир – пулас Мăн тинĕс хуçисем!*

**6. Ыйту (ěç).**

Сăвă темипе тěп шухăшне палăртăр.

**Хурав.**

Тема – Атăла кун йěркипе, этем пурнăçěпе танлаштарса сăнлани.

Идея – этемпе çутçанталăк çураçура.

**7. Ыйту.**

Çак тěслěхсем měнле илемлěх мелě пулаççě?

*Пуса каччи пек Атăл каçхине –*
*Мăн тинěс хуçи –*
*Вылять ун çийěн тěтěм те ăрша –*
*Çут уйăх –*
*Вăран, савни! –*

**Хурав.**

*Пуса каччи пек Атăл каçхине* – танлаштару
*Мăн тинěс хуçи* – метафора
*Вылять ун çийěн тěтěм те ăрша* – сăпатлантару
*Çут уйăх* – эпитет
*Вăран, савни!* – риторикăлла чěнӳ

**8. Ыйту (ěç).**

Сăвă виçине тата карт шутне палăртăр.

**Хурав.**

Ямб, пилěк картлă.

**9. Ыйту (ěç).**

«Çитер, савни, пěр тухнă çěрелле, эпир – пулас Мăн тинěс хуçисем!» йěркесене Эсир měнле ăнланатăр? Хăвăр шухăшăра сочинени-шухăшлав евěр çырса пěлтерěр.

**10. Ыйту (ĕç).**

Чăвашла куçарăр:

*Девушку с недавних пор мучило неопределенное состояние: появились какие-то сложные настроения, не испытанные прежде чувства. Откуда они, зачем? Было ясно только одно – кончилось детство, бездумное, бестревожное.*

*В детстве душа напоминает зеленый гороховый стручок: лежат в нем еще неспелые чувства и переживания, пока еще слабенькие. Им уютно и спокойно в колыбели. Но вот приходит время, горошины растут, заполняя стручок. И вдруг лопнули створки, разлетелись горошины…*

*Такое и случилось с Тамарой, и ее «горошины» поспели, выкатились из стручка-души. Кто их соберет, посеет в добрую землю, чтобы не сгнили под ненастным дождем, не пропали в зобу жадной птицы…*

*(Ю. Скворцов)*

**Хурав.**

Хĕре темле йывăр шухăш-кăмăл, халиччен тӳссе курман туйăм асаплантарчĕ. Ăçтан вĕсем, мĕн тума? Пĕр пулăм çеç паллă – шухăшсăр та канăçлă ачалăх вĕçленчĕ.

Ача чухнехи чун ешĕл пăрçа хутаççине аса илтерет: унта туйăмсем пиçсе çитеймен-ха. Вăй илейменскерсене сăпкара питех те канлĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн вара пăрçа пĕрчисем хутаçа тултарса хураççĕ. Пăрçа хутаççи çурăлса каять, пĕрчисене аякалла сапалать…

Тамарăпа та çавăн пек пулчĕ, ун чунĕнчи «пăрçа» та пиçсе çитрĕ, хутаçран тăкăнса сапаланчĕ. Вĕсене кам пухĕ, йĕпе-сапаллă çумăр айĕнче çĕрсе ан кайччăр, çăткăн кайăксен çăварне ан кĕччĕр тесе кам ырă вырăна акĕ…

*(Ю. Скворцов)*

***Регионсем хушшинче иртекен***
***чăваш чĕлхипе литература олимпиади***
***2024-мĕш çул***

***9-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Сăмахсене вулăр:

кĕт, юлташлă, тымар, кĕçĕр, никам, ĕлĕк, эреш, нарăс, ăнкаратăп, мĕншĕн, ĕмĕр, каçчен, пилĕк, алăк, мăй, пукане, тиха, илем, чăрăш.

Çак сăмахсенчен вуннăшне суйласа илсе ярăм (сăнчăр) тăвăр, ярăмри кашни сăмахăн вĕçĕнчи сасси хăй хыççăн вырнаçнă сăмах пуçламăшĕнчи сасăпа пĕрешкел пултăр. Ярăма ***кĕт*** сăмахран пуçлăр.

**Хурав.**

кĕт, тиха, алăк, каçчен, никам, мăй, юлташлă, ăнкаратăп, пукане, эреш.

**2. Ыйту (ĕç).**

Ваттисен сăмахĕсенчен йĕркеленĕ ыйтуллă предложенисене хуравласа çырăр.

1) Кам вакка сикнĕ тет?
2) Мĕн сакки сарлака?
3) Кам сăмахĕ хыççăн ан çӳре?
4) Мĕн куçлă, мĕн хăлхаллă?
5) Мĕнле яшка сивĕтмест, мĕнле сăмах сивĕтет?

**Хурав.**

1)Васкакан вакка сикнĕ тет.
2) Ĕмĕр сакки сарлака.
3) Çын сăмахĕ хыççăн ан çӳре.
4) Уй куçлă, вăрман хăлхаллă.
5) Сивĕ яшка сивĕтмест, сивĕ сăмах сивĕтет.

**3. Ыйту (ĕç).**

Тĕслĕхсене вулăр. Паллă тунă сăмахсен синонимне тупăр, вырăсла куçарăр.

1) Кĕрсе курăнса çӳремелле марччĕ ку ***карчамас*** патне.

2) ***Катаччи*** те кашни кунах килĕшмест.

3) Çĕр ***сум*** пуличчен çĕр тус пултăр.

4) Тăрăш, чунна парса ĕçле, пулать-пулатех хăçан та пулсан ***пайти***.

5) Кăвак юманăн сĕтеклĕ шывне юхтарса ĕлĕк-авал ***им*** тунă имĕш.

**Хурав.**

1) ***карчамас*** – питĕ ватă (карчăк, ватăлса çитнĕ хĕрарăм) – престарелая, старуха.

2) ***катаччи*** – çунапа (çунашкапа) ярăнни, катание (на санях).

3) ***сум*** – укçа (тенкĕ), рубль.

4) ***пайти*** **–** усă (усси), польза.

5) ***им*** – эмел, лекарство.

**4. Ыйту (ĕç).**

Текста вулăр, орфографи тĕлĕшĕнчен йăнăш çырнă сăмаха (сăмахсене) тупăр, тӳрлетсе çырăр.

Кăнтăрларан тӳпере çĕлĕк пысăккăш кăтра пĕлĕтсем курăнкалама тапратрĕç. Вĕсем паян, ытти чухнехилле, юр чăмакисем ăшă йухăма лекнĕ евĕр, ирĕле-ирĕле каймаççĕ, ӳссе пыракан кăпăк катрамĕсем майлă мăнăланнă çемĕн мăнăланса пыраççĕ. Таврари йывăç-курăк шăпăрт ларать. Шăрăх çанталăка пула пахчари чечексем пĕчĕк варинке пек пĕрĕннĕ, типме пуçланă, тĕл-тĕл тĕссĕрленнĕ. Çерем çинчи сар çеçке те çулçисене пуçтарнă. Хĕвел пушшех хытă çунтарать.

**Хурав.**

пысăккăш – пысăкăш

чăмакисем – чăмаккисем

йухăма – юхăма

мăнăланнă  çемĕн – мăнăланнăçемĕн

варинке – варинкке

**5. Ыйту (ĕç).**

Тăваттăмĕш ыйтури текстран хутлă предложение (хутлă предложенисене) тупса тĕрĕс çырса илĕр, тĕсне палăртăр, пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре кăтартăр.

**Хурав.**

Вĕсем паян, ытти чухнехилле, юр чăмаккисем ăшă юхăма лекнĕ евĕр, ирĕле-ирĕле каймаççĕ, ӳссе пыракан кăпăк катрамĕсем майлă мăнăланнăçемĕн мăнăланса пыраççĕ.

Пăхăнуллă хутлă предложени, çыхăну хатĕрĕ – ***евĕр*** хыççăмах.

**6. Ыйту.**

Каланă шухăша тата сăнарлăха вăйлатас тĕллевпе усă куракан виçесĕр ӳстерсе кăтартас меле мĕнле терминпа палăртаççĕ?

**Хурав.**

Гипербола.

**7. Ыйту.**

Кам çинчен сăмах пырать-ши?

*Кăçал вăл çуралнăранпа 110 çул çитрĕ. Поэт лирик, куçаруçă, публицист. Хăй псевдонимне ятпа хушаматри сыпăксенчен тунă. Паллă хайлавĕсем çаксем: «Сывлăм йĕрĕ юлчĕ çырура…», «Киркка Иленĕ», «Чемей пăлхавĕ».*

**Хурав.**

Иван Ивник.

**8. Ыйту.**

Ухсай Яккăвĕ хăш хайлавĕнче чăваш яш-кĕрĕмĕпе хĕр упраçне Надежда Павлова, Андриян Николаев, Аркадий Айдак пек ĕçчен, маттур, таса ĕмĕтлĕ пулма пиллет?

**Хурав.**

«Атте-анне» поэминче.

**9. Ыйту (ĕç).**

Чăвашла куçарăр:

*Воробушек Чик-чирик*

*Яркое весеннее солнце щедро дарило свое ласковое тепло жителям осиновой рощи – воробьиной семье: воробушку Чик-чирик, его маме-воробьихе и папе-воробью. Чик-чирик был единственным птенчиком в своей семье, конечно же, малыша родители очень любили и часто баловали. Однажды Чик-чирик решил погулять по роще, а так как хорошо летать он еще не научился, то отправился на прогулку вприпрыжку.*

*– Чик-чирик! Как красиво! – удивлялся он, глядя на зеркальную гладь озера, на плывущее по нему отражение неба.*

*Вот отражение солнца плещется, чуть подальше игривые облака купаются.*

*(Е. Долгова)*

**Хурав.**

*Чив-чив çерçи чĕппи*

*Çурхи çутă хĕвел ăвăс рашчинче пурăнакансене – çерçи çемйине ăшă кăмăл парнелет: Чив-чив çерçи чĕппине, унăн амăшне тата ашшĕне. Чив-чив  çемьери пĕртен-пĕр чĕпĕ пулнă. Ăна ăна ашшĕ-амăшĕ питĕ юратнă, çавăнпа часчасах ашкăнма те ирĕк панă. Пĕррехинче Чив-чив рашча*

*тӑрӑх уҫӑлма ҫӳреме шут тытнӑ, анчах хӑй лайӑх вӗҫме вӗренеймен пирки уҫӑлса сиккелесе тухса кайнӑ.*

*– Чив-чив! Епле илемлӗ! – тӗлӗннӗ вӑл тӗкӗр пек яка кӳлӗ ҫине, ун тӑрӑх шуса пыркан пӗлӗт ҫине пӑхса.*

*Акӑ хӗвел ҫути чӳхенет, кӑшт аяккарахра вылянчӑк пӗлӗтсем шыва кӗреҫҫӗ.*

*(Е. Долгова)*

**10. Ыйту (ӗҫ).**

«Килӗштерсе пурӑнакан ҫемьешӗн пурнӑҫ йывӑрлӑхӗ хӑрушӑ мар» темӑпа сочинени-шухӑшлав ҫырӑр.

***Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади 2024-мĕш çул***

***10-мĕш класс (чăваш шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Сăмахсене вулăр:

кĕт, эреш, пăт, аяк, мăшăрлă, чее, çумăр, вăйă, кĕçĕр, никам, ĕшне, ăнланатăп, пĕлĕш, тĕлĕн, юрла, шăпăрт, сасă, куллен, туй.

Çак сăмахсенчен вуннăшне суйласа илсе ярăм (сăнчăр) тăвăр, ярăмри кашни сăмахăн вĕçĕнчи сасси хăй хыççăн вырнаçнă сăмах пуçламăшĕнчи сасăпа пĕрешкел пултăр. Ярăма ***кĕт*** сăмахран пуçлăр.

**Хурав.**

кĕт, тĕлĕн, никам, мăшăрлă, ăнланатăп, пăт, туй, юрла, аяк, куллен.

**2. Ыйту (ĕç).**

Ваттисен сăмахĕсенчен йĕркеленĕ ыйтуллă предложенисене хуравласа çырăр.

1) Мĕн иртет, кун юлать?

2) Мĕнле хыпар утпа çурет?

3) Ват çын – миçе çын?

4) Мĕн хăрать те, ал тăвать?

5) Курман, илтмен – миçе сăмах?

**Хурав.**

1) Ĕмĕр иртет, кун юлать.

2) Усал хыпар утпа çӳрет.

3) Ват çын – тăват çын.

4) Куç хăрать те, ал тăвать.

5) Курман, илтмен – пĕр сăмах.

**3. Ыйту (ĕç).**

Тĕслĕхсене вулăр. Паллă тунă сăмахсен синонимне тупăр, вырăсла куçарăр.

1) Кĕрсе курăнса çӳремелле марччĕ ку ***карчамас*** патне.

2) ***Катаччи*** те кашни кунах килĕшмест.

3) Çĕр ***сум*** пуличчен çĕр тус пултăр.

4) Тăрăш, чунна парса ĕçле, пулать-пулатех хăçан та пулсан ***пайти***.

5) Кăвак юманăн сĕтеклĕ шывне юхтарса ĕлĕк-авал ***им*** тунă имĕш.

**Хурав.**

1) ***карчамас*** – питĕ ватă (карчăк, ватăлса çитнĕ хĕрарăм) – престарелая, старуха.

2) ***катаччи*** – çунапа (çунашкапа) ярăнни, катание (на санях).

3) ***сум*** – укçа (тенкĕ), рубль.

4) ***пайти*** – усă (усси), польза.

5) ***им*** – эмел, лекарство.

**4. Ыйту (ĕç).**

Текста вулăр, орфографи тĕлĕшĕнчен йăнăш çырнă сăмаха (сăмахсене) тупăр, тӳрлетсе çырăр.

Тӳпери сăнсем шав улшăнса тăраççĕ. Уйрăмах аякри пĕр кăтра шурă пĕлĕт хăйне ыттисенчен раснарах тыткалать: таткаланать, айăн-çийĕн çаврăнкалать, тĕксĕм-кăвак тинĕсре шыв айĕнчен хăпарса пыракан пăр катрамĕ евĕр, мăнăланнă çемĕн мăнăланать. Çил тăвăл тапраннине кура тӳпери çумăр пĕлĕчĕ те темиçе сийлĕн тĕрлĕ еннелле куçкаласа тăрать. Пĕр хушă кăнтăр енчен варкăшса тăчĕ, унтан çур çĕрелле суллăнчĕ, кайран анăçалла куçрĕ.

**Хурав.**

тĕксĕм-кăвак – тĕксĕм кăвак

мăнăланнă  çемĕн – мăнăланнăçемĕн

çил тăвăл – çил-тăвăл

çур çĕрелле – çурçĕрелле
сулланчĕ – суланчĕ

**5. Ыйту (ĕç).**

Тăваттăмĕш ыйтури текстран хутлă предложение (хутлă предложенисене) тупса тĕрĕс çырса илĕр, тĕсне палăртăр, пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре кăтартăр.

**Хурав.**

Çил-тăвăл тапраннине кура тӳпери çумăр пĕлĕчĕ те темиçе сийлĕн тĕрлĕ еннелле куçкаласа тăрать.

Пăхăнуллă хутлă предложени, çыхăну хатĕрĕ – ***кура*** хыççăмах.

**6. Ыйту.**

Сăвăра пĕр йышши уçă сасăсем янăранине мĕнле терминпа палăртаççĕ?

**Хурав.**

Ассонанс.

**7. Ыйту.**

Кам çинчен сăмах пырать-ши?

*Вăл – «Кăмăл» тата «Кăмăлтан» кĕнекесен авторĕ. Унăн пурнăçĕпе пултарулăхĕ XX ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенчи репрессин пĕтĕм синкерлĕхне кăтартать, мĕншĕн тесен вăл хăй пурнăçĕн вун çичĕ çулне тĕрлĕ лагерьсемпе тĕрмесенче ларса çухатнă. Çапах та чун тасалăхне, кăмăл паттăрлăхĕпе вăйне сыхласа хăварнă, чăваш халăхĕн патриочĕ пулса юлнă.*

**Хурав.**

Митта Ваçлейĕ.

**8. Ыйту.**

Николай Ишентей хайлавӗнчи тӗп сӑнар – Петюк – мӗнле вӗҫен кайӑка пула «р» сас палли калама хӑнӑхать?

**Хурав.**

Шӑнкӑрч.

**9. Ыйту (ӗҫ).**

Чӑвашла куҫарӑр:

*Воробушек Чик-чирик*

*Яркое весеннее солнце щедро дарило свое ласковое тепло жителям осиновой рощи – воробьиной семье: воробушку Чик-чирик, его маме-воробьихе и папе-воробью. Чик-чирик был единственным птенчиком в своей семье, конечно же, малыша родители очень любили и часто баловали. Однажды Чик-чирик решил погулять по роще, а так как хорошо летать он еще не научился, то отправился на прогулку вприпрыжку.*

*– Чик-чирик! Как красиво! – удивлялся он, глядя на зеркальную гладь озера, на плывущее по нему отражение неба.*

*Вот отражение солнца плещется, чуть подальше игривые облака купаются, а совсем близко мохнатые ели свои колючки полощут. Разглядывая чудные картинки на поверхности воды, у самого края озера Чик-чирик нашел свое отражение – махонькое пушистое существо. Он внимательно рассмотрел его и понял, что это его собственное отражение.*

*(Е. Долгова)*

**Хурав.**

*Чив-чив ҫерҫи чӗппи*

*Ҫурхи ҫутӑ хӗвел ӑвӑс рашчинче пурӑнакансене – ҫерҫи ҫемйине ӑшӑ кӑмӑл парнелет: Чив-чив ҫерҫи чӗппине, унӑн амӑшне тата ашшӗне. Чив-чив ҫемьери пӗртен-пӗр чӗпӗ пулнӑ. Ӑна ӑна ашшӗ-амӑшӗ питӗ юратнӑ, ҫавӑнпа час-*

*часах ашкăнма те ирĕк панă. Пĕррехинче Чив-чив рашча тăрăх уçăлма çӳреме шут тытнă, анчах хăй лайăх вĕçме вĕренеймен пирки уçăлса сиккелесе тухса кайнă.*

*– Чив-чив! Епле илемлĕ! – тĕлĕннĕ вăл тĕкĕр пек яка кӳлĕ çине, ун тăрăх шуса пыркан пĕлĕт çине пăхса.*

*Акă хĕвел çути чӳхенет, кăшт аяккарахра вылянчăк пĕлĕтсем шыва кĕреççĕ, çывăхрах лапсăркка чăрăшсем хăйсен йĕпписене чӳхеççĕ. Шыв çийĕнчи тĕлĕнмелле ӳкерчĕксене пăхса Чив-чив кӳлĕ хĕрринче çĕнĕ мĕлке – мамăклă пĕчĕк чĕрчун тупрĕ. Вăл ăна тинкерсе пăхрĕ те ку хăйĕн мĕлки пулнине ăнланчĕ.*

*(Е. Долгова)*

**10. Ыйту (ĕç).**

«Килĕштерсе пурăнакан çемьешĕн пурнăç йывăрлăхĕ хăрушă мар» темăпа сочинени-шухăшлав çырăр.

***Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади 2024-мĕш çул***

***11-мĕш класс (чăваш шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Сăмахсене вулăр:

кĕт, вăлта, илемлĕ, канаш, ниме, лайăх, хăйма, нарăс, ĕненетĕп, пукане, рет, ăраскал, юрлатăп, эпĕ, салам, тантăш, пĕрмаях, телей, ачалăхĕн, хĕвел.

Çак сăмахсенчен вуннăшне суйласа илсе ярăм (сăнчăр) тăвăр, ярăмри кашни сăмахăн вĕçĕнчи сасси хăй хыççăн вырнаçнă сăмах пуçламăшĕнчи сасăпа пĕрешкел пултăр. Ярăма кĕт сăмахран пуçлăр.

**Хурав.**

кĕт, телей, юрлатăп, пукане, эпĕ, ĕненетĕп, пĕрмаях, хăйма, ачалăхĕн, ниме.

**2. Ыйту (ĕç).**

Ваттисен сăмахĕсенчен йĕркеленĕ ыйтуллă предложенисене хуравласа çырăр.

1) Мĕнле çерçие хывăхпа улталаймăн?

2) Мĕнле сăмахăн суййи çук?

3) Хăçан тăракан кайăк тутă пулнă?

4) Мĕнле пичке туллинчен хытăрах янăрать?

5) Мĕнле каска якалать, мĕнле каска мăкалать?

**Хурав.**

1) Ват çерçие хывăхпа улталаймăн.

2) Чăн сăмахăн суййи çук.

3) Ир тăракан кайăк тутă пулнă.

4) Пуш пичке туллинчен хытăрах янăрать.

5) Çӳрен каска якалать, выртан каска мăкалать.

**3. Ыйту (ĕç).**

Тĕслĕхсене вулăр. Паллă тунă сăмахсен синонимне тупăр, вырăсла куçарăр.

1) Кĕрсе курăнса çӳремелле марччĕ ку ***карчамас*** патне.

2) ***Катаччи*** те кашни кунах килĕшмест.

3) Çĕр ***сум*** пуличчен çĕр тус пултăр.

4) Тăрăш, чунна парса ĕçле, пулать-пулатех хăçан та пулсан ***пайти***.

5) Кăвак юманăн сĕтеклĕ шывне юхтарса ĕлĕк-авал ***им*** тунă имĕш.

**Хурав.**

1) ***карчамас*** – питĕ ватă (карчăк, ватăлса çитнĕ хĕрарăм) – престарелая, старуха.

2) ***катаччи*** – çунапа (çунашкапа) ярăнни, катание (на санях).

3) ***сум*** – укçа (тенкĕ), рубль.

4) ***пайти*** – усă (усси), польза.

5) ***им*** – эмел, лекарство.

**4. Ыйту (ĕç).**

Текста вулăр, орфографи тĕлĕшĕнчен йăнăш çырнă сăмаха (сăмахсене) тупăр, тӳрлетсе çырăр.

Вăрманта ырă шăршă саракан чечексем чылай курăнма пуçларĕç. Йывăçсем çулçă кăларайман пирки тавралăх инçете уçăнах курăнать. Вăрăм хăлха çакки евĕр шĕшкĕ кăчкисем çилпе силленеççĕ, хăйсен йĕри таврашĕнчи çĕр çине сарă тусан вĕçтереççĕ. Лере, юр айĕнчен тухнă кальчасен тинĕсĕ хĕрринче, чĕтрев çулçăллă ăвăслăх тĕксĕм-кăвак тĕслĕн курăнать. Вăрманти тавралăх шăплăхран та шăпрах сасăпа, хăлхана мар, чуна çеç илтĕнекен темĕнле сасăпа юрă юрлать, юрланă çемĕн пăшăлтатса калаçать.

**Хурав.**

уçăнах = уççăнах
йĕри таврашĕнчи = йĕри-таврашĕнчи
кальчасен = калчасен
тĕксĕм-кăвак = тĕксĕм кăвак
юрланă çемĕн = юрланăçемĕн

**5. Ыйту (ĕç).**

Тăваттăмĕш ыйтури текстран хутлă предложение (хутлă предложенисене) тупса тĕрĕс çырса илĕр, тĕсне палăртăр, пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре кăтартăр.

**Хурав.**

Йывăççем çулçă кăларайман пирки тавралăх инçете уççăнах курăнать.

Пăхăнуллă хутлă предложени, çыхăну хатĕрĕ – ***пирки*** хыççăмах.

**6. Ыйту (ĕç).**

Мĕн вăл эпопея роман? Çак жанрпа тухăçлă ĕçленĕ чăваш çыравçисене асăнăр, хайлав ячĕсене те çырăр.

**Хурав.**

Эпопея роман тесе халăх пурнăçĕпе историйĕн хĕрӳ, пĕлтерĕшлĕ вăхăтне анлăн сăнарласа паракан пысăк эпикăлла жанра калаççĕ. Кунта шутласа кăларнă сăнарсем, вĕсен пурнăçĕ чăн истори ĕçĕсемпе пĕрлешсе каяççĕ.

Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр», С. Асланăн «Аслă çул», Хв. Уярăн «Шурча таврашĕнче», К. Турханăн «Йăмраллă ял», В. Иванов-Пайменăн «Кĕпер» хайлавĕсем т.ыт.те çак жанра кĕреççĕ.

**7. Ыйту.**

Хăш çыравçă çинчен сăмах пырать-ши?

*Вăл чăваш драматургине XX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче кĕнĕ. К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче актер, каярах литература пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ. Драматургири тĕрлĕ жанра ăнăçлă алла илнĕ.*

*«РСФСР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ», «Чăваш халăх писателĕ» хисеплĕ ятсене тивĕçнĕ çыравçă пултарулăхĕ «Сирень аллейи», «Çĕрпе хĕр» т.ыт.те хайлавсемпе паллă.*

**Хурав.**

Николай Терентьев.

**8. Ыйту (ĕç).**

Петĕр Эйзинăн «Чĕвĕл кăна чĕкеç пулнă пулсан» сăввине аса илĕр. Лирика геройĕ чĕкеç пулнă пулсан мĕн-мĕн тунă пулĕччĕ-ши?

**Хурав.**

«Сирĕн пӳртĕр çумне йăва тăвăттăм…»

«Сирĕн пӳртĕр çине ларса юрлăттăм…»

**9. Ыйту (ĕç).**

Чăвашла куçарăр:

*Воробушек Чик-чирик*

*Яркое весеннее солнце щедро дарило свое ласковое тепло жителям осиновой рощи – воробьиной семье: воробушку Чик-чирик, его маме-воробьихе и папе-воробью. Чик-чирик был единственным птенчиком в своей семье, конечно же, малыша родители очень любили и часто баловали. Однажды Чик-чирик решил погулять по роще, а так как хорошо летать он еще не научился, то отправился на прогулку вприпрыжку.*

*– Чик-чирик! Как красиво! – удивлялся он, глядя на зеркальную гладь озера, на плывущее по нему отражение неба.*

*Вот отражение солнца плещется, чуть подальше игривые облака купаются, а совсем близко мохнатые ели свои колючки полощут. Разглядывая чудные картинки на поверхности воды, у самого края озера Чик-чирик нашел свое отражение – махонькое пушистое существо. Он внимательно рассмотрел его и понял, что это его собственное отражение.*

*– Чик-чирик! Какой я красавец! – обрадовался воробышек своему отражению.*

*– Кря-кря! Кря-кря! – засмеялся кто-то рядом.*

*– Чик-чирик! Ой, кто это? Кто тут смеется?*

*– Кря-кря! Это я, я – утенок Кря-кря.*

*(Е. Долгова)*

**Хурав.**

*Чив-чив çерçи чĕппи*

*Çурхи çутă хĕвел ăвăс рашчинче пурăнакансене – çерçи çемйине ăшă кăмăл парнелет: Чив-чив çерçи чĕппине, унăн амăшне тата ашшĕне. Чив-чив çемьери пĕртен-пĕр чĕпĕ пулнă. Ăна ăна ашшĕ-амăшĕ питĕ юратнă, çавăнпа часчасах ашкăнма те ирĕк панă. Пĕррехинче Чив-чив рашча тăрăх уçăлма çӳреме шут тытнă, анчах хăй лайăх вĕçме вĕренеймен пирки уçăлса сиккелесе тухса кайнă.*

*– Чив-чив! Епле илемлĕ! – тĕлĕннĕ вăл тĕкĕр пек яка кӳлĕ çине, ун тăрăх шуса пыркан пĕлĕт çине пăхса.*

*Акă хĕвел çути чӳхенет, кăшт аяккарахра вылянчăк пĕлĕтсем шыва кĕреççĕ, сывăхрах лапсăркка чăрăшсем хăйсен йĕпписене чӳхеççĕ. Шыв çийĕнчи тĕлĕнмелле ӳкерчĕксене пăхса Чив-чив кӳлĕ хĕрринче çĕнĕ мĕлке – мамăклă пĕчĕк чĕрчун тупрĕ. Вăл ăна тинкерсе пăхрĕ те ку хăйĕн мĕлки пулнине ăнланчĕ.*

*– Чив-чив! Епле илемлĕ эпĕ! – çерçи чĕппи хăй сăнне курса савăнчĕ.*

*– Нарт-нарт! Нарт-нарт! – юнашарах такам кулса ячĕ.*

*– Чив-чив! Эй, кам ку? Кам кулать кунта?*

*– Нарт-нарт! Эпĕ ку, эпĕ – Нарт-нарт кăвакал чĕппи.*

*(Е. Долгова)*

**10. Ыйту (ĕç).**

«Килĕштерсе пурăнакан çемьешĕн пурнăç йывăрлăхĕ хăрушă мар» темăпа сочинени-шухăшлав çырăр.

***Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади 2019-мĕш çул***

***9-мĕш класс (вырăс шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Чĕлхе терминĕсене вырăсла куçарса çырăр:

ăнлантару словарĕ, çармăс чĕлхи, хурăнташ чĕлхе, сăпатсăр форма, шут хисеп ячĕ.

**Хурав.**

*ăнлантару словарĕ* – толковый словарь

*çармăс чĕлхи* – марийский язык

*хурăнташ чĕлхе* – родственный язык

*сăпатсăр форма* – безличная форма

*шут хисеп ячĕ* – количественное числительное.

**2. Ыйту (ĕç).**

*Лутра чӳрече куçĕсем хулăн пăрпа витĕннĕ.*

Çак предложенирен паллă ятне (паллă ячĕсене) çырса илĕр, антонимĕсене тупăр.

**Хурав.**

Лутра – çӳллĕ, хулăн – çӳхе (çинçе).

**3. Ыйту (ĕç).**

Тăватă сасăран тăракан сăмах тăвăр. Çав сăмаха тума:

1) *каясшăн* сăмахри виççĕмĕш сасса илĕр;

2) *трактор* сăмахри улттăмĕш сасса илĕр;

3) *ялта* сăмахри виççĕмĕш сасса илĕр;

4) *туять* сăмахри тăваттăмĕш сасса илĕр.

Мĕнле сăмах пулнине çырăр та унпа усă курса мăшăр сăмах тăвăр.

**Хурав.**

ЙĂЛА (йăла):

1) *каясшăн* – **й**;

2) *трактор* – **ă**;

3) *ялта* – **л**;
4) *туять* – **а**.

Мăшăр сăмах – йăла-йĕрке.

**4. Ыйту (ĕç).**
Вырăсла куçарăр:
*сарă тулă, сар çу, сар улма, сар тут, сар çип ути.*
**Хурав.**
сарă тулă – золотая пшеница
сар çу – топленое масло
сар улма – наливное яблоко
сар тут – веснушки
сар çип ути – зверобой.

**5. Ыйту (ĕç).**
Пĕр тымартан пулăннă сăмахсене çырса илĕр:
*кулуар, кулач, кулă, мускул, кулăш, куллен, култар, кулинар, кулян, култармăш, кулăшлан.*
**Хурав.**
Пĕр тымартан пулăннă сăмахсем:
*кулă, кулăш, култар, култармăш, кулăшлан.*

**6. Ыйту (ĕç).**
Хула ячĕсене вырăсла куçарăр:
*Ĕпхӳ, Сĕве хули, Теччĕ, Чулхула, Пăва.*
**Хурав.**
Ĕпхӳ – Уфа
Сĕве хули – Свияжск
Теччĕ – Тетюши
Чулхула – Нижний Новгород
Пăва – Буинск.

**7. Ыйту (ĕç).**
Кирлĕ çĕрте чарăну паллисем лартса çырса илĕр.
Шăпчăкĕ юрлать те юрлать пурне те хăйпе пĕрле савăнтарать шухăша ярать пĕрре вăрăммăн та салхуллăн

шăхăра-шăхăра тем калать тепре хавассăн та çивĕччĕн чĕриклетет унтан тем пирки кăшт тунсăхласа чарăнса илет те каллех кĕвĕлеме пуçласа çынсене уçă сассипе савăнтарма пуçлать.

**Хурав.**

Шăпчăкĕ юрлать те юрлать, пурне те хăйпе пĕрле савăнтарать, шухăша ярать, пĕрре вăрăммăн та салхуллăн шăхăра-шăхăра тем калать, тепре хавассăн та çивĕччĕн чĕриклетет, унтан тем пирки кăшт тунсăхласа чарăнса илет те каллех кĕвĕлеме пуçласа çынсене уçă сассипе савăнтарма пуçлать.

**8. Ыйту (ĕç).**

Хупă сасăсен янăравлăхне мĕнле терминпа палăртаççĕ? Уçă сасăсен янăравлăхне мĕнле калаççĕ? Илемлĕ сăмахлăхри тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр.

**Хурав.**

Хупă сасăсен янăравлăхне аллитераци теççĕ, уçă сасăсен янăравлăхне ассонанс теççĕ.

**9. Ыйту (ĕç).**

Сăвă виçине тупăр:

*Çĕр-шывăм хĕвеллĕн çуталĕ,*
*Тапранĕ кăвар кайăкла.*
*Кам хирĕç калаçĕ, – улталĕ,*
*Кам «мар» тет, ун чунĕ чăлах.*

*(Çеçпĕл Мишши)*

**Хурав.**

Амфибрахи.

**10. Ыйту (ĕç):**

«*Чăваш çынни кал-кал пурăнтăр, татах та илемлĕрех те пуянрах чунлă пултăр тесе халăх пĕтĕм вăйне парать. Çак кăткăс та йывăр ĕçре театр пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк...» (Н. Терентьев)* темăпа эссе çырăр.

***Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади 2019-мĕш çул***

***10-мĕш класс (вырăс шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Чĕлхе терминĕсене вырăсла куçарса çырăр:

*тӳнтер словарь, вак хисеп ячĕ, сăпат местоименийĕ, чарăну палли, сăмах çаврăнăшĕ.*

**Хурав.**

*тӳнтер словарь* – обратный словарь

*вак хисеп ячĕ* – дробное числительное

*сăпат местоименийĕ* – личное местоимение

*чарăну палли* – знак препинания

*сăмах çаврăнăшĕ* – фразеологизм.

**2. Ыйту (ĕç).**

Пĕр тымартан пулăннă сăмахсене çырса илĕр:

*канăç, канав, канал, кану, канаш, хыткан, кантра, канлĕ, кантăк, канăçлă, канва, канарейка, канăçу, такан.*

**Хурав.**

Пĕр тымартан пулăннă сăмахсем:

*канăç, кану, канлĕ, канăçлă, канăçу.*

**3. Ыйту (ĕç).**

*Йӳçĕ те хаяр тĕтĕм куçа çиетчĕ* предложенирен паллă ятне (паллă ячĕсене) çырса илĕр, антонимĕсене тупăр.

**Хурав.**

Йӳçĕ – пылак, хаяр – йăваш.

**4. Ыйту (ĕç).**

Пилĕк сасăран тăракан сăмах тăвăр. Çав сăмаха тума:

1) *туя* сăмахри виççĕмĕш сасса илĕр;

2) *йытта* сăмахри иккĕмĕш сасса илĕр;

3) *явапла* сăмахри виççĕмĕш сасса илĕр;

4) *трактор* сăмахри улттăмĕш сасса илĕр;

5) *ерçсен* сăмахри тăваттăмĕш сасса илĕр.

Мĕнле сăмах пулнине çырăр та унпа усă курса мăшăр сăмах тăвăр.

**Хурав.**

ЙЫВĂÇ (йывăç):

1) *туя* – **й**;

2) *йытта* – **ы**;

3) *явапла* – **в**;

4) *трактор* – **ă**;

5) *ерçсен* – **ç**.

Мăшăр сăмах – йывăç-курăк.

**5. Ыйту (ĕç).**

Кирлĕ çĕрте чарăну паллисем лартса çырса илĕр.

*Чăваш вăрманĕнче çĕр çулхи патвар юмансем çемçе çăкасемпе йăвă ӳснĕ хитре вĕренесем каврăç çирĕк шĕвĕр тăрăллă чăрăш та кĕмĕл хурăн вĕсен сулхăнĕнче ӳсекен кăпчанкă шĕшкĕ юн тĕслĕ çырла ӳстерекен палан йыт çĕмĕрчĕ тем тĕрлĕ йывăç та пĕр çемьери çынсем пек шăкăл-шăкăл калаçса шĕпĕл-шĕпĕл ал çупса лараççĕ.*

**Хурав.**

Чăваш вăрманĕнче çĕр çулхи патвар юмансем, çемçе çăкасемпе йăвă ӳснĕ хитре вĕренесем, каврăç, çирĕк, шĕвĕр тăрăллă чăрăш та кĕмĕл хурăн, вĕсен сулхăнĕнче ӳсекен кăпчанкă, шĕшкĕ, юн тĕслĕ çырла ӳстерекен палан, йыт çĕмĕрчĕ – тем тĕрлĕ йывăç та пĕр çемьери çынсем пек шăкăл-шăкăл калаçса, шĕпĕл-шĕпĕл ал çупса лараççĕ.

**6. Ыйту.**

Мĕн вăл утопи?

**Хурав.**

Утопи – шухăшласа кăларнă ырă, çителĕклĕ пурнăçа ӳкерсе кăтартни.

**7. Ыйту (ĕç).**

Сăвă виçине тупăр, карт шутне палăртăр:

*Ял хĕрри укăлча. Симĕсленнĕ калча*
*Хĕвелпе пĕрлешсе йăрăм-йăрăм юхать.*
*Сыв-и, ватă юман! Кунĕпех ачапча*
*Сан туйру айĕнче туй тăвать, çуйăхать.*
*(Митта Ваçлейĕ)*

**Хурав.**

Анапест, тăвата картлă.

**8. Ыйту (ĕç).**

Кам пирки сăмах пырать? Çыравçă ячĕпе хушаматне туллин çырăр.

*«В годы учебы в художественной школе он не только систематически посещает театр, но и пробует свои силы как начинающий актер. Это помогло ему поверить в свои силы, в результате чего в самом конце 1917 года он выступил с инициативой об организации первого чувашского профессионального театра в Казани».*

**Хурав.**

Иоаким Максимов-Кошкинский.

**9. Ыйту (ĕç).**

Ф. Павловăн «Ялта» драминчи сăнарсен системине тĕрĕс палăртăр:

а) Елюк, Ванюк, Çтаппан, Палля, Пăраски;
ă) Елюк, Ванюк, Çтаппан, Йăксар, Пăрчкан;
б) Елюк, Ванюк, Çтаппан, Пăраски, Палля;
в) Елюк, Ванюк, Муççа, Йăскар, Пăрчкан.

**Хурав.**

в) Елюк, Ванюк, Муççа, Йăскар, Пăрчкан.

**10. Ыйту (ĕç):**

«*Чăваш çынни кал-кал пурăнтăр, татах та илемлĕрех те пуянрах чунлă пултăр тесе халăх пĕтĕм вăйне парать. Çак кăткăс та йывăр ĕçре театр пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк…» (Н. Терентьев)* темăпа эссе çырăр.

***Регионсем хушшинче иртекен***
***чӑваш чӗлхипе литература олимпиади***
***2019-мӗш ҫул***

***11-мӗш класс (вырӑс шкулӗ)***
***Ыйтусемпе ӗҫсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ӗҫ).**

Чӗлхе терминӗсене вырӑсла куҫарса ҫырӑр:

*вӑйлату татӑкӗ, сӑпатлану, сӑпат местоименийӗ, вӑйлӑ степень, сӑпатлантару.*

**Хурав.**

*вӑйлату татӑкӗ* – усилительная частица
*сӑпатлану* – спряжение
*сӑпат местоименийӗ* – личное местоимение
*вӑйлӑ степень* – превосходная степень
сӑпатлантару – олицетворение.

**2. Ыйту (ӗҫ).**

Пӗр тымартан пулӑннӑ сӑмахсене ҫырса илӗр:

*канӑҫ, канав, канал, кану, канаш, хыткан, кантра, канлӗ, кантӑк, канӑҫлӑ, канва, канарейка, канӑҫу, такан.*

**Хурав.**

Пӗр тымартан пулӑннӑ сӑмахсем:
*канӑҫ, кану, канлӗ, канӑҫлӑ, канӑҫу.*

**3. Ыйту (ӗҫ).**

Панӑ тӗслӗхри паллӑ тунӑ сӑмахӑн пӗлтерӗшне вырӑсла куҫарӑр, чӑвашла синонимне (синонимӗсене) тупӑр:

*Ҫак* ***путише*** *курнӑ ҫамрӑксем кайран та манран самаях тӑрӑхласа пурӑнчӗҫ.*

**Хурав.**

Путиш – комедия, потеха, забавный случай.
Синонимӗсем – мыскара, култармӑш, камит.

**4. Ыйту (ĕç).**

Пилĕк сасăран тăракан сăмах тăвăр. Çав сăмаха тума:

1) *юшкăн* сăмахри тăваттăмĕш сасса илĕр;

2) *юрату* сăмахри тăваттăмĕш сасса илĕр;

3) *туять* сăмахри виççĕмĕш сасса илĕр;

4) *трактор* сăмахри улттăмĕш сасса илĕр;

5) *яшка* сăмахри тăваттăмĕш сасса илĕр.

Мĕнле сăмах пулнине çырăр та унпа усă курса мăшăр сăмах тăвăр.

**Хурав.**

КАЙĂК (кайăк):

1) *юшкăн* – **к**;

2) *юрату* – **а**;

3) *туять* – **й**;

4) *трактор* – **ă;**

5) *яшка* – **к**.

Мăшăр сăмах – кайăк-кĕшĕк.

**5. Ыйту (ĕç).**

Кирлĕ çĕрте чарăну паллисем лартса çырса илĕр.

*Карпатăн çӳллĕ тăвĕсем те Крымăн кипарисĕсемпе пальмисем те Карелин çап-çутă кӳллисем те çук кунта тăван кĕтесĕм çапах та сан Атăлпа Сăр хушшинче вырнаçнă çĕнĕ хулусем ешĕл вăрманусем те анлă хирӳсем тунсăхланă чĕремшĕн виçесĕр хаклă.*

**Хурав.**

Карпатăн çӳллĕ тăвĕсем те**,** Крымăн кипарисĕсемпе пальмисем те**,** Карелин çап-çутă кӳллисем те çук кунта**,** тăван кĕтесĕм**,** çапах та сан Атăлпа Сăр хушшинче вырнаçнă çĕнĕ хулусем**,** ешĕл вăрманусем те анлă хирӳсем тунсăхланă чĕремшĕн виçесĕр хаклă.

**6. Ыйту.**

Мĕн вăл саламалик?

**Хурав.**

Мăн кĕрӳ сăмахĕнчи вăрăм хайлавăн пĕр пайне – халăха, çĕршыва, харкам çынсене саламласа каланă пайне – саламалик теме йышăннă.

**7. Ыйту (ĕç).**

Сăвă виçине тупăр, карт шутне палăртăр:

*Сиктермерĕн мана кĕленче сăпкара,*
*Макăрсан пыл хумарăн тута-çăвара.*
*Анчах сансăр пуçне, ыр çĕршывăм,*
*Тĕнчере чи хакли тек пур-ши вăл?*

*(Митта Васлейĕ)*

**Хурав.**

Анапест, тăвата тата виçĕ картлă.

**8. Ыйту (ĕç).**

Кам пирки сăмах пырать?

*«Его творческие удачи в освоении больших повествовательных жанровых форм – это решающие шаги к формированию и углублению романного мышления в чувашской прозе 20-30-х гг. Разнообразные приемы повествования, пластичность образов, умение сопрягать общечеловеческие и классовые ценности дали сильный толчок литературному развитию. В становлении национальный прозы он выполнил такую же миссию, которая выпала в поэзии на долю М. Сеспеля».*

**Хурав.**

Хумма Çеменĕ.

**9. Ыйту.**

А.Н. Островский çырнӑ «Не так живи, как хочется» драмӑна чӑвашла кам куçарнӑ? Драма ячӗн чӑвашла варианчӗ мӗнле?

**Хурав.**

И. Максимов-Кошкинский. «Хӑв пурӑнас килнӗ пек ан пурӑн».

**10. Ыйту (ӗç).**

«*Чӑваш çынни кал-кал пурӑнтӑр, татах та илемлӗрех те пуянрах чунлӑ пултӑр тесе халӑх пӗтӗм вӑйне парать. Çак кӑткӑс та йывӑр ӗçре театр пӗлтерӗшӗ питӗ пысӑк...» (Н. Терентьев)* темӑпа эссе çырӑр.

***Регионсем хушшинче иртекен***
***чӑваш чӗлхипе литература олимпиади***
***2020-мӗш ҫул***

***9-мӗш класс (вырӑс шкулӗ)***
***Ыйтусемпе ӗҫсем, хуравсем***

**Текста вулӑр та 1–8 ыйтусене (ӗҫсене) пурнӑҫлӑр.**

Пӗр пуян ҫын паллӑ художникран автограф вырӑнне пӗчӗк ӳкерчӗк туса пама ыйтать.

Художник вӑр-вар ӳкерет те, уншӑн пысӑк хак ыйтать.

– Пилӗк минутрах ӳкертӗн-ҫке, мӗншӗн питӗ хаклӑ, ара?

– Ҫак ӗҫе пилӗк минутра ӳкерме эпӗ пурнӑҫ тӑршшӗпех вӗрентӗм.

1. **Ыйту (ӗҫ).**

Текст содержанийӗпе килӗшӳллӗ ваттисен сӑмахӗ(сем) ҫырӑр.

**Хуравра тӗл пулма пултаракан ваттисен сӑмахӗсен тӗслӗхӗсем:**

*Ӗмӗр пурӑн, ӗмӗр вӗрен.*

*Вӗренни ҫӑкӑр ыйтмасть.*

2. **Ыйту (ӗҫ).**

Кӗске, ҫемҫе, янӑравлӑ **к** сасӑ текстри хӑш сӑмахра (сӑмахсенче) тӗл пулать? Ҫав сӑмаха (сӑмахсене) тупса ҫырӑр.

**Хурав.**

ӳкерчӗк, ӳкерет, ӳкертӗн, ӳкерме.

3. **Ыйту (ӗҫ).**

Текстри хӑш предложенире (предложенисенче) пунктуаци йӑнӑшӗ(сем) пур? Тӳрлетсе тепӗр хут ҫырса илӗр.

**Хурав.**

Художник вăр-вар ўкерет те уншăн пысăк хак ыйтать. Пилĕк минутрах ўкертĕн-çке, мĕншĕн питĕ хаклă ара?

**4. Ыйту (ĕç).**

Текстри ***вăр-вар*** сăмахăн синонимне тата антонимне тупса çырăр.

**Хурав.**

Синонимĕ – хăвăрт, антонимĕ – майĕпен (васкамасăр).

**5. Ыйту (ĕç).**

Текстри иккĕмĕшле глагола (глаголсене) тупса çырăр.

**Хурав.**

ўкерет, ўкертĕн, ўкерме.

**6. Ыйту (ĕç).**

Текстра тĕп падежри хăш сăмахра (сăмахсенче) ***ă, ĕ*** сасă(сем) тухса ўкме е кĕрсе ларма пултараççĕ?

эп(ĕ), пур(ă)нăç, çак(ă), пит(ĕ).

**7. Ыйту (ĕç).**

Текстра пĕр йышши членсене тупса çырăр.

**Хурав.**

ўкерет, ыйтать.

**8. Ыйту (ĕç).**

Текстра антоним пулакан сăмахсене тупса çырăр.

**Хурав.**

пĕчĕк – пысăк.

**9. Ыйту (ĕç).**

«Аслă Çĕнтерĕве – 75 çул!» темăпа икĕ çавраран кая мар сăвă çырăр.

**10. Ыйту (ĕç).**

Текста вырăсла куçарăр.

Сăвап

Шухăшласа пăхăр-ха эсир: хула ачи темерĕн, пирĕн хăна хĕр çут тĕнчере çакăн чухлĕ пурăнса та çăлтăрсем çапла ĕлккен пулнине пĕлмен иккен! Хулана эпĕ пĕртте кайса курман, малашне пушшех кайса курас килмест: те хĕвел те çук-ха унта?! Уйăх та тухмасть-и тен?

Эпĕ Анжеликăна çăлтăрсем çинчен хам пĕлнине каласа пама çĕрлехи урама илсе тухрăм. Тăсăлса выртрăмăр та нӳхреп тăррине, выртрăмăр уçă тӳпепе куçран куçа пăхса. Алтăр çăлтăра та палламасть-çке шеремет хĕр ачи! Алтăр çăлтăр ир енне ӳпленни, «шывне тăкни» çинчен каласа патăм. Çăварне карса итлерĕ! Ала çăлтăр, Кĕвенте çăлтăр, Шурăмпуç çăлтăрĕ, Çурçĕр çăлтăрĕ – эх, çулçӳреве тухса кайрăмăр та хамăр çĕр чăмăрĕ çинче, хăма витнĕ пĕр пĕчĕк нӳхреп тăрринче, выртни çинчен те мантăмăр.

– Алтăр çăлтăр – çич çăлтăр, çиччĕ каласан сăвап пулать тет, Алтăр çăлтăр – çич çăлтăр, çиччĕ каласан сăвап пулать тет… – пăшăлтатаççĕ асамлăн пирĕн тутасем. Çав сăмахсем çăвартан тухса пынăçем çĕрлехи тĕнчере темле улшăну пулса иртет. Эпĕ хамăн чĕре кăкăртан сиксе тухасла тапнине кăна мар, Анжеликăн чĕри сикнине те илтсе выртатăп. Çăлтăрсен мĕлтлетĕвĕ те чĕре таппи – урăх çак аслă шăплăхра ним те çук. Эпир хамăртан хамăр хăраса выртатпăр: пĕчĕк пулсан та çын-çке-ха эпир, пирĕн çав çăлтăрсемпе темле çыхăну пур!

Вĕçетпĕр, вĕçетпĕр çӳлтен çӳле.

– Калатăп вĕт сана, чăваш чĕлхи темле ăрăмлă чĕлхе вăл. Темле… юмах каламалли чĕлхе, – тет Анжелика аран илтĕнмелле.

– Юрать яла килтĕн-ха, вĕренейместĕнччĕ те хăвăн хулунта…

(Марина Карягина)

***Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади 2020-мĕш çул***

***10-мĕш класс (вырăс шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**Текста вулăр та 1–5 ыйтусене (ĕçсене) пурнăçлăр.**

– Кала-ха мана, асанне, – ыйтма хăюлăх çитерчĕ Гриша. – Ĕмĕре ĕçлесе ирттерме аванрах-и е ĕçлемесĕр-и? Вăт, ним хуйхă-суйхăсăр выртасчĕ санăн, асанне, кăмака çинче аяк пĕрчисене хĕртсе. Хырăм хыр тăрне кайсан, тăрса тутлă апат çиесчĕ те каллех улпутла çемçе тӳшек çине йăванасчĕ.

– Эх, мăнукăм, ĕç вăл – пурнăç тыткăчи. Нихăçан та ан ман çак сăмахсене. Этем ĕçпе мар, ĕçсĕр иртерех ватăлать, – терĕ кинемей тутăрне кăлт-кăлт хускатса. Унтан тăчĕ те вăшт-вашт утса пăри пусси хĕррине çитрĕ, шаларах кĕрсе паркарах пучаха суйларĕ.

*(Хв. Агивер çырнинчен)*

**1. Ыйту (ĕç).**

Текст содержанийĕпе килĕшӳллĕ ваттисен сăмахĕ(сем) çырăр.

**Хуравра тĕл пулма пултаракан ваттисен сăмахĕсем:**

Ĕç вăл – пурнăç илемĕ.
Ĕç вăл – пурнăç тыткăчи.
Ĕç кахала юратмасть.
Ĕç ĕçлесси хăяккăн выртасси мар.
Ĕç ĕçчене юрататъ.
Ĕç пулсан телей те пур.
Ĕç çынна илем кӳрет.
Ĕçлемесĕр хырăм тăранмасть.

**2. Ыйту (ĕç).**

Кĕске, çемçе, янăравлă **т** сасă текстри хăш сăмахра (сăмахсенче) тĕл пулать? Çав сăмаха (сăмахсене) тупса çырăр.

**Хурав.**

çитерчĕ, этем, иртерех.

**3. Ыйту.**

Текстра тĕп падежри хăш сăмахра (сăмахсенче) ***ă, ĕ*** сасă(сем) тухса ӳкме е кĕрсе ларма пултараççĕ?

**Хурав.**

пур(ă)нăç, них(ă)çан, пусси (пус(ă)).

**4. Ыйту (ĕç).**

*Хырăм хыр тăрне кайсан* фразеологизмăн синонимне çырăр, унран паллă ячĕ тăвăр та антонимне тупса палăртăр.

**Хурав.**

Синонимĕ – выçсан (выçса çитсен), паллă ячĕ – *выçă*, антонимĕ – *тутă*.

**5. Ыйту (ĕç).**

Текстра мĕнле пусă пирки сăмах пырать? Унти тырă ятне вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

Пăри пусси. Тырă ячĕ – полба.

**6. Ыйту.**

Мĕн вăл экспромт?

**Хурав.**

Экспромт – нумай шухăшламасăрах, сасартăк пуçа килнĕ кĕске сăвă çаврăмĕ.

**7. Ыйту.**

Çак йĕркесене кам çырнă?

*«Шанчăк пуррисем – телейлĕ. Авал асаттесене мăшкал тунине манас мар. Мăшкăл айĕнчен чĕрĕ тухнă чĕлхе тĕнчере çухалмĕ. Ку таранччен чăваш сăмахĕ илтĕнмен, – халĕ чăваш юрри илтĕнĕ; чăваш сăвви, чăваш сăмахĕ Атăл хумĕ пек, вăрман сасси пек, кĕсле сасси вырăнне пулĕ...»*

**Хурав.**

Çеçпĕл Мишши.

**8. Ыйту (ĕç).**

Ку хайлаври ĕçсем Атăл тăрăхĕнчи халăхсен историйĕнче паллă йĕр хăварнă пысăк пăлхав умĕн Шупашкарпа тури чăваш ялĕсенче пулса иртеççĕ. Писатель халăх пурнăçне, йăли-йĕркисене аван пĕлет. Ытарайми илемлĕ те сăнарлă чĕлхепе çырнă хайлав чăваш литературинчи чи лайăх произведенисенчен пĕри шутланать.

Мĕнле хайлав пирки сăмах пырать-ши? Авторне те палăртăр.

**Хурав.**

«Таната» роман пирки. Авторĕ – Хветĕр Уяр.

**9. Ыйту (ĕç).**

«Аслă Çĕнтерĕве – 75 çул!» темăпа икĕ çавраран кая мар сăвă çырăр.

**10. Ыйту (ĕç).**

Текста вырăсла куçарăр.

Сăвап

Шухăшласа пăхăр-ха эсир: хула ачи темерĕн, пирĕн хăна хĕр çут тĕнчере çакăн чухлĕ пурăнса та çăлтăрсем çапла ĕлккен пулнине пĕлмен иккен! Хулана эпĕ пĕртте кайса курман, малашне пушшех кайса курас килмест: те хĕвел те çук-ха унта?! Уйăх та тухмасть-и тен?

Эпĕ Анжеликăна çăлтăрсем çинчен хам пĕлнине каласа пама çĕрлехи урама илсе тухрăм. Тăсăлса выртрăмăр та нӳхреп тăррине, выртрăмăр уçă тӳпепе куçран куçа пăхса. Алтăр çăлтăра та палламасть-çке шеремет хĕр ачи! Алтăр çăлтăр ир енне ӳпленни, «шывне тăкни» çинчен каласа патăм. Çăварне карса итлерĕ! Ала çăлтăр, Кĕвенте çăлтăр, Шурăмпуç çăлтăрĕ, Çурçĕр çăлтăрĕ – эх, çулçӳреве тухса кайрăмăр та хамăр çĕр чăмăрĕ çинче, хăма витнĕ пĕр пĕчĕк нӳхреп тăрринче, выртни çинчен те мантăмăр.

– Алтăр çăлтăр – çич çăлтăр, çиччĕ каласан сăвап пулать тет, Алтăр çăлтăр – çич çăлтăр, çиччĕ каласан сăвап пулать тет… – пăшăлтатаççĕ асамлăн пирĕн тутасем. Çав сăмахсем çăвартан тухса пынăçем çĕрлехи тĕнчере темле улшăну пулса иртет. Эпĕ хамăн чĕре кăкăртан сиксе тухасла тапнине кăна мар, Анжеликăн чĕри сикнине те илтсе выртатăп. Çăлтăрсен мĕлтлетĕвĕ те чĕре таппи – урăх çак аслă шăплăхра ним те çук. Эпир хамăртан хамăр хăраса выртатпăр: пĕчĕк пулсан та çын-çке-ха эпир, пирĕн çав çăлтăрсемпе темле çыхăну пур!

Вĕçетпĕр, вĕçетпĕр çӳлтен çӳле.

– Калатăп вĕт сана, чăваш чĕлхи темле ăрăмлă чĕлхе вăл. Темле… юмах каламалли чĕлхе, – тет Анжелика аран илтĕнмелле.

– Юрать яла килтĕн-ха, вĕренейместĕнччĕ те хăвăн хулунта…

(Марина Карягина)

***Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади 2020-мĕш çул***

***11-мĕш класс (вырăс шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Ултă сас паллирен тăракан сăмах тăвăр. Çав сăмаха тума:

1) *çармăс чĕлхин* вырăсла ятне тупăр та чи пĕрремĕш сас паллине çырăр;

2) *шăтăр-шатăр* мĕнле пуплев пайĕ пулать? Чи пĕрремĕш сас паллине илĕр;

3) чăваш сăмахĕсен пуçламăшĕнче мĕнле сас палли тĕл пулмасть?;

4) Н.И. Ашмарин словарĕн чăвашла ятне тупăр та чи пĕрремĕш сас паллине илĕр;

5) чĕлхере усă куракан сăмахсен йышне мĕн теççĕ? Çав сăмахăн иккĕмĕш сас паллине илĕр;

6) *ыран* мĕнле пуплев пайĕ пулать? Пĕрремĕш сас паллине илĕр.

Мĕнле сăмах пулнине çырăр та вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

1) *çармăс чĕлхин* – **м**;

2) *шăтăр-шатăр* – **е**;

3) чăваш сăмахĕсен пуçламăшĕнче мĕнле сас палли тĕл пулмасть? – **р**;

4) Н.И. Ашмарин словарĕн чăвашла ятне тупăр та чи пĕрремĕш сас паллине илĕр – **ч** (Чăваш сăмахĕсен кĕнеки);

5) чĕлхере усă куракан сăмахсен йышне мĕн теççĕ? Çав сăмахăн иккĕмĕш сас паллине илĕр – **е** (лексика);

6) *ыран* мĕнле пуплев пайĕ пулать? Пĕрремĕш сас паллине илĕр – **н** (наречи).

Мерчен. Вырăсла – коралл, бисер, жемчуг.

**2. Ыйту.**

*Тура, çыру, тупра, кил, ăн, хăйра, сунар, авăн, йăмăк, кĕреке, тупсăм, хут, касса* сăмахсенчен хăшĕ япала ячĕ те, глагол та пулать?

**Хурав.**

тура, кил, ăн, хăйра, сунар, авăн, хут, касса.

**3. Ыйту (ĕç).**

Пĕр тымартан пулăннă сăмахсене çырса илĕр:

*ăнăçу, ăнсăрт, ăнлă, пурăн, ăнкар, ăнтăл, тарăн, ăнсăр, ăнлану, ăна, ăнлав, ăнт, унсăрăн, ăншăрт, ăнтăх, кавăн.*

**Хурав.**

*ăнлă, ăнкар, ăнсăр, ăнлану, ăнлав.*

**4. Ыйту (ĕç).**

Сăмах тымарĕнче виçĕ хупă сасă юнашарлăхĕ тĕл пулакан чăвашла тĕслĕх(сем) тупăр.

**Хуравра пулма пултаракан сăмахсем:**

*Пултран, лаштра, кантра* т.ыт.те.

**5. Ыйту (ĕç).**

Чăваш чĕлхинчи тăванлăх сăмахĕсене сингармонизм тĕлĕшĕнчен ушкăнлăр:

*анне, аппа, пичче, шăллăм, хĕр, асанне, тете, кĕрӳ, инке, сар ывăл, мăнук, кин, кинемей, мăнакка, мучи.*

*Сар ывăл* кам вăл? Чăвашла ăнлантарăр, вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

çемçе сăмахсем – *пичче, тете, кĕрӳ, инке, хĕр, кин, кинемей*

хытă сăмахсем – *аппа, шăллăм, ывăл, мăнук, мăнакка*

хутăш сăмахсем – *анне, асанне, мучи*

Сар ывăл – упăшкан виççĕмĕш кĕçĕн шăллĕ, третий младший брат мужа.

**6. Ыйту.**

Мĕн вăл эпанафора?

**Хурав.**

Эпанафора – сăвăри пĕр йĕрке е прозăри пĕр фраза вĕçĕ тепĕр йĕрке е фраза пуçламăшĕ пулни; тĕслĕх:

*Эс пĕлетĕн: ӳсрĕм эпĕ шухă,*
*Ӳсрĕм эпĕ шухă ачаран…*

**7. Ыйту (ĕç).**

Çак йĕркесен авторне тата хайлав ятне асăнăр:

*«Падение любого человека начинается с забвения своего долга перед матерью. Запомни это. Твою мать даже чужие люди называют совестью семьи, рода... Если пятидесятилетний человек плохо относится к матери, хоть пятьдесят лет ищи в нем хорошее – бесполезно. Даже в мелочи не доверяй человеку, забывшему родную мать. Не заводи знакомства с человеком, который способен обижать свою или твою мать…»*

**Хурав.**

Г.Н. Волков «Золотая колыбель».

**8. Ыйту (ĕç).**

Илпек Микулайĕн пĕр хайлавĕнчи тĕп сăнар – Владимир Бараев çыравçă. Хайлав ятне аса илĕр, жанрне палăртăр.

**Хурав.**

«Тимĕр». Жанрĕ – повесть.

**9. Ыйту (ĕç).**

«Аслă Çĕнтерĕве – 75 çул!» темăпа икĕ çавраран кая мар сăвă çырăр.

**10. Ыйту (ĕç).**

Текста вырăсла куçарăр.

Сăвап

Шухăшласа пăхăр-ха эсир: хула ачи темерĕн, пирĕн хăна хĕр çут тĕнчере çакăн чухлĕ пурăнса та çăлтăрсем çапла ĕлккен пулнине пĕлмен иккен! Хулана эпĕ пĕртте кайса курман, малашне пушшех кайса курас килмест: те хĕвел те çук-ха унта?! Уйăх та тухмасть-и тен?

Эпĕ Анжеликăна çăлтăрсем çинчен хам пĕлнине каласа пама çĕрлехи урама илсе тухрăм. Тăсăлса выртрăмăр та нӳхреп тăррине, выртрăмăр уçă тӳпепе куçран куçа пăхса. Алтăр çăлтăра та палламасть-çке шеремет хĕр ачи! Алтăр çăлтăр ир енне ӳпленни, «шывне тăкни» çинчен каласа патăм. Çăварне карса итлерĕ! Ала çăлтăр, Кĕвенте çăлтăр, Шурăмпуç çăлтăрĕ, Çурçĕр çăлтăрĕ – эх, çулçӳреве тухса кайрăмăр та хамăр çĕр чăмăрĕ çинче, хăма витнĕ пĕр пĕчĕк нӳхреп тăрринче, выртни çинчен те мантăмăр.

– Алтăр çăлтăр – çич çăлтăр, çиччĕ каласан сăвап пулать тет, Алтăр çăлтăр – çич çăлтăр, çиччĕ каласан сăвап пулать тет… – пăшăлтататăççĕ асамлăн пирĕн тутасем. Çав сăмахсем çăвартан тухса пынăçем çĕрлехи тĕнчере темле улшăну пулса иртет. Эпĕ хамăн чĕре кăкăртан сиксе тухасла тапнине кăна мар, Анжеликăн чĕри сикнине те илтсе выртатăп. Çăлтăрсен мĕлтлетĕвĕ те чĕре таппи – урăх çак аслă шăплăхра ним те çук. Эпир хамăртан хамăр хăраса выртатпăр: пĕчĕк пулсан та çын-çке-ха эпир, пирĕн çав çăлтăрсемпе темле çыхăну пур!

Вĕçетпĕр, вĕçетпĕр çӳлтен çӳле.

– Калатăп вĕт сана, чăваш чĕлхи темле ăрăмлă чĕлхе вăл. Темле… юмах каламалли чĕлхе, – тет Анжелика аран илтĕнмелле.

– Юрать яла килтĕн-ха, вĕренейместĕнччĕ те хăвăн хулунта…

(Марина Карягина)

***Регионсем хушшинче иртекен***
***чăваш чĕлхипе литература олимпиади***
***2021-мĕш çул***

***9-мĕш класс (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш, 5-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.**

*Урам урлă пурăнакан Микулай мучирен йытă çури илтĕм. Унăн амăшĕ ула, пысăк. Ку вара кăмака хăрăмĕ пек, пĕр шурă пăнчă та çук. Чипер ят шыраса тупайманнипе ăна Айта ят патăм.*

**1. Ыйту (ĕç).**

Йытă çури амăшĕ мĕн тĕслĕ? Çав сăмаха çырăр та вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

Ула – пёстрый, пятнистый.

**2. Ыйту (ĕç).**

Тăваттăмĕш предложенири паллă ятне тупăр, синонимне (синонимĕсене) çырăр.

**Хурав.**

Чипер. Синонимĕсем – илемлĕ, хитре, килĕшӳллĕ.

**3. Ыйту (ĕç).**

Хăрăм мĕн тĕслĕ пулать? Текстра кам (мĕн) хăрăм пек?

**Хурав.**

Хура тĕслĕ. Йытă çури (Айта) хăрăм пек.

4. Текстран хыççăмах (хыççăмахсене) çырса илĕр.

**Хурав.**

урлă, пек.

**5. Ыйту (ĕç).**

Текстри мучи ятне çырăр. Вăл вырăс чĕлхинчи мĕнле ятпа тӳр килет?

**Хурав.**

Микулай – Николай (Коля).

**6. Ыйту (ĕç).**

Пĕлтерĕшне кура çак терминсене пĕр ушкăна пухма пулать-и? Ытлашши термин (терминсем) пур пулсан вĕсене тупса палăртăр:

*Лирика, октава, хавха, цезура, эпиграмма*.

**Хурав.**

Пĕр ушкăна пухма пулать.

**7. Ыйту (ĕç).**

Тăватă сас паллирен тăракан литература жанрне аса илĕр, ăна тупма çак ыйтусемпе ĕçсене пурнăçлăр:

1) вăл – чăваш халăх çыравçи, историкĕ, сăвăçи, юптаруçи, драматургĕ, очерк ăсти; истори романĕсем, халапсемпе мифсен пуххисем, эпоссем çырнă. Патăрьел районĕнчи Сăкăт ялĕнче çуралса ӳснĕ. Çыравçă псевдонимĕн пуçламăш сас паллине илĕр;

2) Нарспи ашшĕн пуçламăш сас паллийĕ епле?

3) Çеçпĕл Мишши çырман хайлав ятне тупăр, унăн пĕрремĕш сас паллине илĕр: а) «Эпĕ вилсен…», ă) «Арçури», б) «Чăваш чĕлхи», в) «Чăваш ачине».

4) антитеза терминăн чăвашла варианчĕ. Пуçламăш сас паллине илĕр.

**Хурав.**

ЮМАХ (юмах):

1) Юхма – **ю**;

2) Михетер – **м**;

3) «Арçури» – **а**;

4) хирĕçлетӳ – **х**.

**8. Ыйту (ĕç).**

Сăвă виçине тата карт шутне палăртăр:

*Вăрманăм пачĕ хăй хупне*
*Хăй сăпкинче мана сикме,*
*Хирти ыраш хăй сĕткенне*
*Тултарчĕ манăн пĕвĕме.*

*(Ухсай Яккăвĕ)*

**Хурав.**

Ямб, тăвата картлă.

**9. Ыйту (ĕç).**

Вырăсла куçарăр:

*Ан шелле чун-чĕре ăшшине,*
*Пайласам ăна тăванпа.*
*Çунтаран юрату хĕлхемне*
*Эс упра. Ан çыхлан усалпа.*

*(Л. Филиппова)*

**Хурав.**

Теплоты душевной не жалей,
Подели ее между родными.
И горячий луч любви пролей,
Среди злых не становитесь злыми.

**10. Ыйту (ĕç).**

Çывхарса килекен Мартăн 8-мĕшĕ ячĕпе чăвашла салам сăмахĕ çырăр.

***Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади 2021-мĕш çул***

***10-мĕш класс (вырăс шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш, 5-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.**

*Тем пулчĕ Мăрçике? Каçхине тăхăр-вунă сехетрех вырăн ăшне чăмать вăл. Халиччен çур çĕр иртсен тин сунартан таврăнатчĕ. Ман çумра мăр-р, мăр-р туса ачашланкалатчĕ те, ыйха пуtatчĕ.*

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстра кам (мĕн) çинчен сăмах пырать? Унăн ячĕ вырăс чĕлхинчи мĕнле ятпа тӳр килет?

**Хурав.**

Мăрçик ятлă кушак çинчен. Вырăсла ят тӳркилĕвĕ – Мурзик.

**2. Ыйту (ĕç).**

Вăл ăçта чăмать? Тата ăçта чăмма пулать?

**Хурав.**

Вырăн ăшне чăмать. Шыва чăмма пулать.

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстри хăш предложенире пунктуаци йăнăшĕ пур? Тӳрлетсе çырса илĕр.

**Хурав.**

Юлашки (тăваттăмĕш) предложенире (запятой кирлĕ мар).

**4. Ыйту (ĕç).**

Текстра фразеологизм тупăр, чăвашла синонимне çырăр.

**Хурав.**

Ыйха пут. Синонимĕ – çывăрса кай.

**5. Ыйту (ĕç).**

*Сунар* сăмах омонимлă пулать-и? Ăнлантарăр, тĕслĕхĕсене вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

Омонимлă, мĕншĕн тесен тĕрлĕ пуплев пайĕ пулать: сунар – япала ячĕ (охота), сунар – глагол (пожелаем).

**6. Ыйту (ĕç).**

Пĕлтерĕшне кура çак терминсене пĕр ушкăна пухма пулать-и? Ытлашши термин (терминсем) пур пулсан вĕсене тупса палăртăр:

*Эпос, юптару, эпилог, сюжет, сага*.

**Хурав.**

Пĕр ушкăна пухма пулать.

**7. Ыйту (ĕç).**

Тăватă сас паллирен тăракан илемлĕ хайлав ятне аса илĕр, ăна тупма çак ыйтусемпе ĕçсене пурнăçлăр:

1) Хветĕр Уярăн «Таната» хайлавĕнчи сăнар: вăл хĕнхур, асап курнă çын, унăн «пит-куçĕ пĕркеленсе ларнă, аллисем чĕтрекен пулнă, çӳçĕ кăвакарнă. Ахаль те лутраскер, курпун тухнипе вăл тата та лутрарах пек курăна пуçланă». Çак сăнар ячĕн пуçламăш сас паллине илĕр;

2) ку терминпа лирика жанрне, сăвă формипе кама та пулин халалласа çырнă çырăва палăртаççĕ. Унăн юлашкинчен иккĕмĕш  сас паллийĕ епле?

3) Илья Ефимович Ефимов çыравçă псевдонимĕнче мĕнле сас палли икĕ хутчен тĕл пулать?

4) Çеçпĕл Мишши çырман хайлав ятне тупăр, унăн пĕрремĕш сас паллине илĕр: а) «Эпĕ вилсен…», ă) «Арçури», б) «Чăваш чĕлхи», в) «Чăваш ачине».

Хайлав авторне палăртăр.

**Хурав.**

ЯЛТА (ялта):

1) Яриле – **я**;

2) эпистола – **л**;

3) Тăхти – **т**;
4) «Арçури» – **а**.
Авторĕ – Федор Павлов.

**8. Ыйту (ĕç).**
Сăвă виçине палăртăр:
*Сăмах чĕнме те юрамасть пулсан*
*Мĕн тума кирлĕ ăс?*
*Шухăшлама та юрамасть пулсан*
*Мĕн тума кирлĕ ăс?*
*Чĕмсĕр пулас, тăнсăр пулас пулсан*
*Мĕн тума кирлĕ эп?*
*(Петĕр Эйзин)*
**Хурав.**
Ирĕклĕ сăвă виçи.

**9. Ыйту (ĕç).**
Вырăсла куçарăр:
*Ан шелле чун-чĕре ăшшине,*
*Пайласам ăна тăванпа.*
*Çунтаран юрату хĕлхемне*
*Эс упра. Ан çыхлан усалпа.*
*(Л. Филиппова)*
**Хурав.**
Теплоты душевной не жалей,
Подели ее между родными.
И горячий луч любви пролей,
Среди злых не становитесь злыми.

**10. Ыйту (ĕç).**
Çывхарса килекен Мартăн 8-мĕшĕ ячĕпе чăвашла салам сăмахĕ çырăр.

***Регионсем хушшинче иртекен***
***чăваш чĕлхипе литература олимпиади***
***2021-мĕш çул***

***11-мĕш класс (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Пĕр тымартан пулăннă сăмахсене çырса илĕр:

*мускул, кулăш, куллен, култар, кулуар, кулач, кулă, кулинар, кулян, култармăш, кулăшлан.*

**Хурав.**

Пĕр тымартан пулăннă сăмахсем:

*кулăш, култар, кулă, култармăш, кулăшлан.*

**2. Ыйту (ĕç).**

Чĕлхе терминĕсене вырăсла куçарса çырăр:

тӳнтер словарь, чарăну палли, кĕçĕн член, çармăс чĕлхи, хутлă предложени.

**Хурав.**

тӳнтер словарь – обратный словарь

чарăну палли – знак препинания

кĕçĕн член – второстепенный член

çармăс чĕлхи – марийский язык

хутлă предложени – сложное предложение

**3. Ыйту.**

Хăш ушкăнри виçĕ сăмахĕнче те сасăсен шучĕ сас паллисен шучĕпе пĕр тан?

1) туять, салхуллă, ыррăн
2) тухья, клеенка, тупать
3) юратать, июнь, хăюллă
4) чеелен, яланах, ялан

**Хурав.**

юратать, июнь, хăюллă.

**4. Ыйту.**

Хăш сăмахра (сăмахсенче) икĕ глагол пытаннă?

тухтăр, пулăçă, кӳлĕ, хулара, çыравçă, илтет, каять, паянхи, çунакан, ĕлĕк-авал, шыракан, сылтăм, ырă.

**Хурав.**

Тухтăр, çыравçă, илтет, çунакан, шыракан.

**5. Ыйту.**

Палăртнă сăмах предложенире мĕнле член пулать? Вăл мĕнле пуплев пайĕ?

*Илемлĕ манăн килĕм-çуртăм,*
*Нихçан тухман унта* ***хăр-хар.***

**Хурав.**

Подлежащи пулать. Евĕрлев сăмахĕ.

**6. Ыйту (ĕç).**

Пĕлтерĕшне кура çак терминсене пĕр ушкăна пухма пулать-и? Ытлашши термин (терминсем) пур пулсан вĕсене тупса палăртăр:

*Драма, ремарка, рефлекси, фарс, эпиграф.*

**Хурав.**

Пĕр ушкăна пухма пулать.

**7. Ыйту (ĕç).**

Тăватă сас паллирен тăракан илемлĕ хайлав ятне аса илĕр, ăна тупма çак ыйтусемпе ĕçсене пурнăçлăр:

1) Хветĕр Уярăн «Таната» хайлавĕнчи сăнар: вăл хĕнхур, асап курнă çын, унăн «пит-куçĕ пĕркеленсе ларнă, аллисем чĕтрекен пулнă, çӳçĕ кăвакарнă. Ахаль те лутраскер, курпун тухнипе вăл тата та лутрарах пек курăна пуçланă». Çак сăнар ячĕн пуçламăш сас паллине илĕр;

2) ку терминпа лирика жанрне, сăвă формипе кама та пулин халалласа çырнă çырăва палăртаççĕ. Унăн юлашкинчен иккĕмĕш сас паллийĕ епле?

3) Илья Ефимович Ефимов çыравçă псевдонимĕнче мĕнле сас палли икĕ хутчен тĕл пулать?

4) Çеçпĕл Мишши çырман хайлав ятне тупăр, унăн пĕрремĕш сас паллине илĕр: а) «Эпĕ вилсен…», ă) «Арçури», б) «Чăваш чĕлхи», в) «Чăваш ачине».

Хайлав авторне палăртăр.

**Хурав.**

ЯЛТА (ялта):

1) Яриле – **я**;

2) эпистола – **л**;

3) Тăхти – **т**;

4) «Арçури» – **а**.

Авторĕ – Федор Павлов.

**8. Ыйту (ĕç).**

Сăвă виçине тата карт шутне палăртăр:

*Ыр сăмах калама ан ӳркенĕр –*
*Пулмасан та хăш чух ун усси –*
*Пулас çуккă сиен. Ан хĕрхенĕр! –*
*Ыр сăмах чылай чух – чун уççи!*

*(Раиса Сарпи)*

**Хурав.**

Анапест, виçĕ картлă.

**9. Ыйту (ĕç).**

Вырăсла куçарăр:

*Ан шелле чун-чĕре ăшшине,*
*Пайласам ăна тăванпа.*
*Çунтаран юрату хĕлхемне*
*Эс упра. Ан çыхлан усалпа.*

*(Л. Филиппова)*

**Хурав.**

Теплоты душевной не жалей,
Подели ее между родными.
И горячий луч любви пролей,
Среди злых не становитесь злыми.

**10. Ыйту (ĕç).**

Çывхарса килекен Мартăн 8-мĕшĕ ячĕпе чăвашла салам сăмахĕ çырăр.

***Регионсем хушшинче иртекен***
***чăваш чĕлхипе литература олимпиади***
***2022-мĕш çул***

***9-мĕш класс (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Хăш сăмахсене вырăс чĕлхинчен калаçу урлă йышăннă?

Атте, анне, шофер, машина, витре, аппа, утиял, университет, блокнот, хаçат, шофер, ăмăрту, сĕтел, кабинет, çемье, выля, сĕт, ӳнер.

**Хурав.**

витре, утиял, хаçат, сĕтел, çемье.

**2. Ыйту (ĕç).**

Пĕр тымартан пулăннă сăмахсене çырса илĕр:

*кантра, канфет, кану, канав, кантăк, канăç, канаш, хыткан, канлĕ, канăçлă, канва, канарейка, канăçу, такан.*

**Хурав.**

Пĕр тымартан пулăннă сăмахсем:

*кану, канăç, канлĕ, канăçлă, канăçу.*

**3. Ыйту (ĕç).**

Кирлĕ çĕрте чарăну палли(сем) лартса çырăр:

Çапла хĕрĕм ырă кăмăллă таса чунлă çитĕнмелле. Вара хăвна та ыттисене те лайăх пулĕ хĕвел те ăшшипе яланах савăнтарĕ.

**Хурав.**

Çапла**,** хĕрĕм**,** ырă кăмăллă**,** таса чунлă çитĕнмелле. Вара хăвна та**,** ыттисене те лайăх пулĕ**,** хĕвел те ăшшипе яланах савăнтарĕ.

**4. Ыйту (ĕç).**

Текстра мĕнле сăнар çинчен сăмах пырать? Чăваш чĕлхинче вăл **кам?** е **мĕн?**

Акă вăл çунаттисемпе яланхилле çат-çат! çапса картаран чупса тухрĕ те кил карти варрине тăрса вăрăммăн авăтса ячĕ.

**Хурав.**

Автан. Мĕн?

**5. Ыйту (ĕç).**

Пилĕк сас паллирен тăракан сăмах çырăр. Çав сăмаха тума ыйтусемпе ĕçсене пурнăçлăр:

1) **Дмитрий** ята вырăсларан чăвашла куçарăр та виççĕмĕш сас паллине илĕр.

2) **Свияга** юхан шыв ятне вырăсларан чăвашла куçарăр та иккĕмĕш сас паллине илĕр.

3) Мĕнле кун ячĕ вăл – вырăс эрни кунĕ? Унăн çиччĕмĕш саспаллине илĕр.

4) ***Нижний Новгород*** хула ятне вырăсларан чăвашла куçарăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр.

5) Н.И. Ашмарин чăваш чĕлхинчи хăш пуплев пайне питĕ тĕплĕн те туллин тишкернĕ? Çав пуплев пайĕн пĕрремĕш сас паллине илĕр.

**Хурав.**

ТĔНЧЕ (тĕнче):

1) Мĕтри – **Т**

2) Сĕве – **Ĕ**

3) Вырсарни – **Н**

4) Чулхула – **Ч**

5) Евĕрлев сăмахĕ – **Е**

**6. Ыйту.**

Кăсăк интригăллă, музыкăпа, ташăпа çыхăннă диалогсемлĕ çăмăл пьесăна, комедие мĕнле терминпа палăртаççĕ?

**Хурав.**

Водевиль.

**7. Ыйту.**

*Иванов çаври* тенине мĕнле ăнланатăр?

**Хурав.**

Çирĕмшер йĕркеллĕ çаврасем, тĕслĕхрен, «Нарспи» поэма çирĕмшер йĕркеллĕ çаврасенчен тăрать.

**8. Ыйту.**

Хăш автора (хăш авторсене) XX-мĕш ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулĕсенчи прозаик(сен) йышне кĕртместпĕр?

а) Исаев Мĕтри; ă) Никита Бичурин; б) Илле Тăхти.

**Хурав.**

ă) Никита Бичурин.

**9. Ыйту (ĕç).**

Чăваш апат-çимĕçне рекламăласа слоган çырăр.

**10. Ыйту (ĕç).**

И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ 55 çул тултарнине халалласа чăвашла е вырăсла сăвă çырăр.

***Регионсем хушшинче иртекен***
***чăваш чĕлхипе литература олимпиади***
***2022-мĕш çул***

***10-мĕш класс (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Пĕр тымартан пулăннă сăмахсене çырса илĕр:

*канал, кану, канăç, канав, канаш, хыткан, кантра, канлĕ, кантăк, канăçлă, канва, канарейка, канăçу, такан.*

**Хурав.**

Пĕр тымартан пулăннă сăмахсем:

*кану, канăç, канлĕ, канăçлă, канăçу.*

**2. Ыйту.**

Хăш сăмахсене вырăс чĕлхинчен калаçу урлă йышăннă?

Словарь, сăмала, ӳпре, университет, драма, кукамай, фокус, ыйту, сукмак, кабинет, чăматан, пĕремĕк, пушмак, хĕвел, чĕлхе, утиял, уйăх, хĕрарăм, анне, йăмăк.

**Хурав.**

сăмала, чăматан, пĕремĕк, пушмак, утиял.

**3. Ыйту (ĕç).**

Кирлĕ çĕрте чарăну палли(сем) лартса çырăр:

Хĕр илемлĕ куçĕпе йăл кулам пек турĕ те икĕ пичĕ пăт путрĕ. Те вăтаннипе те пăлханнипе вăл пĕр хĕрелсе пĕр шуралса илчĕ унтан айккинерех пăрăнса тăчĕ. Ытлашши сăмах вакламарĕ юлташĕсем ыйтнине хирĕç кĕскен кăна сасă паркаларĕ.

**Хурав.**

Хĕр илемлĕ куçĕпе йăл кулам пек турĕ те, икĕ пичĕ пăт путрĕ. Те вăтаннипе, те пăлханнипе вăл пĕр хĕрелсе, пĕр

шуралса илчĕ, унтан айккинерех пăрăнса тăчĕ. Ытлашши сăмах вакламарĕ, юлташĕсем ыйтнине хирĕç кĕскен кăна сасă паркаларĕ.

**4. Ыйту.**

Текстра мĕнле сăнар çинчен сăмах пырать? Чăваш чĕлхинче вăл **кам?** е **мĕн?**

Акă вăл çунаттисемпе яланхилле çат-çат! çапса картаран чупса тухрĕ те кил карти варрине тăрса вăрăммăн авăтса ячĕ.

**Хурав.**

Автан. Мĕн?

**5. Ыйту (ĕç).**

Пилĕк сас паллирен тăракан сăмах çырăр. Çав сăмаха тума ыйтусемпе ĕçсене пурнăçлăр:

1) **Дмитрий** ята вырăсларан чăвашла куçарăр та виççĕмĕш сас паллине илĕр.

2) **Свияга** юхан шыв ятне вырăсларан чăвашла куçарăр та иккĕмĕш сас паллине илĕр.

3) Мĕнле кун ячĕ вăл – вырăс эрни кунĕ? Унăн çиччĕмĕш саспаллине илĕр.

4) ***Нижний Новгород*** хула ятне вырăсларан чăвашла куçарăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр.

5) Н.И. Ашмарин чăваш чĕлхинчи хăш пуплев пайне питĕ тĕплĕн те туллин тишкернĕ? Çав пуплев пайĕн пĕрремĕш сас паллине илĕр.

**Хурав.**

ТĔНЧЕ (тĕнче):

1) Мĕтри – **Т**

2) Сĕве – **Ĕ**

3) Вырсарни – **Н**

4) Чулхула – **Ч**

5) Евĕрлев сăмахĕ – **Е**

**6. Ыйту.**

Баллада жанр литературӑн хӑш ретне кӗрет?

**Хурав.**

Эпика ретне кӗрет.

**7. Ыйту (ӗç).**

1) Ф. Павловӑн «Ялта» драминчи сӑнарсен системине тӗрӗс палӑртӑр:

а) Елюк, Ванюк, Çтаппан, Палля, Пӑраски;

ӑ) Елюк, Ванюк, Çтаппан, Йӑксар, Пӑрчкан;

б) Елюк, Ванюк, Çтаппан, Пӑраски, Палля;

в) Елюк, Ванюк, Муçça, Йӑскар, Пӑрчкан.

2) Драмӑри çак сӑмахсене кам калать? Герой ятне асӑнӑр.

*Пӗрре сана чиркӳре куртӑм. Эсӗ мана туррӑн таса ангелӗ пек курӑнса кайрӑн. Çавӑнтан пуçласа эсӗ ман чӗрене ӑмӑрт кайӑк чӗрнисемпе чавса илнӗ пек кӗрсе лартӑн. Юрататӑн-и эсӗ мана?*

**Хурав.**

1) в) Елюк, Ванюк, Муçça, Йӑскар, Пӑрчкан.

2) Çтаппан.

**8. Ыйту.**

Çак сӑвӑ йӗркисен авторӗ кам?

*Чӑваш чӗлхи вӑл – манӑн чун та ӗмӗт,*
*Хӗвел те уйӑхӑм – тӑван чӗлхе,*
*Пуçна чӗлхе вилессипе ан çӗмӗр,*
*Вӑл халӗ кирлӗ халӑха!*

**Хурав.**

Ухсай Яккӑвӗ.

**9. Ыйту (ӗç).**

Чӑваш апат-çимӗçне рекламӑласа слоган çырӑр.

**10. Ыйту (ӗç).**

И.Н. Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университечӗ 55 çул тултарнине халалласа чӑвашла е вырӑсла сӑвӑ çырӑр.

***Регионсем хушшинче иртекен***
***чăваш чĕлхипе литература олимпиади***
***2022-мĕш çул***

***11-мĕш класс (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Пĕр тымартан пулăннă сăмахсене çырса илĕр:

кулач, кулуар, кулă, мускул, кулăш, куллен, култар, кулинар, кулян, култармăш, кулăшлан.

**Хурав.**

Пĕр тымартан пулăннă сăмахсем:

кулă, кулăш, култар, култармăш, кулăшлан.

**2. Ыйту (ĕç).**

Хăш сăмахсене вырăс чĕлхинчен калаçу урлă йышăннă?

Сăмах, фонетика, библиотека, шкул, варинкке, кукамай, асанне, мăнук, алсиш, кĕпе, хаçат, журнал, утиял, радио, телевидени, кабинет, атте, анне.

**Хурав.**

шкул, варинкке, мăнук, хаçат, утиял.

**3. Ыйту (ĕç).**

Кирлĕ çĕрте чарăну палли(сем) лартса çырăр:

Матвей Матвеич кĕчĕ те пурте шăпланчĕç пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç. Егор Филиппович та Рая та Люсьăпа Петя та шăпăртах тăраççĕ. Эпĕ те шыв сыпнă пек ларатăп нимĕн те чĕнместĕп.

**Хурав.**

Матвей Матвеич кĕчĕ те, пурте шăпланчĕç, пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç. Егор Филиппович та, Рая та, Люсьăпа Петя та шăпăртах тăраççĕ. Эпĕ те шыв сыпнă пек ларатăп, нимĕн те чĕнместĕп.

**4. Ыйту (ĕç).**

Текстра мĕнле сăнар çинчен сăмах пырать? Чăваш чĕлхинче вăл **кам?** е **мĕн?**

Акă вăл çунаттисемпе яланхилле çат-çат! çапса картаран чупса тухрĕ те кил карти аррине тăрса вăрăммăн авăтса ячĕ.

**Хурав.**

Автан. Мĕн?

**5. Ыйту (ĕç).**

Пилĕк сас паллирен тăракан сăмах çырăр. Çав сăмаха тума ыйтусемпе ĕçсене пурнăçлăр:

1) **Дмитрий** ята вырăсларан чăвашла куçарăр та виççĕмĕш сас паллине илĕр.

2) **Свияга** юхан шыв ятне вырăсларан чăвашла куçарăр та иккĕмĕш сас паллине илĕр.

3) Мĕнле кун ячĕ вăл – вырăс эрни кунĕ? Унăн çиччĕмĕш саспаллине илĕр.

4) ***Нижний Новгород*** хула ятне вырăсларан чăвашла куçарăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр.

5) Н.И. Ашмарин чăваш чĕлхинчи хăш пуплев пайне питĕ тĕплĕн те туллин тишкернĕ? Çав пуплев пайĕн пĕрремĕш сас паллине илĕр.

**Хурав.**

ТĔНЧЕ (тĕнче):

1) Мĕтри – **Т**

2) Сĕве – **Ĕ**

3) Вырсарни – **Н**

4) Чулхула – **Ч**

5) Евĕрлев сăмахĕ – **Е**

**6. Ыйту (ĕç).**

Тăватă уйрăм кĕнекерен тăракан, анчах сюжет пĕрлĕхĕпе, тĕп шухăшпа, сăнарсен аталанăвĕпе уйрăлми

çыхăннă эпика е драма хайлавне мĕнле терминпа палăртаççĕ?

**Хурав.**

Тетралоги.

**7. Ыйту (ĕç).**

А. Алка çырнă сăвă йĕркисемпе паллашăр.

**Ш** сасă повторĕ урлă мĕнле сăнлăх куратăр-илтетĕр?

*Пуç урлă **ш**ăхăрать **ш**ав тăтă**ш**ă**ш**ăн*
*Анăçалла пин**ш**ер снаряд.*
*«Тăван çĕр**ш**ыв**ш**ăн! Халăх**ш**ăн!» –*
*Саспа пĕтĕм вăрман янрать.*

**Хурав.**

Ку çаврăмри **ш** сасă снаряд шăхăрнине сăнлать.

**8. Ыйту (ĕç).**

Александр Артемьевăн «Салампи» повеçĕнчи Таруçпа Маруç сăнарĕсене куç умне кăларăр. Автор асăннă геройсене епле сăнласа панă? Литература портречĕ калăпланă май мĕнле танлаштарусемпе усă курнă?

**Хурав.**

Таруç сăнĕ ачанни пек çамрăк, çавăнпа Маруç ун çумĕнче самай аслă курăнать.

Таруç тăрхала питлĕ, шуранкарах çутă сăнлă, çӳхе туталлă, кăвак куçлă. Маруç кӳпшекрех питлĕ, хĕп-хĕрлĕ сăнлă, хулăн туталлă, хура куçлă. Таруç яштак пӳллĕ, çинçе пилĕклĕ, тирпейлĕ çыхнă ыраш кĕлти пек. Маруç лутра пӳллĕ, тулли кĕлеткеллĕ, пушă çыхнă сĕлĕ кĕлти пек. Тумланасса вĕсем уява та, ĕçе те пĕр евĕрлĕ тумланса тухаççĕ.

**9. Ыйту (ĕç).**

Чăваш апат-çимĕçне рекламăласа слоган çырăр.

**10. Ыйту (ĕç).**

И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ 55 çул тултарнине халалласа чăвашла е вырăсла сăвă çырăр.

***Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади 2023-мĕш çул***

***9-мĕш класс (вырăс шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.**

*Мăнкунра килни харама кайман сирĕн, пысăк ĕç турăмăр. Çимĕкчен яла та кайса килĕр. Унта ман кукка пурăнать. Çурчĕ укăлчаран инçех мар. Эп сире адресне çырса паратăп ак.*

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстри *харама кайман* сăмахăн пĕлтерĕшне ăнлантарăр.

**Хурав.**

усăллă пулнă.

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстра мĕнле уяв(сен) ячĕсем тĕл пулаççĕ? Вырăсла мĕнле уявпа (уявсемпе) тӳр килеççĕ?

**Хурав.**

Мăнкун (Пасха).

Çимĕк (Троица, семик).

**3. Ыйту (ĕç).**

*Кукка* кам вăл? Ăнлантарса парăр, вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

Кукка – аннен пиччĕшĕ е шăллĕ. Вырăсла – дядя.

**4. Ыйту (ĕç).**

Вырăс чĕлхинчен калаçу урлă йышăннă сăмаха тупăр та пуçламăш формăра çырăр, мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр.

**Хурав.**

укăлча, япала ячĕ пулать.

**5. Ыйту (ĕç).**

Ултă сас паллирен тăракан сăмах тăвăр. Çав сăмаха тума ыйтусене хуравлăр:

1) *Кукăль, чие, тухьяллă, туссем, хуть, туя, халь, июль, çемьеллĕ, кăсăя.* Çак сăмахсенчен хăшĕнче сасăсемпе сас паллисен шучĕ пĕр тан? Çав сăмахăн пĕрремĕш сас паллине çырăр.

2) *Палиндром, фразеологизм, омоним, калька, аванкамера, ротацизм, синоним, ассимиляци.* Çак сăмахсенчен хăшĕ чĕлхе терминĕ мар? Çав сăмахăн пиллĕкмĕш сас паллине çырăр.

3) ***Наян*** сăмахăн антонимне тупăр та тăваттăмĕш сас паллине çырăр.

4) *Пушкăрт, чăваш, азербайджан, казах, мари, туркмен, турккă, узбек.* Çаксенчен хăшĕ тĕрĕк чĕлхисен ушкăнне кĕмест? Çав сăмахăн виççĕмĕш сас паллине çырăр.

5) *Пĕр ..... – пĕр ăс, ик ..... – икĕ ăс.* Çак ваттисен сăмахĕнчи точкăсем вырăнне кирлĕ сăмах тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр.

6) ***Авал*** сăмахăн синонимне тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр.

Мĕнле сăмах пулнине çырăр, ăна вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

1) Июль – И

2) Аванкамера – К

3) Ĕçчен – Е

4) Мари – Р
5) Чĕлхе – Ч
6) Ĕлĕк – Ĕ
**ИКЕРЧĔ (икерчĕ) – блины (оладьи).**

**6. Ыйту (ĕç).**
Куçса çӳрекен сюжет тенине мĕнле ăнланатăр?
**Хурав.**
Куçса çӳрекен сюжет тесе сăмах вĕççĕн çӳрекен е çырулла хайлавра çирĕпленнĕ пĕр культурăран тепĕр культурăна куçакан сюжетпа фабула тĕсĕсене калаççĕ.

**7. Ыйту (ĕç).**
Мускав комсомолкин паттăр ĕçĕ-хĕлне хăш чăваш поэчĕ çутатнă? Хайлав ятне палăртăр.
**Хурав.**
П. Хусанкай, «Таня» поэма.

**8. Ыйту (ĕç).**
Митта Ваçлейĕн «И мĕн пуян…» сăввинчи лирика геройĕ пурнăçри пуянлăха мĕнре-мĕнре курать?
**Хурав.**
Сывлăхра, туслăхра, халăхра.

**9. Ыйту (ĕç).**
Вырăсла куçарăр:

*Тĕлĕнмелле*

*Юрататăп пĕве хĕрринче ларма. Пĕвене Мишшапа иксĕмĕр пĕвелерĕмĕр. Тусăн аслашшĕ пире пулăшрĕ анчах. Пĕвере шывĕ ăшă, тин сунă сĕт пекех. Ларатпăр та Мишшапа пĕве хĕрринче урасене шыва чиксе чăмпăлт-чăмпăлт тутаратпăр. Пĕвери шапасем квак! квак! тесе юрлаççĕ. Мĕн каласшăн-ши вĕсем? Тав тăваççĕ пуль хăйсене çакăн пек çăтмах çĕршывĕ туса панăшăн.*

*Тĕлĕнмелле çăтмах. Шывра асаннесеннипе Мишшасен пӳрчĕ курăнать, анчах вăл пуçхĕрлĕ. Пахчари йывăççем те пуçхĕрлĕ тăнă. Тĕлĕнмелле!*

*Ахальтен тăрăшмарăмăр иккен!*

*(В. Тарават)*

**Хурав.**

Удивительно

Люблю сидеть на берегу пруда. Прудили мы его с Мишкой сами. Дедушка Мишки нам только помогал. Вода в нем теплая, как парное молоко. Сядем с Мишкой на краю, опустим ноги в теплую воду и бултыхаем ими: бултых, бултых, бултых!

А в ответ лягушки хором: квак! квак! квак!

Что это значит на их языке? Наверное, благодарят, что для них такое хорошее царство устроили. Удивительное место! В воде деревья, дома. Только все вверх ногами. А среди домов бабушкин сад перевернулся. Удивительно! Не зря мы старались.

**10. Ыйту (ĕç).**

Юратнă вĕрентекенĕре халалласа чăвашла пĕр е икĕ çавраллă сăвă çырăр.

***Регионсем хушшинче иртекен***
***чăваш чĕлхипе литература олимпиади***
***2023-мĕш çул***

***10-мĕш класс (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.**

*Хулари кукка килсен холодильник тулсах каять вара. Симĕс суханпа, çăмартапа пĕçернĕ кукăль, мармелад, кофе, çырла варенийĕ. Мĕн чухлĕ кучченеç! Чăн-чăн мăнкун тейĕн.*

**1. Ыйту (ĕç).**

Вырăс чĕлхинчен калаçу урлă йышăннă сăмаха тупăр, мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр.

**Хурав.**

кучченеç, япала ячĕ пулать.

**2. Ыйту (ĕç).**

*Кукка* кам вăл? Ăнлантарса парăр, вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

Кукка – аннен пиччĕшĕ е шăллĕ. Вырăсла – дядя.

**3. Ыйту (ĕç).**

Хутлă предложение çырса илĕр, тĕсне палăртăр. Хутлă предложени пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре кăтартăр.

**Хурав.**

*Хулари кукка килсен холодильник тулсах каять вара.*

Пăхăнуллă хутлă предложени, çыхăну хатĕрĕ – ***-сен*** аффикс.

**4. Ыйту (ĕç).**

Текстра мĕнле уяв(сен) ячĕсем тĕл пулаççĕ? Вырăсла мĕнле уявпа (уявсемпе) тӳр килеççĕ?

**Хурав.**

Мăнкун (Пасха).

**5. Ыйту (ĕç).**

Ултă сас паллирен тăракан сăмах тăвăр. Çав сăмаха тума ыйтусене хуравлăр:

1) *Кукăль, чие, тухьяллă, туссем, хуть, туя, халь, июль, çемьеллĕ, кăсăя.* Çак сăмахсенчен хăшĕнче сасăсемпе сас паллисен шучĕ пĕр тан? Çав сăмахăн пĕрремĕш сас паллине çырăр.

2) *Палиндром, фразеологизм, омоним, калька, аванкамера, ротацизм, синоним, ассимиляци.* Çак сăмахсенчен хăшĕ чĕлхе терминĕ мар? Çав сăмахăн пиллĕкмĕш сас паллине çырăр.

3) ***Наян*** сăмахăн антонимне тупăр та тăваттăмĕш сас паллине çырăр.

4) *Пушкăрт, чăваш, азербайджан, казах, мари, туркмен, туркă, узбек.* Çаксенчен хăшĕ тĕрĕк чĕлхисен ушкăнне кĕмест? Çав сăмахăн виççĕмĕш сас паллине çырăр.

5) *Пĕр ..... – пĕр ăс, ик ..... – икĕ ăс.* Çак ваттисен сăмахĕнчи точкăсем вырăнне кирлĕ сăмах тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр.

6) ***Авал*** сăмахăн синонимне тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр.

Мĕнле сăмах пулнине çырăр, ăна вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

1) Июль – И

2) Аванкамера – К

3) Ĕçчен – Е

4) Мари – Р

5) Чĕлхе – Ч

6) Ĕлĕк – Ĕ

ИКЕРЧĔ (икерчĕ) – блины (оладьи).

**6. Ыйту.**

Литература теорийĕнче фабула термин хăш ăнлавпа тачă çыхăннă?

**Хурав.**

Сюжет терминпа.

**7. Ыйту.**

Хăш хайлавра (хайлавсенче) вĕрентекен сăнарĕ пур:

а) Александр Артемьевăн «Салампи» хайлавĕнче;

б) Ю. Скворцовăн «Хĕрлĕ мăкăнь» хайлавĕнче;

в) М. Трубинан «Ача чухнехи» хайлавĕнче;

г) М. Данилов-Чалтунăн «Лизавета Егоровна» хайлавĕнче.

**Хурав.**

б) Ю. Скворцовăн «Хĕрлĕ мăкăнь» хайлавĕнче;

в) М. Трубинин «Ача чухнехи» хайлавĕнче.

**8. Ыйту.**

Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕ Марина Карягинан хăш пьесипе спектакль лартнă?

**Хурав.**

«Кĕмĕл тумлă çар».

**9. Ыйту (ĕç).**

Вырăсла куçарăр:

*Сывпуллашни*

*Ăшă утиял айĕнчен тухас килмест. Çынсем кĕтӳ кăна хăвалаççĕ иккен те, манăн вара... манăн çула тухма пуçтарăнмалла. Атте ĕнерех килнĕччĕ мана илме. Миш-*

*шапа та, ытти ачасемпе те каçхинех сывпуллашрăм. Пурне те хулана, пирĕн пата хăнана пырса курма чĕнтĕм эпĕ.*

*Васкаса сĕтпе кукăль çирĕмĕр те чарăнăва утрăмăр. Асаттепе асанне пире ăсатма пыраççĕ.*

*Çаврăнса пăхрăм та – Трезор ман хыççăн чупать. Вăл та вăраннă иккен. Эп унпа каçхинех сывпуллашрăм-çке. Мишша та пӳрт умĕнче ыйхăллă куçне сăтăркаласа тăрать. Кивĕ çăматă тăхăннă Антун мучи те унпа юнашарах.*

*Куççулĕм пăчăртанса тухрĕ... Ăнланмасть вăл арçынсем йĕмеççĕ иккенне. Уйрăлас килмест ман никамран та. Аннене те курас килет, пĕчĕк шăллăма та. Ялта мана пурпĕрех хуларинчен ытларах килĕшет. Аттепе аннерен ыйтап-ха яла куçса килме. Анне пульницăра ĕçлĕччĕ, атте Сĕве тăрăх пăрахутпа ишĕччĕ... Эпир Мишшапа пĕвелетпĕр те ăна – вăл Атăл пекех сарăлса юхĕ.*

*Пулать-ха вăл... Тен, хăçан та пулин...*

*(В. Тарават)*

**Хурав.**

Прощание

Так не хочется выбираться из-под теплого одеяла. Еще только стадо выгоняют, а уже пора, пора в дорогу собираться. Папа вчера еще за мной приехал. И с Мишкой, и с другими ребятами я еще вчера попрощался. Пригласил их в город в гости.

Быстренько поели пирожков с молоком и пошли на остановку. Бабушка с дедушкой нас до автобуса провожают.

Оглянулся назад – там Трезор следом бежит. И он проснулся. А я ведь с ним вчера попрощался. И Мишка около своего дома стоит. И дед Антон в своих стоптанных валенках…

У меня слезы блестят… Не хотят понять, что я мужчина. Очень неохота расставаться, хотя и по маме, и по братишке соскучился. Но все равно мне в деревне больше нравится. Хорошо бы сюда переехать. Мама в больнице бы работала, папа по Свияге теплоходы водил бы… Мы с Мишкой запрудили бы Свиягу, она разлилась бы, как Волга.

Ну ничего… Когда-нибудь…

(В. Тарават)

**10. Ыйту (ĕç).**

Юратнă вĕрентекенĕре халалласа чăвашла пĕр е икĕ çавраллă сăвă çырăр.

***Регионсем хушшинче иртекен***
***чăваш чĕлхипе литература олимпиади***
***2023-мĕш çул***

***11-мĕш класс (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.**

*Мăнкун умĕн пуйăс çине ларса куккапа хулана тухса вĕçтертĕмĕр. Пынă кунах универмагра чаплă атăсем сутнине куртăмăр. Чăн-чăн сурăх тирĕнчен çĕленĕ. Сĕре ăшă. Черет тăтăмăр та кăнтăрла тĕлнелле атăллă пултăмăр.*

**1. Ыйту (ĕç).**

Вырăс чĕлхинчен калаçу урлă йышăннă сăмаха тупăр, мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр.

**Хурав.**

пуйăс, япала ячĕ пулать.

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстри *сĕре* сăмахăн пĕлтерĕшне ăнлантарăр (синонимĕсене тупăр).

**Хурав.**

Питĕ, çав тери (çав таран).

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстра мĕнле уяв(сен) ячĕсем тĕл пулаççĕ? Вырăсла мĕнле уявпа (уявсемпе) тӳр килеççĕ?

**Хурав.**

Мăнкун (Пасха).

**4. Ыйту (ĕç).**

*Кукка* кам вăл? Ăнлантарса парăр, вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

Кукка – аннен пиччĕшĕ е шăллĕ. Вырăсла – дядя.

**5. Ыйту (ĕç).**

Ултă сас паллирен тăракан сăмах тăвăр. Çав сăмаха тума ыйтусене хуравлăр:

1) *Кукăль, чие, тухьяллă, туссем, хуть, туя, халь, июль, çемьеллĕ, кăсăя.* Çак сăмахсенчен хăшĕнче сасăсемпе сас паллисен шучĕ пĕр тан? Çав сăмахăн пĕрремĕш сас паллине çырăр.

2) *Палиндром, фразеологизм, омоним, калька, аванкамера, ротацизм, синоним, ассимиляци.* Çак сăмахсенчен хăшĕ чĕлхе терминĕ мар? Çав сăмахăн пиллĕкмĕш сас паллине çырăр.

3) ***Наян*** сăмахăн антонимне тупăр та тăваттăмĕш сас паллине çырăр.

4) *Пушкăрт, чăваш, азербайджан, казах, мари, туркмен, турккă, узбек.* Çаксенчен хăшĕ тĕрĕк чĕлхисен ушкăнне кĕмест? Çав сăмахăн виççĕмĕш сас паллине çырăр.

5) *Пĕр ..... – пĕр ăс, ик ..... – икĕ ăс.* Çак ваттисен сăмахĕнчи точкăсем вырăнне кирлĕ сăмах тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр.

6) ***Авал*** сăмахăн синонимне тупăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр.

Мĕнле сăмах пулнине çырăр, ăна вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

1) Июль – И

2) Аванкамера – К

3) Ĕçчен – Е

4) Мари – Р

5) Чĕлхе – Ч
6) Ĕлĕк – Ĕ
**ИКЕРЧĔ (икерчĕ) – блины (оладьи).**

**Митта Ваçлейĕн «Пит маттур-çке Иванов бульварĕ» сăввине вулăр та 6–9-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.**

*Пит маттур-çке Иванов бульварĕ,*
*Пыллăхри пек çамрăк çăкасар.*
*Çта çитсен те манăçа юлмарĕ*
*Шурă тум тумланнă Шупашкар.*

*Чечекре нар питлĕ сар настурци,*
*Çăлтăр астра, капăр георгин...*
*Çамрăк чух, тен, хамăр та маттурччĕ,*
*Çакна темшĕн эп астурăм тин.*

*Шухă пулнă, шухăшсăр çӳренĕ,*
*Такăрлатнă Атăл хĕррине.*
*Кам шутланă, кам ăна ĕненнĕ*
*Чи хакли яш ĕмĕр иккенне?..*

**6. Ыйту (ĕç).**

Сăвă темипе тĕп шухăшне палăртăр.

**Хурав.**

Тема – хула илемне сăнаса этем пурнăçĕнчи чи асамлă та хитре вăхăта – çамрăклăха – аса илсе шухăша ӳкни.

Идея – çын пурнăçĕнче чи хакли – яш ĕмĕр, ăна тивĕçлĕ ирттересчĕ.

**7. Ыйту (ĕç).**

Çак тĕслĕхсем мĕнле илемлĕх мелĕ пулаççĕ?
*Пыллăхри пек çамрăк çăкасар –*
*Çăлтăр астра –*

*Шурă тум тумланнă Шупашкар –*
*Нар питлĕ сар настурци –*
*Кам шутланă, кам ăна ĕненнĕ? –*
**Хурав.**
*Пыллăхри пек çамрăк çăкасар* – танлаштару
*Çăлтăр астра* – метафора
*Шурă тум тумланнă Шупашкар* – сăпатлантару
*Нар питлĕ сар настурци* – эпитет
*Кам шутланă, кам ăна ĕненнĕ?* – риторикăлла ыйту

**8. Ыйту (ĕç).**
Сăвă виçине тата карт шутне палăртăр.
**Хурав.**
Хорей, 5 картлă.

**9. Ыйту (ĕç).**
«Кам шутланă, кам ăна ĕненнĕ чи хакли яш ĕмĕр иккенне?..» йĕркесене Эсир мĕнле ăнланатăр? Хăвăр шухăшăра сочинени-шухăшлав евĕр çырса пĕлтерĕр.

**10. Ыйту (ĕç).**
Вырăсла куçарăр:
*Хĕре темле йывăр шухăш-кăмăл, халиччен тӳссе курман туйăм асаплантарчĕ. Ăçтан вĕсем, мĕн тума? Пĕр пулăм çеç паллă – шухăшсăр та канăçлă ачалăх вĕçленчĕ.*
*Ача чухнехи чун ешĕл пăрçа хутаççине аса илтерет: унта туйăмсем пиçсе çитеймен-ха. Вăй илейменскерсене сăпкара питех те канлĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн вара пăрçа пĕрчисем хутаçа тултарса хураççĕ. Пăрçа хутаççи çурăлса каять, пĕрчисене аякалла сапалать…*
*Тамарăпа та çавăн пек пулчĕ, ун чунĕнчи «пăрçа» та пиçсе çитрĕ, хутаçран тăкăнса сапаланчĕ. Вĕсене кам пухĕ, йĕпе-сапаллă çумăр айĕнче çĕрсе ан кайччăр, çăткăн кайăксен çăварне ан кĕччĕр тесе кам ырă вырăна акĕ…*

**Хурав.**

Девушку с недавних пор мучило неопределенное состояние: появились какие-то сложные настроения, не испытанные прежде чувства. Откуда они, зачем? Было ясно только одно – кончилось детство, бездумное, бестревожное.

В детстве душа напоминает зеленый гороховый стручок: лежат в нем еще неспелые чувства, пока еще слабенькие. Им уютно и спокойно в колыбели. Но вот приходит время, горошины растут, заполняя стручок. И вдруг лопнули створки, разлетелись горошины…

Такое и случилось с Тамарой, и ее «горошины» поспели, выкатились из стручка-души. Кто их соберет, посеет в добрую землю, чтобы не сгнили под ненастным дождем, не пропали в зобу жадной птицы…

***Регионсем хушшинче иртекен***
***чăваш чĕлхипе литература олимпиади***
***2024-мĕш çул***

***9-мĕш класс (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

*Тĕлĕн, июнь, эреш, аяк, мăшăрлă, чее, çумăр, ешĕл, вăйă, ялтăрать, юрла, вулать, куллен, туй, чие, хыттăн, клеенка, пьеса, юрăçă, кутамкка.*

Çак сăмахсене виçĕ ушкăна пайласа çырăр:

1. Сăмахри сасăсен шучĕ саспаллисен шучĕпе тан.

2. Сăмахри сасăсен шучĕ саспаллисен шутĕнчен нумайрах.

3. Сăмахри сасăсен шучĕ саспаллисен шутĕнчен сахалрах.

**Хурав.**

1. Сăмахри сасăсен шучĕ саспаллисен шучĕпе тан: *тĕлĕн, июнь, эреш, мăшăрлă, çумăр, вăйă, ялтăрать, туй, пьеса.*

2. Сăмахри сасăсен шучĕ саспаллисен шутĕнчен нумайрах: *аяк, чее, ешĕл, юрла, чие, клеенка, юрăçă*.

3. Сăмахри сасăсен шучĕ саспаллисен шутĕнчен сахалрах: *вулать, куллен, хыттăн, кутамкка*.

**2. Ыйту (ĕç).**

Кашни тĕслĕхе вулăр та паллă тунă сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулнине çырăр. Паллă тунă сăмаха вырăсла куçарăр.

1) – Çумăр, ***çу!*** Çумăр, çу! – савăнăçлăн шуйхашаççĕ урамри ачасем.

2) Сар ***çу*** пекех ирĕлет сарă кун.

3) ***Çу*** иртсе те кайрĕ, кĕркунне çитрĕ.

4) Аллуна ***çу*** та сĕтел хушшине лар.

5) ***Çу*** уйăхĕ пуçланиччен кăштах вăхăт пур-ха.

**Хурав.**

1) ***çу*** – глагол, идти, лить (про дождь, про осадки).
2) ***çу*** – япала ячĕ, масло.
3) ***çу*** – япала ячĕ, лето.
4) ***çу*** – глагол, мыть (руки).
5) ***çу*** – япала ячĕ, май месяц.

**Текста вулăр та 3-мĕш, 4-мĕш, 5-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.**

Чăваш ялĕ ĕлĕкрен шыв хĕрринелле туртăнать. Акă ман тăван ял та Хирлеп шывĕ хĕрринче вырнаçнă. Асатте каланă тăрăх, пирĕн ял çывăхĕнче виçĕ шыв арманĕ пулнă. Ĕлĕк чăваш пӳрчĕ пысăк пулман. Çурт тăррисене улăмран ăсталанă. Халĕ улăм тăрăллă çурт ялта тĕл пулмасть. Пӳрт-çурта пысăкрах лартаççĕ, вĕсене ытларах чултан купалаççĕ, йывăçран мар. Чăваш ялĕсем çулла аякран раща пекех курăнаççĕ. Ĕлĕкрех ял таврашĕнче йăмра ытларах пулнă, халĕ вара ытти йывăç та йышлă – хурăн, вĕрене, ăвăс, тирек, каврăç. Ялта килсерен тенĕ пекех сад ешерет. Садсенче – тĕрлĕ çимĕç йывăççи ӳсет: улмуççи, чие, хăмла çырли, хурăн çырли, хурлăхан. Хальтерех грушăпа слива та курăнкалать. Юлашки çулсенче пахчара йăранĕ-йăранĕпе виктори текен шултра çĕр çырли лартa пуçларĕç. Çырла вăхăтĕнче Шупашкар пасарĕнче ытларах виктори сутаççĕ.

**3. Ыйту (ĕç).**

Ыйтусене хуравлăр.
1) Текстра мĕн ятлă шыв пирки каланă?
2) Ялтан инçе мар миçе шыв арманĕ пулнă?
3) Килти садра мĕнле йывăççем ӳстернĕ?
4) Ĕлĕк ялта ытларах мĕнле йывăç лартнă?
5) Пасарта мĕн ятлă çырла сутаççĕ?

**Хурав.**
1) Хирлеп.
2) Виççĕ.
3) Улмуççи, чие, хăмла çырли, хурăн çырли, хурлăхан.
4) Йăмра.
5) Виктори.

**4. Ыйту (ĕç).**
Текстран туху падежĕнчи сăмахсене çырса илĕр.
**Хурав.**
ĕлĕкрен, улăмран, чултан, йывăçран, аякран.

**5. Ыйту.**
Хăш йĕркесем текст содержанийĕпе килĕшӳллĕ?
1) Виктори – вĕтĕ çĕр çырли.
2) Ялта сад нумай.
3) Ĕлĕк чăваш пӳрчĕ пысăк пулнă.
4) Халĕ пӳрт-çурта йывăçран тăваççĕ.
5) Çурт тăррине халĕ улăм витмеççĕ.
6) Çулла пасарта виктори чылай сутаççĕ.
7) Чăваш ялĕнче ĕлĕк çăка ытларах пулнă.
8) Ялсем шывран инçе мар вырнаçма тăрăшнă.
9) Шупашкар пасарĕнче грушăпа слива сутаççĕ.
10) Хальхи вăхăтра пӳрт-çурта пысăк тăваççĕ.
**Хурав.**
2) Ялта сад нумай.
5) Çурт тăррине халĕ улăм витмеççĕ.
6) Çулла пасарта виктори чылай сутаççĕ.
8) Ялсем шывран инçе мар вырнаçма тăрăшнă.
10) Хальхи вăхăтра пӳрт-çурта пысăк тăваççĕ.

**6. Ыйту.**
Мĕн вăл гипербола?

**Хурав.**

Каланӑ шухӑша тата сӑнарлӑха вӑйлатас тӗллевпе усӑ куракан виҫесӗр ӳстерсе кӑтартас мел.

**7. Ыйту.**

Хӑш ҫыравҫӑ ҫинчен сӑмах пырать-ши? Эсир унӑн мӗнле хайлавӗсене пӗлетӗр?

*Вӑл – чӑвашран тухнӑ малтанхи хӗрарӑм ҫыравҫӑсенчен пӗри, ача-пӑча литературин никӗсне хываканӗ тата аталантараканӗ. Чӗмпӗр чӑваш шкулӗнче вӗреннӗскер нумай ҫул хушши учитель пулса ӗҫленӗ. Калавсемпе повеҫсем, юмахсем, пьесӑсем хайланӑ.*

**Хурав.**

Трубина Мархви. Хайлавӗсем – «Ҫӑлтӑрсем», «Хӗллехи каҫсенче», «Хӑнаран», «Шӗшкӗ», «Мучар», «Ача чухнехи», «Хӳтӗ вырӑнта», «Асӑнмалӑх, савӑнмалӑх» т.ыт.те.

**8. Ыйту (ӗҫ).**

Ҫак йӗркесене хӑш литература геройӗ калать? Хайлав ятне тата жанрне палӑртӑр.

*«Ах, телейӗм ҫук-тӑр ҫав,*
*Аҫу-аннӳ пит пуян!*
*Хӑйсен пуянлӑхӗпе*
*Пӑрӑнаҫҫӗ ҫук ҫынран».*

**Хурав.**

Сетнер калать. Хайлав ячӗ – «Нарспи». Жанрӗ – поэма.

**9. Ыйту (ӗҫ).**

Вырӑсла куҫарӑр.

*Чив-чив ҫерҫи чӗппи*

*Ҫурхи ҫутӑ хӗвел ӑвӑс рашчинче пурӑнакансене – ҫерҫи ҫемйине ӑшӑ кӑмӑл парнелет: Чив-чив ҫерҫи чӗппине, унӑн амӑшне тата ашшӗне. Чив-чив ҫемьери пӗртен-пӗр чӗпӗ*

*пулнӑ. Ӑна ӑна ашшӗ-амӑшӗ питӗ юратнӑ, ҫавӑнпа час-часах ашкӑнма те ирӗк панӑ. Пӗррехинче Чив-чив рашча тӑрӑх уҫӑлма ҫӳреме шут тытнӑ, анчах хӑй лайӑх вӗҫме вӗренеймен пирки уҫӑлса сиккелесе тухса кайнӑ.*

*– Чив-чив! Епле илемлӗ! – тӗлӗннӗ вӑл тӗкӗр пек яка кӳлӗ ҫине, ун тӑрӑх шуса пыркан пӗлӗт ҫине пӑхса.*

*Акӑ хӗвел ҫути чӳхенет, кӑшт аяккарахра вылянчӑк пӗлӗтсем шыва кӗреҫҫӗ.*

*(Е. Долгова)*

**Хурав.**

*Воробушек Чик-чирик*

*Яркое весеннее солнце щедро дарило свое ласковое тепло жителям осиновой рощи – воробьиной семье: воробушку Чик-чирик, его маме-воробьихе и папе-воробью. Чик-чирик был единственным птенчиком в своей семье, конечно же, малыша родители очень любили и часто баловали. Однажды Чик-чирик решил погулять по роще, а так как хорошо летать он еще не научился, то отправился на прогулку вприпрыжку.*

*– Чик-чирик! Как красиво! – удивлялся он, глядя на зеркальную гладь озера, на плывущее по нему отражение неба.*

*Вот отражение солнца плещется, чуть подальше игривые облака купаются.*

*(Е. Долгова)*

**10. Ыйту (ӗҫ).**

«Килӗштерсе пурӑнакан ҫемьешӗн пурнӑҫ йывӑрлӑхӗ хӑрушӑ мар» темӑпа сочинени-шухӑшлав ҫырӑр.

***Регионсем хушшинче иртекен***
***чăваш чĕлхипе литература олимпиади***
***2024-мĕш çул***

***10-мĕш класс (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

*Тимлĕ, пуян, касать, аяк, илем, чее, салам, пĕрмаях, тухья, пĕччен, ялан, куллен, май, чие, хăюллă, супăнь, карттус, эпĕ, ялтăрать, вăрман.*

Çак сăмахсене виçĕ ушкăна пайласа çырăр:

1. Сăмахри сасăсен шучĕ саспаллисен шучĕпе тан.

2. Сăмахри сасăсен шучĕ саспаллисен шутĕнчен нумайрах.

3. Сăмахри сасăсен шучĕ саспаллисен шутĕнчен сахалрах.

**Хурав.**

1. Сăмахри сасăсен шучĕ саспаллисен шучĕпе тан: *тимлĕ, илем, салам, тухья, май, хăюллă, эпĕ, ялтăрать, вăрман.*

2. Сăмахри сасăсен шучĕ саспаллисен шутĕнчен нумайрах: *пуян, аяк, чее, пĕрмаях, ялан, чие.*

3. Сăмахри сасăсен шучĕ саспаллисен шутĕнчен сахалрах: *касать, пĕччен, куллен, супăнь, карттус.*

**2. Ыйту (ĕç).**

Кашни тĕслĕхе вулăр та паллă тунă сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулнине çырăр. Паллă тунă сăмаха вырăсла куçарăр.

1) Панулми шалтан ***çĕр***ме пуçланă.

2) ***Çĕр*** сум пуличчен çĕр тус пултăр.

3) Ĕлĕк ***çĕр*** валеçнĕ чух арçын ачасене çеç шута илнĕ.

4) ***Çĕр*** каçа юр нумай тултарса хунă.

5) ***Çĕр*** Хĕвел тавра çаврăнать.

**Хурав.**

1) ***çĕр***ме – глагол, гнить.

2) ***çĕр*** – хисеп ячĕ, сто.

3) ***çĕр*** – япала ячĕ, земля.

4) ***çĕр*** – япала ячĕ, ночь.

5) ***Çĕр*** – япала ячĕ, Земля (планета, с заглавной буквой).

**Текста вулăр та 3-мĕш, 4-мĕш, 5-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.**

Кисловодск, минерал шывĕсем çинчи ытти хуласем пекех кану валли йĕркеленĕскер, йăлтах парк, сад та чечек ăшĕнче ларать. Урампа пынă чух йывăç витĕр çуртсене те курмастăн. Тăршшĕпех декоративлă спирея, самшит, туя йывăççисем, чечек газонĕсем те йывăç аллейисем. Шăв-шав çук. Машинăсенчен – канакан-сывалакансемпе тулнă автобуссене тата тĕп урампа тĕрлĕ тавар турттарса çӳрекен авалхи икĕ вакунлă уçă трамвая çеç куратăн.

Çынсем кунта ытларах – сывалма килнисем. Вĕсем хушшинче çамрăксем сахал. Ытларах – вăтам тата аслă çулсенчи çынсем. Ирхине, кăнтăрла, каçхине урамсем пуш-пушă. Кăнтăр апачĕ хыççăн пĕтĕм парк, сад, урам сакĕсене канма килнĕ çынсем йышăнса пĕтереççĕ. Унтан вĕсем врачсем палăртнă терренкура пăхăнса Хĕрлĕ хĕвел тăвĕ, Сенкер ту маршручĕпе утса килеççĕ.

**3. Ыйту (ĕç).**

Ыйтусене хуравлăр.

1) Кисловодск урамĕпе пынă чух мĕнле машинăсем курма пулать?

2) Тĕп урампа миçе трамвай çӳрет?

3) Текстра мĕнле шыв пирки каланă?

4) Канса лармалли саксем çинче хăçан çын нумай?

5) Кисловодск урамĕсенче мĕнле йывăççем ӳсеççĕ?

**Хурав.**
1) автобуссем, трамвай.
2) пĕр трамвай.
3) минерал шывĕсем.
4) кăнтăр апачĕ хыççăн.
5) спирея, самшит, туя.

**4. Ыйту (ĕç).**
Текстран пару падежĕнчи сăмахсене çырса илĕр.
**Хурав.**
çуртсене, автобуссене, трамвая, сакĕсене, терренкура.

**5. Ыйту (ĕç).**
Хăш йĕркесем текст содержанийĕпе килĕшӳллĕ?
1) Сывалма килнисем хушшинче çамрăк нумай.
2) Кисловодскра чечек питĕ нумай.
3) Каçхине урамсенче никам та çук.
4) Канма килнисем пĕрмай чупаççĕ.
5) Йывăç нумаййипе çуртсем те курăнмаççĕ.
6) Кисловодскра йывăç çурт нумай.
7) Трамвай тавар турттарать.
8) Кисловодскра йывăç нумай.
9) Трамвай пилĕк вакунлă.
10) Кисловодск питĕ шавлă хула.
**Хурав.**
2) Кисловодскра чечек питĕ нумай.
3) Каçхине урамсенче никам та çук.
5) Йывăç нумаййипе çуртсем те курăнмаççĕ.
7) Трамвай тавар турттарать.
8) Кисловодскра йывăç нумай.

**6. Ыйту.**
Мĕн вăл аллегори?

**Хурав.**

Ытарлă, юптарса калани.

**7. Ыйту.**

Кам çинчен сăмах пырать-ши?

*Вăл – «Кăмăл» тата «Кăмăлтан» кĕнекесен авторĕ. Суя айăплава пула хăй пурнăçĕн вун çичĕ çулне тĕрлĕ лагерьсемпе тĕрмесенче ларса çухатнă. Çапах та чун тасалăхне, кăмăл паттăрлăхĕпе вăйне сыхласа хăварнă, чăваш халăхĕн патриочĕ пулса юлнă.*

**Хурав.**

Митта Ваçлейĕ.

**8. Ыйту (ĕç).**

Хăй утланнă лашана виçĕ кун хушши шырани çинчен калакан хайлавăн авторне палăртăр.

**Хурав.**

И.Я. Яковлев.

**9. Ыйту (ĕç).**

Вырăсла куçарăр.

*Чив-чив çерçи чĕппи*

*Çурхи çутă хĕвел ăвăс рашчинче пурăнакансене – çерçи çемйине ăшă кăмăл парнелет: Чив-чив çерçи чĕппине, унăн амăшне тата ашшĕне. Чив-чив çемьери пĕртен-пĕр чĕпĕ пулнă. Ăна ăна ашшĕ-амăшĕ питĕ юратнă, çавăнпа час-часах ашкăнма те ирĕк панă. Пĕррехинче Чив-чив рашча тăрăх уçăлма çӳреме шут тытнă, анчах хăй лайăх вĕçме вĕренеймен пирки уçăлса сиккелесе тухса кайнă.*

*– Чив-чив! Епле илемлĕ! – тĕлĕннĕ вăл тĕкĕр пек яка кӳлĕ çине, ун тăрăх шуса пыркан пĕлĕт çине пăхса.*

*Акă хĕвел çути чӳхенет, кăшт аяккарахра вылянчăк пĕлĕтсем шыва кĕреççĕ, çывăхрах лапсăркка чăрăшсем хăйсен йĕппisene чӳхеççĕ. Шыв çийĕнчи тĕлĕнмелле*

*ӳкерчӗксене пӑхса Чив-чив кӳлӗ хӗрринче ҫӗнӗ мӗлке – мамӑклӑ пӗчӗк чӗрчун тупрӗ. Вӑл ӑна тинкерсе пӑхрӗ те ку хӑйӗн мӗлки пулнине ӑнланчӗ.*

*(Е. Долгова)*

**Хурав.**

*Воробушек Чик-чирик*

*Яркое весеннее солнце щедро дарило свое ласковое тепло жителям осиновой рощи – воробьиной семье: воробушку Чик-чирик, его маме-воробьихе и папе-воробью. Чик-чирик был единственным птенчиком в своей семье, конечно же, малыша родители очень любили и часто баловали. Однажды Чик-чирик решил погулять по роще, а так как хорошо летать он еще не научился, то отправился на прогулку вприпрыжку.*

*– Чик-чирик! Как красиво! – удивлялся он, глядя на зеркальную гладь озера, на плывущее по нему отражение неба.*

*Вот отражение солнца плещется, чуть подальше игривые облака купаются, а совсем близко мохнатые ели свои колючки полощут. Разглядывая чудные картинки на поверхности воды, у самого края озера Чик-чирик нашел свое отражение – махонькое пушистое существо. Он внимательно рассмотрел его и понял, что это его собственное отражение.*

*(Е. Долгова)*

**10. Ыйту (ӗҫ).**

«Килӗштерсе пурӑнакан ҫемьешӗн пурнӑҫ йывӑрлӑхӗ хӑрушӑ мар» темӑпа сочинени-шухӑшлав ҫырӑр.

***Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади 2024-мĕш çул***

***11-мĕш класс (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

*Турилкке, шевле, июнь, хĕвел, янăрать, кĕнеке, шаркку, ярмăркка, чее, асанне, мăкăнь, чие, асам, мерчен, çыру, рельс, статья, чечек, якăлти, юрăçă.*

Çак сăмахсене виçĕ ушкăна пайласа çырăр:

1. Сăмахри сасăсен шучĕ саспаллисен шучĕпе тан.
2. Сăмахри сасăсен шучĕ саспаллисен шутĕнчен нумайрах.
3. Сăмахри сасăсен шучĕ саспаллисен шутĕнчен сахалрах.

**Хурав.**

1. Сăмахри сасăсен шучĕ саспаллисен шучĕпе тан: *шевле, июнь, хĕвел, янăрать, кĕнеке, ярмăркка, асам, мерчен, çыру, статья, чечек.*
2. Сăмахри сасăсен шучĕ саспаллисен шутĕнчен нумайрах: *чее, чие, якăлти, юрăçă.*
3. Сăмахри сасăсен шучĕ саспаллисен шутĕнчен сахалрах: *турилкке, шаркку, асанне, мăкăнь, рельс.*

**2. Ыйту (ĕç).**

Кашни тĕслĕхе вулăр та паллă тунă сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулнине çырăр. Паллă тунă сăмаха вырăсла куçарăр.

1) Сунтăхран йывăç ***тура*** кăларчĕ те çӳçне якатса илчĕ.
2) Винегретри хăяра вĕтĕрех ***тура***, илемлĕрех пулать.
3) Пĕрремĕш ***тура*** чылай ача хутшăнчĕ.
4) Çӳçне ***тура*** та хăюпа çавăрса çых.

5) Типнӗ утта ҫумăр пуҫланичченваскарах ***тура***.

**Хурав.**

1) ***тура*** – япала ячӗ, гребень, расческа.

2) ***тура*** – глагол, крошить, резать на мелкие куски.

3) ***тура*** – япала ячӗ, тур.

4) ***тура*** – глагол, расчесывать.

5) ***тура*** – глагол, собирать в кучу (сгребать).

**Текста вулăр та 3-мӗш, 4-мӗш, 5-мӗш ӗҫсене пурнăҫлăр.**

Кисловодск, минерал шывӗсем ҫинчи ытти хуласем пекех кану валли йӗркеленӗскер, йăлтах парк, сад та чечек ăшӗнче ларать. Урампа пынă чух йывăҫ витӗр ҫуртсене те курмастăн. Тăршшӗпех декоративлă спирея, самшит, туя йывăҫҫисем, чечек газонӗсем те йывăҫ аллейисем. Шăв-шав ҫук. Машинăсенчен – канакан-сывалакансемпе тулнă автобуссене тата тӗп урампа тӗрлӗ тавар турттарса ҫӳрекен авалхи икӗ вакунлă уҫă трамвая ҫеҫ куратăн.

Ҫынсем кунта ытларах – сывалма килнисем. Вӗсем хушшинче ҫамрăксем сахал. Ытларах – вăтам тата аслă ҫулсенчи ҫынсем. Ирхине, кăнтăрла, каҫхине урамсем пуш-пушă. Кăнтăр апачӗ хыҫҫăн пӗтӗм парк, сад, урам сакӗсене канма килнӗ ҫынсем йышăнса пӗтереҫҫӗ. Унтан вӗсем врачсем палăртнă терренкура пăхăнса Хӗрлӗ хӗвел тăвӗ, Сенкер ту маршручӗпе утса килеҫҫӗ.

**3. Ыйту (ӗҫ).**

Ыйтусене хуравлăр.

1) Кисловодск урамӗпе пынă чух мӗнле машинăсем курма пулать?

2) Тӗп урампа миҫе трамвай ҫӳрет?

3) Текстра мӗнле шыв пирки каланă?

4) Канса лармалли саксем ҫинче хăҫан ҫын нумай?

5) Кисловодск урамӗсенче мӗнле йывăҫсем ӳсеҫҫӗ?

**Хурав.**
1) автобуссем, трамвай.
2) пĕр трамвай.
3) минерал шывĕсем.
4) кăнтăр апачĕ хыççăн.
5) спирея, самшит, туя.

**4. Ыйту (ĕç).**
Текстран пару падежĕнчи сăмахсене çырса илĕр.
**Хурав.**
çуртсене, автобуссене, трамвая, сакĕсене, терренкура.

**5. Ыйту (ĕç).**
Хăш йĕркесем текст содержанийĕпе килĕшӳллĕ?
1) Сывалма килнисем хушшинче çамрăк нумай.
2) Кисловодскра чечек питĕ нумай.
3) Каçхине урамсенче никам та çук.
4) Канма килнисем пĕрмай чупаççĕ.
5) Йывăç нумаййипе çуртсем те курăнмаççĕ.
6) Кисловодскра йывăç çурт нумай.
7) Трамвай тавар турттарать.
8) Кисловодскра йывăç нумай.
9) Трамвай пилĕк вакунлă.
10) Кисловодск питĕ шавлă хула.
**Хурав.**
2) Кисловодскра чечек питĕ нумай.
3) Каçхине урамсенче никам та çук.
5) Йывăç нумаййипе çуртсем те курăнмаççĕ.
7) Трамвай тавар турттарать.
8) Кисловодскра йывăç нумай.

**6. Ыйту (ĕç).**
Мĕн вăл эпопея роман? Çак жанрпа тухăçлă ĕçленĕ чăваш çыравçисене асăнăр.

**Хурав.**

Эпопея роман тесе халăх пурнăçĕпе историйĕн хĕрӳ, пĕлтерĕшлĕ вăхăтне анлăн сăнарласа паракан пысăк эпикăлла жанра калаççĕ. Кунта шутласа кăларнă сăнарсем, вĕсен пурнăçĕ чăн истори ĕçĕсемпе пĕрлешсе каяççĕ.

Илпек Микулайĕ, С. Аслан, К. Турхан, В. Иванов-Паймен, Хв. Уяр т.ыт.те.

**7. Ыйту.**

Хăш çыравçă çинчен сăмах пырать-ши?

*Вăл икĕ вăрçăра – 1939–1940 çулсенче шурă финсемпе тата Тăван çĕршывăн аслă вăрçинче çапăçнă. Малтан ахаль салтак, унтан офицер, рота командирĕ пулнă, каярах дивизи хаçачĕн редакторĕнче ĕçленĕ. Унăн приключениллĕ хайлавсем çырас ăсталахĕ пысăк. Паллă хайлавĕсен шутне «Юманлăхра çапла пулнă», «Пурте дипломлă!..» т.ыт.те кĕреççĕ.*

**Хурав.**

Леонид Агаков.

**8. Ыйту (ĕç).**

Çак йĕркесене хăш литература геройĕ калать? Хайлав авторне, ятне тата жанрне палăртăр.

*«Савнă юлташăм! Паллатăн-и эсĕ мана? Е çакă çуралса, татăлса пĕтнĕ кăвак тумтирлĕ çынна йышăнас теместĕн-и? Ма чĕнместĕн? Эпĕ окопра çĕрсе выртнă чухне те, тыткăнра выçăхса пурăннă чухне те сан çинчен анчах шухăшлаттăмччĕ. Манăн пысăк çунат ӳстерсе сан çумна вĕçсе килес килетчĕ. Эпĕ саншăн тыткăнран тартăм. Австри аслă вăрманĕнче тискер кайăксемпе пурăнтăм. Хурал тăракансене улталаса аслă Дунай шывĕ урлă ишсе каçрăм».*

**Хурав.**

Ванюк. Хайлав авторĕ – Ф. Павлов. Ячĕ – «Ялта». Жанрĕ – драма.

**9. Ыйту (ĕç).**

Вырăсла куçарăр.

*Чив-чив çерçи чĕппи*

*Çурхи çутă хĕвел ăвăс рашчинче пурăнакансене – çерçи çемйине ăшă кăмăл парнелет: Чив-чив çерçи чĕппине, унăн амăшне тата ашшĕне. Чив-чив çемьери пĕртен-пĕр чĕпĕ пулнă. Ăна ăна ашшĕ-амăшĕ питĕ юратнă, çавăнпа часчасах ашкăнма те ирĕк панă. Пĕррехинче Чив-чив рашча тăрăх уçălма çÿреме шут тытнă, анчах хăй лайăх вĕçме вĕренеймен пирки уçăлса сиккелесе тухса кайнă.*

*– Чив-чив! Епле илемлĕ! – тĕлĕннĕ вăл тĕкĕр пек яка кÿлĕ çине, ун тăрăх шуса пыркан пĕлĕт çине пăхса.*

*Акă хĕвел çути чÿхенет, кăшт аяккарахра вылянчăк пĕлĕтсем шыва кĕреççĕ, çывăхрах лапсăркка чăрăшсем хăйсен йĕпписене чÿхеççĕ. Шыв çийĕнчи тĕлĕнмелле ÿкерчĕксене пăхса Чив-чив кÿлĕ хĕрринче çĕнĕ мĕлке – мамăклă пĕчĕк чĕрчун тупрĕ. Вăл ăна тинкерсе пăхрĕ те ку хăйĕн мĕлки пулнине ăнланчĕ.*

*– Чив-чив! Епле илемлĕ эпĕ! – çерçи чĕппи хăй сăнне курса савăнчĕ.*

*– Нарт-нарт! Нарт-нарт! – юнашарах такам кулса ячĕ.*

*– Чив-чив! Эй, кам ку? Кам кулать кунта?*

*– Нарт-нарт! Эпĕ ку, эпĕ – Нарт-нарт кăвакал чĕппи.*

*(Е. Долгова)*

**Хурав.**

*Воробушек Чик-чирик*

*Яркое весеннее солнце щедро дарило свое ласковое тепло жителям осиновой рощи – воробьиной семье: воробушку Чик-чирик, его маме-воробьихе и папе-воробью.*

*Чик-чирик был единственным птенчиком в своей семье, конечно же, малыша родители очень любили и часто баловали. Однажды Чик-чирик решил погулять по роще, а так как хорошо летать он еще не научился, то отправился на прогулку вприпрыжку.*

*– Чик-чирик! Как красиво! – удивлялся он, глядя на зеркальную гладь озера, на плывущее по нему отражение неба.*

*Вот отражение солнца плещется, чуть подальше игривые облака купаются, а совсем близко мохнатые ели свои колючки полощут. Разглядывая чудные картинки на поверхности воды, у самого края озера Чик-чирик нашел свое отражение – махонькое пушистое существо. Он внимательно рассмотрел его и понял, что это его собственное отражение.*

*– Чик-чирик! Какой я красавец! – обрадовался воробышек своему отражению.*

*– Кря-кря! Кря-кря! – засмеялся кто-то рядом.*

*– Чик-чирик! Ой, кто это? Кто тут смеется?*

*– Кря-кря! Это я, я – утенок Кря-кря.*

*(Е. Долгова)*

**10. Ыйту (ĕç).**

«Килĕштерсе пурăнакан çемьешĕн пурнăç йывăрлăхĕ хăрушă мар» темăпа сочинени-шухăшлав çырăр.

# ТУПМАЛЛИ

Пĕтĕмĕшле ăнлантарни................................................................. 3
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2019-мĕш çул. 9-мĕш класс (чăваш шкулĕ).............. 4
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2019-мĕш çул. 10-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............ 8
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2019-мĕш çул. 11-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............ 12
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2020-мĕш çул. 9-мĕш класс (чăваш шкулĕ).............. 16
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2020-мĕш çул. 10-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............ 20
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2020-мĕш çул. 11-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............ 24
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2021-мĕш çул. 9-мĕш класс (чăваш шкулĕ).............. 28
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2021-мĕш çул. 10-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............ 31
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2021-мĕш çул. 11-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............ 35
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2022-мĕш çул. 9-мĕш класс (чăваш шкулĕ).............. 39
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2022-мĕш çул. 10-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............ 42
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2022-мĕш çул. 11-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............ 45
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2023-мĕш çул. 9-мĕш класс (чăваш шкулĕ).............. 48
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2023-мĕш çул. 10-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............ 52
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2023-мĕш çул. 11-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............ 57
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2024-мĕш çул. 9-мĕш класс (чăваш шкулĕ).............. 62
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2024-мĕш çул. 10-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............ 67

Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2024-мĕш çул. 11-мĕш класс (чăваш шкулĕ)............ 72
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2019-мĕш çул. 9-мĕш класс (вырăс шкулĕ).............. 77
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2019-мĕш çул. 10-мĕш класс (вырăс шкулĕ)............ 80
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2019-мĕш çул. 11-мĕш класс (вырăс шкулĕ)............ 83
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2020-мĕш çул. 9-мĕш класс (вырăс шкулĕ).............. 87
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2020-мĕш çул. 10-мĕш класс (вырăс шкулĕ)............ 90
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2020-мĕш çул. 11-мĕш класс (вырăс шкулĕ)............ 94
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2021-мĕш çул. 9-мĕш класс (вырăс шкулĕ).............. 98
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2021-мĕш çул. 10-мĕш класс (вырăс шкулĕ)............ 101
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2021-мĕш çул. 11-мĕш класс (вырăс шкулĕ)............ 104
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2022-мĕш çул. 9-мĕш класс (вырăс шкулĕ).............. 107
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2022-мĕш çул. 10-мĕш класс (вырăс шкулĕ)............ 110
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2022-мĕш çул. 11-мĕш класс (вырăс шкулĕ)............ 113
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2023-мĕш çул. 9-мĕш класс (вырăс шкулĕ).............. 116
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2023-мĕш çул. 10-мĕш класс (вырăс шкулĕ)............ 120
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2023-мĕш çул. 11-мĕш класс (вырăс шкулĕ)............ 125
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2024-мĕш çул. 9-мĕш класс (вырăс шкулĕ).............. 130
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2024-мĕш çул. 10-мĕш класс (вырăс шкулĕ)............ 135
Регионсем хушшинче иртекен чăваш чĕлхипе литература олимпиади. 2024-мĕш çул. 11-мĕш класс (вырăс шкулĕ)............ 140

*Учебное издание*

ВЛАДИМИРОВА Ольга Геннадиевна
ИВАНОВА Алена Михайловна

**ХУРАВĔ МĔНЛЕ-ШИ?**

**КТО ЗНАЕТ ОТВЕТ?**

**Материалы межрегиональной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе**

Учебное пособие

В 3 книгах

Книга 2

Редактор *А.Н. Антонова*
Компьютерная верстка и правка *А.М. Ивановой*

Согласно Закону № 436-ФЗ от 29 декабря 2010 года
данная продукция не подлежит маркировке

Подписано в печать 15.05.2024. Формат 60×84/16.
Бумага газетная. Печать офсетная. Гарнитура Таймс.
Усл. печ. л. 8,60. Уч-изд. л. 8,57.
Тираж 100 экз. Заказ № 570.

Чувашский государственный университет имени И.Н. Ульянова
Типография университета
428015 Чебоксары, Московский просп., 15